Чăваш кĕнеке издательстви

В.И. Игнатьева
Н.Н. Чернова
Л.В. Николаева

# Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем

## 3 класс

ISBN 978-5-7670-2651-7

В.И. Игнатьева
Н.Н. Чернова
Л.В. Николаева

# Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем

**3 класс**

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2017

УДК 37.091.3
ББК 74.268.19=635.1
И 26

**Игнатьева В.И.**
И 26 Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем: 3 класс / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017. — 159 с.
ISBN 978-5-7670-2651-7

Пособи В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсен 3-мĕш класĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентме хатĕрленĕ комплект шутне кĕрет. Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшсе тăрать.

**УДК 37.091.3**
**ББК 74.268.19=635.1**

© Игнатьева В.И., Чернова Н.Н., Николаева Л.В., 2017
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2017

**ISBN 978-5-7670-2651-7**

# УМĔН КАЛАНИ

Виççĕмĕш класра ачасем пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕреннине çирĕплетсе çĕнĕ пĕлӳ-хăнăхусем илеççĕ, чăвашла каланине е вуланине ăнланма, пĕр-пĕринпе калаçма, чăвашла тĕрĕс çырма вĕренеççĕ.

Меслет кăтартăвĕсен кĕнеки умĕн каланинчен, тематика планĕнчен, кашни урокăн юхăмне кĕскен çырса кăтартнинчен тăрать.

Умĕн каланинче авторсем ачасен чăвашла пуплевне аталантарассин тĕп уйрăмлăхĕсене, чăваш чĕлхи урокĕсен хăй евĕрлĕхне çутатса пама тăрăшнă. Пĕтĕмлетӳсене шкулта нумай çул ĕçлекен, мал шухăшлă, пуян опытлă учительсен ĕçĕсене сăнаса-тишкерсе тунă.

Кĕнекере тематика планĕ пурри те вĕрентекенсемшĕн питех те усăллă пулĕ, мĕншĕн тесен çакă вĕсене вĕренӳ çулĕ тăршшĕпе ачасене мĕне вĕрентмеллине, ĕçе йĕркелеме мĕн кирлине куç умĕнче тытса тăма пулăшать, ĕçе тĕрĕс, çирĕп системăра йĕркелеме май парать.

Виççĕмĕш класра чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçе мĕнле тĕп шухăшсене никĕсе хурса йĕркелемелле-ха? Чи малтан, паллах, дидактикăн пĕтĕмĕшле принципĕсене шута илмелле: материала ачасем ăнланса вĕренччĕр тесе тăрăшмалла, вĕрентĕве ачасен çулне, вĕсен аталанăвĕн шайне кура йĕркелемелле; пĕлĕве, хăнăхусемпе ăслайсене çирĕп системăра парса пымалла; вĕрентĕвĕн содержанийĕ пур енчен те тивĕçлĕ шайра пулмалла; уроксенче ачасене пур енлĕн аталанма условисем туса памалла, вĕреннине тăтăшах аса илсе çирĕплетсе пымалла, курăм хатĕрĕсемпе анлă усă курмалла т. ыт. те.

Чĕлхесене ют е тăван мар чĕлхе пек вĕрентессине йĕркелемелли уйрăм принципсем пур. Вырăсла калаçса ӳсекен виççĕмĕш класс ачисене чăвашла вĕрентес ĕçе пурнăçланă чух çав принципсене те шута илмелле. Чи малтанах, вĕренекенсем уроксенче пухнă пĕлӳпе, тĕрлĕ хăнăхусемпе тата ăслайсемпе кулленхи

пурнăçра усă курма пултарччăр тесе тăрăшмалла. Вĕрентĕве кулленхи пурнăçри пек е пурнăça çывăх йĕркелесси, уроксенче хутшăну саманчĕсем тăвасси — кашни урока ирттернĕ чух шута илмелли тĕп шухăшсем. Хальхи вăхăтра республикăри хуласенче тата поселоксенче ырăсла калаçса ӳсекен ачасем пурнăçра хăçан, мĕнле ситуацисенче, мĕнле темăсемпе чăвашла калаçма-хутшăнма пултараççĕ — уроксенче çав темăсем, ситуацисем пулмалла. Вăл е ку ситуацинче ачана чăвашла калаçма-хутшăнма мĕн кирлĕ (сăмахсем, пуплев пĕрлĕхĕсем, вĕсене йĕркелемелли хатĕрсем т. ыт. те) — пуринпе те уроксенче паллаштармалла, усă курма вĕрентмелле. Кунсăр пуçне уроксенче пуплев ĕçĕ-хĕлне (пуплеве итлесси-тăнлассине, калаçассине, вуласси-çырассине) пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса аталантарса пымалла. Ку тепĕр тĕп шухăш. Ачасен урокра пĕр темăпах калаçмалла та, вуламалла та, çырмалла та. Итлев-тăнлав ĕçĕсенче те, калаçу, вулав, çыру ĕçĕсенче те чĕлхен пĕр единицисемех пулмалла. Паллах, кашни ăслая, хăнăхăва аталантарма ятарласа йĕркеленĕ хăнăхтарусем пулмалла. Вĕсем меслет кăтартăвĕсенче урок юхăмĕсене çырса кăтартнă пайра пур.

Тăван мар чĕлхене вĕрентес ĕç тăван чĕлхе çине таянса пулса пырать. Тăван чĕлхе тепĕр чĕлхене вĕренме пулăшать те, чăрмантарать те (транспозици, интерференци пулăмĕсем). Виççĕмĕш класра чăваш чĕлхи урокĕсенче пуплев хăнăхтарăвĕсене пурнăçланă чух та, çĕнĕ материалпа ĕçленĕ чух та ачасен тăван чĕлхи çине таянмах тивет, анчах çакна астумалла: ачасен пĕлĕвĕ, пуплев шайĕ ӳссе пынă май тăван чĕлхе çине таянасси сахалрах та сахалрах пулмалла, çĕнĕ материалпа ĕçленĕ чух кăна ăна вырăс чĕлхипе танлаштарса ăнлантарса пани вырăнлă.

Çавăн пекех виççĕмĕш класра чăваш чĕлхине ытти предметсемпе çыхăнтарса вĕрентме майсем шырамалла. Çакă, пĕр енчен, предметăн пĕлтерĕшне ачасен куçĕ умĕнче çĕклет. Тепĕр енчен, вĕсене чăвашла ытларах калаçтарма майсем туса парать. Ачасем вара чăваш чĕлхине те хутшăну хатĕрĕ пек йышăнма пуçлаççĕ. Паллах, кун пек ĕçлеме çӳллĕ шайри специалистсем кирлĕ, пĕр чăваш чĕлхине çеç лайăх пĕлни çителĕксĕр, вĕрентекенĕн ытти предметсемпе те пĕлӳ шайĕ пысăк пулмалла.

Уроксенче кашни ачапа уйрăммăн ĕçлеме тăрăшмалла, кашнине чăвашла калаçма-хутшăнма май килнĕ таран условисем туса памалла.

Калаçу-тăнлу, вулав-çыру темисем пĕтĕмпех ачасен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, вăййи-куллипе çыхăнмалла. Кунсăр пуçне урок-

сенче виççĕмĕш класс ачисене тăван енпе, пирĕн тăрăхра пурăнакан тĕрлĕ халăх культурипе паллаштарса пымалла, пĕрпĕрне хисеплеме вĕрентмелле. Ачасем уроксенче тăван енри ялхула, юхан шыв, кайăк-кĕшĕк, йывăç-курăк ячĕсене чăвашла калама вĕренччĕр, чăваш халăхĕн ал ĕç культурипе, паллă çыннисемпе паллашса пыччăр. Çакă чăваш ачисене тăван халăха юратма, чăваш мар ачасене чăваш халăхне хисеплеме хăнăхтарса пырать. Халăх сăмахлăхĕн вакрах жанрĕсене (ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсене, ача-пăча сăвви-юррине) урокра усă курни те çӳлерех асăннă принципа килĕшсе тăрать.

Ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарса пынă май виççĕмĕш класра пуплев этикетне вĕрентсе пырасси çинчен те манмалла мар, çавăнпа уроксенче пуплев этикечĕпе çыхăннă хăнăхтарусемпе ĕçсем те пулмаллах.

Урокри пур ĕçе те ачасен чăвашла пуплевне аталантарас тĕллеве пăхăнтармалла. Пуплеве аталантарасси тӳрремĕнех чĕлхен тĕрлĕ сийне (фонетика, орфоэпи, лексика, грамматика пайĕсене) вĕрентессипе çыхăннă.

Чĕлхери сасăсене тĕрĕс калама хăнăхтарасси — виççĕмĕш класра та, пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенчи пекех, тăтăш пулса пымалли ĕç. Çак ĕçе уроксенче ытларах çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарнă, калаçнă, вуланă май пурнăçласа пымалла. Ятарласа хатĕрленĕ фонетика хăнăхтарăвĕсен тĕслĕхĕсем методика кăтартăвĕсенче нумаях мар. Вĕрентекенсем ачасен сасăсене тата сăмахсене тĕрĕс калас хăнăхăвĕсене çирĕплетме кĕнекере панă текстсенчи сăмахсемпе, тĕрлĕ сăвă-юрăпа, хăвăрткаларăшсемпе усă курма пултараççĕ.

Ачасен пуплевне аталантармалли тепĕр ĕç вăл — словарь ĕçĕ. Çĕнĕ сăмахсене тематика планĕнче те, кашни урокăн юхăмне çырса кăтартнинче те панă. Вĕрентекенĕн çак сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ачасемшĕн шăпах вырăнлă мелсемпе усă курса уçса памалла, вĕсене кирлĕ пек улăштарса (глаголсене вăхăт, хисеп, сăпат тăрăх; япала ячĕсемпе местоименисене хисеп, падеж тăрăх т. ыт. те) сăмах майлашăвĕсем, предложенисем тума, калаçу йĕркелеме вĕрентмелле. Паллах, çак тĕллеве пĕр урокра пурнăçлама май çук. Паян урокра паллашнă сăмахсемпе çитес уроксенче те усă курмалла.

Виççĕмĕш класра уйрăмах ачасене глагол формисене ăнлантарас, вĕсемпе усă курма вĕрентес ĕçе анлă туса пыма палăртнă. Вĕрентекенĕн çак ĕçе ачасене чĕлхе теорийĕпе паллаштарас тĕллевпе мар, пуплеве тĕрĕс йĕркелеме вĕрентес тĕллевпе йĕркелемелле. Ачасене уроксенче грамматика терминĕсене, унăн законĕсене калама мар, чăвашла тĕрĕс калаçма, вулама-çырма

вӗрентмелле, ҫак ӗҫе пурнӑҫласа пынӑ май чӗлхе вӑрттӑнлӑхӗсене чухлама, туйма хӑнӑхтармалла.

Уроксенче ҫавӑн пекех чӑваш чӗлхин синтаксис конструкцийӗсемпе усӑ курма пӗлнине те анлӑлатсах пымалла. Виҫҫӗмӗш класра вӗренекенсем хӑйсен калаҫӑвӗнче ытларах хутсӑр предложенисемпе усӑ кураҫҫӗ. Ҫакна ачасен чӑвашла пуплевне аталантарнӑ чух шута илмелле, вӗсене хутсӑр предложенисем йӗркелеме, ҫавӑн пекех анлӑлатма, тӗрӗс интонаципе калама вӗрентмелле.

Пуплеве аталантарас ӗҫре чи кирли — ҫыхӑнуллӑ пуплевӗн тӗп мелӗсене аталантарасси. Калаҫу, тӑнлу (аудировани), вулав, ҫыру мелӗсене виҫҫӗмӗш класра пӗр-пӗрин ҫине таянса аталантарса пымалла терӗмӗр. Чӑвашла пуплеве итлесе ӑнланасси — хутшӑнӑвӑн никӗсӗ. Кампа та пулин калаҫас пулсан вӑл мӗн каланине, хушнине итлесе ӑнланма пӗлес пулать, вара тин калаҫӑва хутшӑнма е ыйтусене хуравлама май пур. Итлесе ӑнланма вӗрентес ӗҫе виҫҫӗмӗш класра системӑллӑ пурнӑҫласа пымалла. Уроксенче тӑтӑшах чӗлхери сасӑсен, морфемӑсен, уйрӑм сӑмахсен, сӑмах майлашӑвӗсен пӗлтерӗшӗсене ӑнланнине ҫирӗплетмелли ӗҫсем ирттермелле, ачасене тӗрлӗ тӗслӗ текстсем итлеттермелле. Вӗсенче ачасем ӑнланман сӑмахсем нумай пулмалла мар, вӗренмен грамматика формисемпе усӑ курмалла мар. Чӗлхе материалӗпе паллаштарнӑ хыҫҫӑн уроксенче ӑна ӑнланнине ҫирӗплетес тата тӗрӗслес тӗллевпе тӑнлассипе ҫыхӑннӑ тӗрлӗ ӗҫсем ирттерни вырӑнлӑ. Хӑш-пӗр ӗҫсене меслет кӑтартӑвӗсенче ҫырса панӑ, ҫитменнине вӗрентекенӗн хӑйӗн йӗркелемелле. Ҫакна асра тытса пымалла: итлеме паракан текст калӑпӑшӗ пысӑк пулмалла мар, калав е сӑнлав евӗр ҫырнӑ текстсем ытларах кирлӗ.

Пуплеве итлесе ӑнланма вӗрентесси чӑвашла калаҫма вӗрентессипе тачӑ ҫыхӑнса пулса пымаллине каларӑмӑр ӗнтӗ. Ҫак икӗ ӗҫе урокра пӗр-пӗринчен уйӑрма май та ҫук. Тӑнлассипе ҫыхӑннӑ ӗҫсем ачасене тӗрӗс калаҫма хӑнӑхтараҫҫӗ, калаҫнӑ май вӗренекенсем пӗр-пӗрне итлеме, ӑнланма хӑнӑхса пыраҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш класра ачасене пӗр-пӗр ӗҫ, япала е пулӑм ҫинчен е вуланӑ текст тӑрӑх калаҫма вӗрентмелле. Вӗсене уроксенче диалогла пуплеве кӑна мар, монологла пуплеве те анлӑ хӑнӑхтарса пымалла. Пӗрремӗшпе иккӗмӗш классенче ачасем хӑйсен ашшӗ-амӑшӗ, юлташӗсем, килти тата тискер чӗр чунсем, харпӑр хӑйӗн ӗҫӗ, курни-илтни ҫинчен ытларах калаҫнӑ. Виҫҫӗмӗш класра та ҫак темӑсемех тӗл пулаҫҫӗ, анчах та ачасене кунта асӑннӑ темӑсемпе анлӑрах калаҫма вӗрентмелле, ҫӗнӗ сӑмахсем, сӑмах майлашӑвӗсем, предложенисем хушса ҫыхӑнуллӑ каласа пама хӑнӑх-

тармалла. Калаҫăва тухăҫлă йĕркелеме, ҫӳлерех асăннăччĕ ĕнтĕ, уроксенче пуплев саманчĕсем (ситуацийĕсем) йĕркелени пулăшать. Ҫакнашкал ситуацисен тĕслĕхĕсене меслет кăтартăвĕсенче ҫырса кăтартма тăрăшнă.

Калаҫма, итлеме-ăнланма вĕрентес ĕҫсем уроксенче вуласси-пе тата ҫырассипе тачă ҫыхăнса пулса пыраҫҫĕ, апла пулсан уроксенче вулама вĕрентесси ҫине те тимлĕх уйăрмалла. Виҫҫĕмĕш класра ытларах сасăллă вулавпа усă курмалла, анчах ăшри вулава та пĕчĕккĕн аталантарма пуҫламалла. Ачасене уроксенче вулавăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе усă курма вĕрентмелле. Ҫак ĕҫĕн мелĕсемпе вĕрентӳҫĕ методика кăтартăвĕсене вуласа паллашма пултарать. Уроксен юхăмĕсене ҫырса кăтартнинче вулавпа ҫыхăннă тĕрлĕ ĕҫ мелĕсене палăртнă.

Чăваш чĕлхине тĕрлĕ халăх ачисене вĕрентес ĕҫĕн сапăрлăх аспекчĕ те калама ҫук анлă. Чи малтанах, чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасене чăн-чăн интернационалистсем пулса ӳсме, пĕр-пĕринпе харкашмасăр, пĕр-пĕрне кӳрентермесĕр шăкăл-шăкăл пурăнма вĕренме майсем туса памалла. Уроксенче чăваш, вырăс тата ытти халăхсен мĕн авалтан ҫирĕпленнĕ ырă енĕсене, ĕҫĕсене кăтартса парса ачасенче ҫав енсене аталантарма тăрăшмалла. Юлашки вăхăтра толерантность ҫинчен нумай калаҫаҫҫĕ. Шăпах чăваш чĕлхи урокĕсенче, чăваш чĕлхипе ҫыхăннă класс тулашĕнчи ĕҫсенче ҫак ырă туйăма аталантарма меллĕ те ĕнтĕ. Тĕрлĕ халăх ачисене пĕр-пĕрин чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине, сăмах-юмахне, кĕвви-юррине хисеплеме вĕрентмелле пирĕн. Апла пулсан вĕрентĕвĕн содержанийĕнче асăннă тĕллеве пурнăҫлама май паракан материал та пулмалла.

Уроксен йĕркине тĕслĕхшĕн ҫырса пани хальхи вăхăтра кирлĕ тесе шутлатпăр. Паллах, кашни вĕрентекен урока хăйне май йĕркелеме пултарать, анчах ҫак ĕҫе, пĕтĕмĕшле илсен, чĕлхемĕре тăван мар чĕлхе е патшалăх чĕлхи евĕр вĕрентессин тĕп принципĕсене пăхăнса пурнăҫламалла.

# УРОКСЕМ

## 1—2-мĕш уроксем

### Тема: Шкула

***Урок тĕллевĕ:*** 1—2-мĕш классенче «Шкул» темăпа вĕреннине аса илсе ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) «Чăваш чĕлхи» кĕнекепе паллаштарасси, виççĕмĕш класра мĕн вĕренессине кĕскен пĕлтересси; 2) «Шкула» темăпа калаçтарасси; 3) танлаштару форминчи япала паллине пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** вĕренӳ хатĕрĕсен ячĕсем; *нумай, сахал.*

***Грамматика материалĕ:*** япала паллине пĕлтерекен сăмахсен танлаштару форми.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** «Чăваш чĕлхи» вĕренӳ пособийĕ, ĕç тетрачĕсем, вĕренӳ хатĕрĕсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

Вĕрентӳçĕпе ачасем пĕр-пĕрне сывлăх сунаççĕ:

— Ырă кун пултăр, ачасем! (Сывлăх сунатăп, ачасем!)

— *Ырă кун пултăр! (Сывлăх сунатпăр!)*

**2. Аудированипе калаçу ĕçĕсем.**

а) Учитель ачасене пурне те вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа пĕчĕк сăвă каласа саламлать, ачасем итлеççĕ:

— Шкула, шкула!
Сире валли
Манăн сăмахăм
Ак çапла:
Пулăр ăслă, сывă!

Ыйтусем:

— Что я вам пожелала? Кто расскажет?

Ачасем мĕн ăнланнине вырăсла каласа параççĕ.

ă) Унтан вĕрентӳçĕ уйрăм ача патне пырса калать:

— Шкула, шкула!
Сана валли, Сашук (Нинук, Марук, Петюк...),
Манăн сăмахăм
Ак çапла:
Пул ăслă, сывă!

Ача:
— *Тавтапуç*, — тет.

б) Çапла калаçнă хыççăн вĕрентӳçĕ ачасене пĕр-пĕрин енне çаврăнма, пĕр-пĕрне çак сăвва каласа саламлама сĕнет.

в) Кайран ачасем сăвва вĕçе-вĕçĕн каласа пĕр-пĕрне саламлаççĕ.

Салам йышăнаканнин *тавтапуç* тесе калама манмалла мар.

**3. Вĕрентӳçĕ ачасене çĕнĕ вĕренӳ кĕнекипе паллаштарать.** Ачасем кĕнекене уçса пăхаççĕ, унти йышăннă паллăсемпе паллашаççĕ. Пĕрремĕш тата иккĕмĕш класс вĕренӳ кĕнекисенче тĕл пулнă геройсен ячĕсене аса илеççĕ *(Анюк, Ванюк, Сергей Сергеевич)*.

**4. Сăвăпа ĕçлени.**

а) Вĕрентӳçĕ сăвва илемлĕн вуласа парать, ачасем йĕрлесе пыраççĕ.

ă) Ăнланнине тĕрĕслет (ачасем сăввăн содержанине вырăсла каласа параççĕ).

б) Ачасем сăвва вулаççĕ.

**5. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекен виççĕмĕш страницинчи ӳкерчĕкпе ĕçлени, сăмах паллисене аса илни.

ă) Кĕнекери 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 6—7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасем учительпе пĕрле правило-ориентир тăваççĕ:

*Аффикс* ***-рах(-рех)*** *используется для сравнения предметов по признакам. К твердой основе слова присоединяется вариант* ***-рах****, к мягкой —* ***-рех.***

в) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**6. Киле ĕç.**

Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**7. Ĕçе пĕтĕмлетни, ачасен ĕçне хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени, сывпуллашни.**

## 3—4-мĕш уроксем

### Тема: Класра

***Урок тĕллевĕ:*** «Класра» темăпа пупленĕ май *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *хушшине, çине, çинче, хушшинче, патне, патĕнче, умне, умĕнче* сăмахсене класри япаласен чăвашла ячĕсемпе пĕрле пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) танлаштару форминчи япала паллине пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре усă курасси; 3) класс çинчен çыхăнуллă калаттарасси.

***Лексика материалĕ:*** класри япаласен ячĕсем; *усă, тӳлек, çывăх, хĕвеллĕ, çиллĕ, çумăрлă.*

***Грамматика материалĕ:*** *ăçта?* ыйтури сăмахсем; *хушшине, çине, çинче, хушшинче, патне, патĕнче, умне, умĕнче* сăмахсемпе япала ячĕсен çыхăнăвĕ.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки*.**

а) Дежурнăйпа калаçни:

— Паян кам дежурнăй?

— *Паян эпĕ дежурнăй.*

— Класра кам çук?

— *Класра пурте пур. (Паян класра Иванов Костя çук.)*

— Тавтапуç.

ă) Паянхи çанталăк çинчен калаçни:

— Паян ăшă-и (сивĕ-и)?

— Хĕвел пăхать-и?

— Çумăр çăвать-и?

— Халĕ кĕркунне-и?

(Ачасене вĕсем хуравлама пултаракан 4—5 ыйту парса çанталăк çинчен калаçтармалла.)

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илсе çирĕплетни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

---

*Сывлăх сунни, сывпуллашни тата пуплев зарядки çакăнта çырса кăтартнă евĕр кашни урокрах пулса пымалла. Урокăн çак тапхăрĕсене малашне кăтартса çеç хăварнă, тĕплĕ çырса паман.

Ачасем маларах панӑ ҫанталӑка сӑнлакан текст ҫумне ҫӗнӗ предложенисем хушаҫҫӗ, калава анлӑлатаҫҫӗ.

в) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
г) Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
д) Кӗнекери 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
е) Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
ё) Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
ӗ) Кӗнекери 9-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
ж) Кӗнекери 10-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

**5. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени.**

**6. Ӗҫе пӗтӗмлетни, ачасен ӗҫне хаклани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем малтан харпӑр хӑй ӗҫне хаклаҫҫӗ, кайран кашни ачан ӗҫне учитель хаклать.

**7. Киле ӗҫ.**

Кӗнекери 11-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**8. Урока вӗҫлени. Чӑвашла сывпуллашни.**

— Сывӑ пулӑр, ачасем!
— *Сывӑ пулӑр, Нина Ивановна!*

## 5—6-мӗш уроксем

### Тема: Ҫуллахи каникулта

***Урок тӗллевӗ:*** «Ҫуллахи каникулта» темӑпа ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пусӑм правилисене аса илесси, пусӑм тӗрӗс лартма хӑнӑхтарасси; 2) пулӑ ячӗсене пуплеве кӗртесси; 3) япала ячӗсемпе местоименисене хальхи вӑхӑтри глаголсемпе ҫыхӑнтарса усӑ курма хӑнӑхтарасси.

***Лексика материалӗ:*** пулӑ ячӗсем; ачасен ӗҫӗ-хӗлне пӗлтерекен сӑмахсем; *таврара, тӑрӑ, пӗве, ҫыран хӗрринче.*

***Грамматика материалӗ:*** япала ячӗсен пӗрреллӗ тата нумайлӑ хисеп формисем; хальхи вӑхӑтри глаголсен виҫҫӗмӗш сӑпат формисем.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, иртнӗ урок материалне аса илни.**

а) Вӗрентӳҫӗ ачасем килте хӑйсен класӗ ҫинчен мӗн каласа пама хатӗрленине ыйтать. Ачасем текста калаҫҫӗ.

ӑ) Иртнӗ урок материалне аса илсе ҫирӗплетни.

Учитель вĕренекенсене *хушшине, хушшинче, ҫине, ҫинче, патне, патĕнче, умне, умĕнче* сăмахсемпе усă курса ĕҫ хушать, ачасем пурнăҫлаҫҫĕ, мĕн тунине чăвашла калаҫҫĕ. Тĕслĕхрен:

*Учитель:* Саша, доска умне тух.

*Саша: Доска умне тухатăп* т. ыт. те.

**4. Ҫĕнĕ материалпа ĕҫлени.**

а) Сăвăпа ĕҫлени.

Ĕҫсене пурнăҫланă хыҫҫăн сăвва учительпе пĕрле пăхмасăр калама вĕренеҫҫĕ.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

Пусăм правилисене аса илмелле, схемисене ӳкермелле.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕҫе ҫырса пурнăҫлани.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

е) Кĕнекери 7-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

ё) Кĕнекери 8-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

ĕ) Ĕҫ тетрадĕнчи 3—4-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.

ж) Ĕҫ тетрадĕнчи 9-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.

**5. Киле ĕҫ.**

Кĕнекери 9-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла.

**6. Ĕҫе пĕтĕмлетни.**

Пулă ячĕсене аса илни.

Учитель пулă ӳкерчĕкĕсене кăтартать, ачасем вĕсен чăвашла ячĕсене калаҫҫĕ.

**7. Ĕҫе хаклани.**

Ĕҫ тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕҫне хаклаҫҫĕ, кайран кашни ачан ĕҫне учитель хаклать.

**8. Урока вĕҫлени.**

## 7—8-мĕш уроксем

### Тема: Ҫуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** ҫуллахи ĕҫ-хĕл, пулăмсем ҫинчен калаҫма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) ***-лă(-лĕ)*** аффикслă сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) хальхи вăхăтри глаголсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) тĕрлĕ чĕр чуна сăнлама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** пулă, кайăк-кĕшĕк, килти выльăхсен тата тискер чĕр чун ячĕсем; ачасен ĕҫĕ-хĕлне пĕлтерекен сăмахсем; *тĕрлĕ, кĕрен, вăрăм, кĕске, пытанмалла, тытмалла.*

***Грамматика материалӗ:*** япала ячӗсемпе ***-лӑ(-лӗ)*** аффикслӑ япала ячӗсен тата паллӑ ячӗсен ҫыхӑнӑвӗ, хальхи вӑхӑтри глаголсен пӗрреллӗ тата нумайлӑ хисеп формисем.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, иртнӗ урок материалне аса илни.**

а) Ачасем килте ҫырса килнӗ текста вуласа параҫҫӗ. Учитель вӗсене итлет, ӗҫӗсене хаклать.

ӑ) «Пулӑ тыт» вӑййа выляни, вӗреннӗ пулӑ ячӗсене аса илни.

Учителӗн «аквариумра» (коробкӑра) пулӑ ӳкерчӗкӗсем. Хутран касса тунӑ кашни пулла пӗрер скрепка тӑхӑнтартнӑ. Вӑлта вӗҫӗнче ҫекӗл вырӑнне магнит пур. Учитель пӗр ачана пулӑ тытма кӑларать. Ача пулӑ тытать те ун ятне вулать, унтан: «Ку ҫӑрттан. Вӑл пысӑк пулӑ», — тесе калать. Ҫак йӗркепе 5—6 ача «пулӑ тытаҫҫӗ».

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) Сӑвӑпа ӗҫлени.

Ачасем сӑвва харпӑр хӑй тӗллӗн вулаҫҫӗ, мӗн ӑнланнине вырӑсла каласа параҫҫӗ.

ӑ) Кӗнекери 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

б) Кӗнекери 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Учитель пулӑшнипе ачасем правило-ориентир тӑваҫҫӗ:

*Слова с аффиксами **-лӑ(-лӗ)** обозначают признаки предметов или действий. Если аффикс присоединяется к слову, оканчивающемуся на гласный звук или звук **л**, то надо писать две буквы **л**.*

в) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

г) Кӗнекери 5—6-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

Ачасем сӑвва пӗрер предложенин вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ. Унтан ыйтӑва хуравлаҫҫӗ. Кайран вӑйӑ выляҫҫӗ.

Вӑййа учитель пуҫлать. Хӑй ҫине кӑтартса: «Эпӗ — ҫупах», ача ҫине кӑтартса: «Эсӗ — уланкӑ», — тет. Ачи хӑй ҫине кӑтартса: *«Эпӗ — уланкӑ»*, юлташӗ ҫине кӑтартса: «*Эсӗ — карас*», — тет... Кама «Эсӗ тухатӑн» тесе калаҫҫӗ, ҫав доска умне тухать. Ҫапла выляса доска умне 3—4 ача тухать. Вӗсем — пулӑҫӑсем. Кашни пӗрер пулӑ «тытать» те (ӳкерчӗкне илет) ӑна сӑнласа парать.

д) Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

е) Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени, вӗреннине ҫирӗплетни.

**5. Киле ӗҫ.**

Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла. Ятарлӑ планпа усӑ курса ачасем мӗнле выляни ҫинчен каласа пама хатӗрленсе килмелле.

**6. Ĕçе пĕтĕмлетни.**

Учитель ачасене пулă, кайăк-кĕшĕк, килти тата тискер чĕр чунсен ӳкерчĕкĕсене кăтартать. Ачасем вĕсен ячĕсене ***-лă(-лĕ)*** аффикслă сăмахсемпе пĕрле калаççĕ. Доска çине схема çакса хума юрать.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 9—10-мĕш уроксем

### Тема: Кĕркунне çитрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** япала ячĕсемпе паллă ячĕсене çыхăнтарма хăнăхтарасси, ачасен чăвашла пуплевне аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол* терминсемпе паллаштарасси; 2) кун ячĕсене аса илесси, вĕсене йĕркипе калама тата çырма вĕрентесси; 3) япала ячĕсемпе, паллă ячĕсемпе, хальхи вăхăтри глаголсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** кун ячĕсем; çуллахи тата кĕрхи çанталăка сăнлакан паллă ячĕсем; ачасен ĕçĕ-хĕлне пĕлтерекен глаголсем; *йыхăрать, ыйту, итлет, кĕвĕ, тунсăхлă, виçмине, хуравлать, киленет.*

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕсемпе паллă ячĕсен çыхăнăвĕ, хальхи вăхăтри глаголсен пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп формисем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, иртнĕ урок материалне аса илни.**

а) Ачасем килте хатĕрленĕ калавсене каласа параççĕ.

ă) Учитель ачасене иртнĕ урокра вĕреннĕ шут сăввине калаттарса выляттарать. Пулă ячĕсем выраннe кайăк-кĕшĕк, килти тата тискер чĕр чун ячĕсене каласа выляççĕ.

Кама «Эс тухатăн» тесе калаççĕ, çавă доска умне тухать. Ачасем ăна пĕр-пĕр ĕç тума чăвашла хушаççĕ (аудировани), ача ĕçе пурнăçлать, мĕн тунине калать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани (аудировани ĕçĕ).

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 1-мĕш ĕҫре панӑ сӑвва тепĕр хут вулаҫҫĕ, куҫараҫҫĕ, пӑхмасӑр вĕренеҫҫĕ.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани. Ĕҫ йĕрки:

— мĕн тумаллине вулани;

— пусӑм правилисене аса илни;

— пусӑм тĕрĕс лартса вулани;

— ӑнланман сӑмахсене ӑнлантарни;

— схемӑсемпе усӑ курса сӑмахсене ушкӑнлани. Доска ҫинче схемӑсем, ачасем кашни схема патне малтан ҫулла, кайран кĕркунне ҫинчен каласа пама кирлĕ сӑмахсем тухса ҫыраҫҫĕ, предложенисем тӑваҫҫĕ.

Ĕҫе пурнӑҫланӑ чух паллӑ ячĕсемпе япала ячĕсем мĕнле ҫыхӑннине аса илсе ҫирĕплетсе хӑвармалла.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани. Ĕҫ йĕрки:

— мĕн тумаллине вулаҫҫĕ;

— ӳкерчĕксене сӑнаҫҫĕ;

— мӑшӑрсемпе ĕҫлесе калав тӑваҫҫĕ, малтан пĕр-пĕрне, унтан доска умне тухса каласа параҫҫĕ.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани.

з) Кĕнекери 10-мĕш ĕҫе пурнӑҫлани.

Ачасен иккĕшĕ те тĕрĕс ĕҫленине, мĕншĕн ҫапла пулнине каласа хӑвармалла.

**5. Киле ĕҫ.**

Ачасен килте канмалли кунсенче хӑйсем мĕн тума палӑртни ҫинчен каласа пама хатĕрленсе килмелле.

**6. Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени, вĕреннине ҫирĕплетсе хӑварни.**

**7. Ĕҫе хаклани.**

Ĕҫ тетрадĕнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем малтан харпӑр хӑй ĕҫне хаклаҫҫĕ, кайран кашни ачан ĕҫне учитель хаклать.

**8. Урока вĕҫлени.**

## 11-мĕш урок

### Тема: Пирĕн ҫемье

***Урок тĕллевĕ:*** тӑванлӑха пĕлтерекен сӑмахсемпе пуплевре усӑ курса ачасен чӑвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) тӑванлӑха пĕлтерекен сӑмахсене аса илтересси; 2) ачасене хӑйсен ҫемйи ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калама вĕрентесси; 3) ҫывӑх ҫынсене хисеплеме-юратма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** тӑванлӑха пĕлтерекен сӑмахсем; *чĕнет,*

*янратать, такмак, йĕрет (макăрать), сиплĕ, мĕншĕн? мĕншĕн тесен.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголсен хальхи тата пулас вăхăт формисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, иртнĕ урок материалне аса илни.**

а) Кун ячĕсене аса илсе калани.

ă) Хатĕрлесе килнĕ калавсене итлени, мĕншĕн вăл е ку глагол формипе усă курнине çирĕплетни.

Ĕçе вăйă майлă ирттерме юрать. Учитель журналист ролĕнче. Вăл класри пĕр-пĕр ачаран «интервью илет», ăна ыйтусем парса калаçтарать. Калаçу пуçламăшĕ:

— Сывлăх сунатăп, Лена. Эсĕ канмалли кун мĕн тăватăн?

— *Эпĕ канмалли кун ... .*

— Яла эсĕ кампа каятăн?

— . . .

Калаçу тĕслĕхĕпе усă курса малалла ачасем хăйсем калаçаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, задачисене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— мĕн тумаллине вулаççĕ;

— сăмахсене пусăм тĕрĕс лартса вулаççĕ, куçараççĕ (кирлĕ пулсан пусăм лартмалли правилăсене аса илмелле);

— кашни ача хăйĕн çемйинче кам-кам пуррине калать.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— мĕн тумаллине вулаççĕ;

— ӳкерчĕксене сăнаççĕ, камсем пулнине калаççĕ;

— текстсене харпăр хăй тĕллĕн çурма сасăпа вулаççĕ;

— ашшĕн (ачан, кукамăшĕн е асламăшĕн) сăмахĕсене тупса сасăпа вулаççĕ.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— мĕн тумаллине вулаççĕ;

— сăвва учитель вуласа парать, ачасем итлеççĕ;

— ачасем мĕн ăнланнине вырăсла калаççĕ;

— сăвва илемлĕ вулама вĕренеççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Сăвва илемлĕ вулама вĕренмелле, килтисене вуласа памалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине пĕтĕмлетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 12—13-мĕш уроксем

### Тема: Пирĕн çемье

***Урок тĕллевĕ: -са(-се)*** аффикслă глаголсемпе усă курма вĕрентесси, ачасен çемьепе çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ***-са(-се)*** аффикслă глагол формипе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) тăванлăха пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) ачасене хăйсен çемйинчи çынсем çинчен çыхăнуллă калама вĕрентесси; 4) çемьери çынсене хисеплеме-юратма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** тăванлăха пĕлтерекен сăмахсем, професси ячĕсем; *хăналать, пыл, илсе килчĕ, пасар, кил-йыш, пурте.*

***Грамматика материалĕ: -са(-се)*** аффикслă деепричастисем, хальхи, иртнĕ тата пулас вăхăтсенчи глаголсен пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, иртнĕ урок материалне аса илни.**

а) Тăванлăха пĕлтерекен сăмахсене аса илсе калани.

ă) Сăвва илемлĕ вулама вĕреннине тĕрĕслени.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани (аудировани ĕçĕ).

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

***-çă(-çĕ)*** аффикспа пулнă профессие пĕлтерекен сăмахсене ачасем хăйсем тупса калаççĕ.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ĕçе вăйă майлă ирттерме юрать. Пĕр-пĕр ача журналист ролĕнче. Вăл класри ачаран «интервью илет», ăна ыйтусем парса калаçтарать.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем ĕçе малтан пĕр-пĕринпе калаçса пурнăçлаççĕ, кайран доска умне тухса калаççĕ.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

з) Кĕнекери 10—11-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

и) Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçлани.

й) Кĕнекери 13-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

«Параппан» сăвва пăхмасăр вĕренмелле, килтисене каласа памалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни, пĕтĕмлетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 14—15-мĕш уроксем

### Тема: Пирĕн çемье

***Урок тĕллевĕ:*** çемьепе çыхăннă пуплевре *ăçта?* (куда?) ыйтури сăмахсемпе усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) *ăçта?* (куда?) ыйтăва хуравлама вĕрентесси; 2) ачана хăйĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕрентесси; 3) çемьери çынсене хисеплеме-юратма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** тăванлăха пĕлтерекен сăмахсем, пахча çимĕç, улма-çырла ячĕсем; *хатĕрленчĕ, тирпейленчĕ, васкаса, ĕлкĕреймерĕ, юлса, кансĕрлерĕ.*

***Грамматика материалĕ:*** *ăçта?* (куда?) ыйту; хальхи, иртнĕ тата пулас вăхăтсенчи глаголсен пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, иртнĕ урок материалне аса илни.**

а) Сӑвва пӑхмасӑр каласа пани.
ӑ) Тӑванлӑх терминӗсене тата профессие пӗлтерекен сӑмахсене аса илсе калани.
**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**
а) Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
ӑ) Кӗнекери 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
б) Кӗнекери 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
в) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
г) Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
д) Кӗнекери 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
е) Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
ё) Кӗнекери 8—10-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.
ӗ) Кӗнекери 11-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.
**5. Киле ӗҫ.**
Кӗнекери 12-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.
**6. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени, вӗреннине ҫирӗплетни, пӗтӗмлетни.**
**7. Ӗҫе хаклани.**
Ӗҫ тетрадӗнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем малтан харпӑр хӑй ӗҫне хакласҫӗ, кайран кашни ачан ӗҫне учитель хаклать.
**8. Урока вӗҫлени.**

## 16-мӗш урок

### Тема: Тимлӗ пул

***Урок тӗллевӗ:*** *ӑҫта?* (где?) ыйтури сӑмахсемпе пуплевре усӑ курма вӗрентесси, ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси.
***Урок задачисем:*** 1) *ӑҫта? (*где?) ыйтӑва тӗрӗс хуравлама вӗрентесси; 2) пуплевре хальхи вӑхӑтри глаголсен пурлӑ тата ҫуклӑ формисемпе усӑ курма вӗрентесси; 3) ачасене ҫул урлӑ тӗрӗс каҫмалли, ҫул-йӗр правилисене пӗлмелли ҫинчен каластарасси.
***Лексика материалӗ:*** *ҫул урлӑ, шкул патне.*
***Грамматика материалӗ:*** хальхи вӑхӑтри глаголсен пурлӑ тата ҫуклӑ формисем; *ӑҫта?* (где?) ыйтури япала ячӗсем.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**
**2. Пуплев зарядки.**
**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, вӗреннине аса илни.**
**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**
а) Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Схемăсемпе ĕçлени, *урлă, патне* сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентни.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем ӳкерчĕке сăнаççĕ, унта мĕн-мĕн тата кам-кам пуррине, вĕсем мĕн тунине калаççĕ. Хăйсем тĕллĕн ĕçлеймесен учитель ыйтусем парса пулăшать. Калаçу тĕслĕхĕ:

— Ачасем, ӳкерчĕкре мĕн ӳкернĕ?

— *Ӳкерчĕкре хула урамĕ ӳкернĕ.*

— Хула урамĕнче мĕнсем чупаççĕ? Камсем çӳреççĕ?

— *Хула урамĕнче машинăсем чупаççĕ. Çынсем çӳреççĕ.*

— Машинăсемпе çынсене йĕркеллĕ çӳреме мĕн пулăшать?

— *Вĕсене светофор пулăшать.*

— Ачасем, светофорăн миçе тĕс? Мĕнле тĕссем?

— *Светофорăн виçĕ тĕс: хĕрлĕ, сарă, симĕс.*

— Ачасем, хĕр ачапа арçын ача ăçта каяççĕ-ши?

— *Вĕсем çул урлă тĕрĕс каçаççĕ-и?*

Çапла ĕçленĕ хыççăн ачасем хăйсен хуравĕсене пĕтĕмлетсе ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ, малтан пĕр-пĕрне каласа параççĕ, кайран доска умне тухса калаççĕ.

Учитель ачасене çул çинче, урамра, çул урлă каçнă чух яланах асăрхануллă пулмаллине калать.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Физкультура саманчĕ.

Учитель:

— Халĕ эпир сирĕнпе пĕр вăйă выльăпăр. Эпĕ сире виçĕ тĕс кăтартатăп (хĕрлĕ, сарă, симĕс çаврашкасем), эсир вара тĕсе кура е утатăр (вырăнта), е тăратăр, е ларатăр.

Учитель сарă çаврашка кăтартсан ачасем ура çине тăраççĕ, симĕс — утаççĕ, хĕрлĕ — ларaççĕ.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни, пĕтĕмлетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 17—18-мĕш уроксем

### Тема: Асамлă пӳлĕм

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен библиотекăпа çыхăннă чăвашла пуплевне ***-ма(-ме)*** аффикслă инфинитивсемпе усă курса пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *мĕн тума?* ыйтури сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланма, ыйтăва хуравлама вĕрентесси; 2) *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) кĕнекесен пĕлтерĕшĕ, вĕсене тирпейлĕ тытмалли, упрамалли çинчен калаçтарасси.

***Лексика материалĕ:*** *пачах, юсама пулăшать, тупма тивĕç, чĕнмест, асамлă, çĕтĕлет.*

***Грамматика материалĕ: -ма(-ме)*** аффикслă инфинитив форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Учитель калаçу йĕркелет:

— Ачасем, паян эпир асамлă пӳлĕме каятпăр. Мĕнле пӳлĕмши вăл? Сирĕн пĕлес килет-и?

— *Çапла! Пĕлес килет.*

— Апла пулсан хатĕрленĕр.

Учитель ачасене сарă çаврашка кăтартать, ачасем хатĕрленсе тăраççĕ. Унтан симĕс çаврашка кăтартать, ачасем утаççĕ.

— Эпир халĕ асамлă пӳлĕме каятпăр.

Кун хыççăн учитель ачасене хĕрлĕ çаврашка кăтартать. Ачасем утма чарăнаççĕ.

— Ачасем, эпир сирĕнпе асамлă пӳлĕме çитрĕмĕр. Ларăр.

«Библиотекăра» картина кăларса çакать е кĕнекесене кирлĕ страницăна уçтарать.

— Ку мĕнле пӳлĕм?

— *Ку — библиотека.*

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани. (Аудировани ĕçĕ.)

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— ачасем ӳкерчӗке сӑнаççӗ, унта мӗн-мӗн тата кам-кам пуррине, вӗсем мӗн тунине калаççӗ. 3-мӗш ӗçри текстпа усӑ курса калав тӑваççӗ. Хӑйсем тӗллӗн ӗçлеймесен учитель ыйтусем парса пулӑшать. Калава малтан пӗр-пӗрне, кайран доска умне тухса калаççӗ.

— учитель ачасене кӗнекесене упрамалли çинчен каласа хӑварать.

е) Кӗнекери 6—7-мӗш ӗçсене пурнӑçлани.

ё) Кӗнекери 8-мӗш ӗçе пурнӑçлани.

**5. Киле ӗç.**

Кӗнекери 9-мӗш ӗçе пурнӑçламалла.

**6. Ӗç тетрачӗпе ӗçлени.**

**7. Ӗçе хаклани.**

Ӗç тетрадӗнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем малтан харпӑр хӑй ӗçне хакласçӗ, кайран кашни ачан ӗçне учитель хаклать.

**8. Урока вӗçлени.**

## 19—20-мӗш уроксем

### Тема: Кун йӗрки

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен кун йӗркипе çыхӑннӑ чӑвашла пуплевне вӗреннӗ глагол формисемпе усӑ курса пур енлӗн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пуплевре ***-са(-се)*** аффикслӑ деепричастисемпе тата хальхи, иртнӗ вӑхӑтри глаголсемпе пулнӑ сӑмах майлашӑвӗсемпе усӑ курма вӗрентесси; 2) инфинитивпа пулнӑ сӑмах майлашӑвӗсемпе усӑ курма хӑнӑхтарасси; 3) ачасене кун йӗрки çинчен калаçтарасси.

***Лексика материалӗ:*** ачасен ирхи ӗçӗсене пӗлтерекен сӑмахсем.

***Грамматика материалӗ: -са(-се)*** аффикслӑ деепричастисемпе тата хальхи, иртнӗ вӑхӑтри глаголсемпе пулнӑ сӑмах майлашӑвӗсем.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗçе тӗрӗслени.**

**4. Çӗнӗ материалпа ӗçлени.**

а) Кӗнекери 1-мӗш ӗçе пурнӑçлани.

ӑ) Кӗнекери 2-мӗш ӗçе пурнӑçлани.

б) Кӗнекери 3-мӗш ӗçе пурнӑçлани.

в) Калаçу йӗркелени.

Учитель кашни ача умне пукане хурать, калаçу йĕркелет. Калаçу вăхăтĕнче иртнĕ урокра вĕреннине çирĕплетет:

— Ачасем, пуканесем мĕн тăваççĕ?

— *Пуканесем выртаççĕ (çывăраççĕ).*

— Ачасем, атьăр пуканесене вăрататпăр. Мĕн тăватпăр?

— *Юрлатпăр!* («Параппан» юрра юрлаççĕ.)

— Ачасем, пирĕн пуканесем вăранчĕç. Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем малалла?

— *Зарядка тăваççĕ.*

Учитель ачасемпе зарядка тăвать. (Ачасем хăйсен пуканисене алла илеççĕ, вĕсем те зарядка тунă пек кăтартаççĕ.)

Çак текстпа е урăххипе усă курма юрать:

Зарядка тăватпăр
Эпир ирсерен
Вăй-халлă та паттăр
Пулма пĕчĕкрен.

— Саша (Лена, Леша...), эсĕ мĕн турăн?

— *Эпĕ зарядка турăм.*

— Ачасем, зарядка турăмăр, халĕ малалла мĕн тăватпăр?

— *Çăвăнатпăр, шăл тасататпăр, çӳç туратпăр.*

— Атьăр, ачасем, хамăр мĕнле çăвăннине, шăл тасатнине, çӳç туранине пуканесене кăтартатпăр.

Ачасем ĕçсене «тăваççĕ», мĕн тунине калаççĕ. Тĕслĕхрен: *Эпĕ çăвăнатăп (çӳç туратăп, шăл тасататăп...).* Учитель кашни ача патне пырса ыйтать:

— Саша, эсĕ мĕн турăн?

— *Эпĕ çăвăнтăм, шăл тасатрăм, çӳç турарăм...*

Унтан пуканесен питне, хăлхисене, мăйне «çăваççĕ», шăлне тасатнă пек тăваççĕ, пуканесен çӳçне тураççĕ. Çак ĕçсене пурнăçланă май мĕн тунине каласах пыраççĕ. Тĕслĕхрен:

— *Эпĕ пит (хăлха, мăй) çăватăп, шăл тасататăп, çӳç туратăп.*

— Ачасем, пăхăр-ха, мĕнле таса, чипер пирĕн пуканесем. Малалла мĕн тăваççĕ-ши вĕсем?

— *Тăхăнаççĕ!*

— Атьăр пуканесене тăхăнтартатпăр!

Ачасем пуканесене тăхăнтартаççĕ, мĕн-мĕн тăхăнтартнине калаççĕ. Тĕслĕхрен:

— *Эпĕ пуканене кĕпе (кофта...) тăхăнтартрăм.*

— Çăвăнтăмăр, тăхăнтăмăр, халĕ мĕн тăватпăр?

— *Апат çиетпĕр.*

— Мĕн юратаççĕ сирĕн пуканесем? Ыйтса пĕлер-ха вĕсенчен.
— *Пукане, эсĕ мĕн юрататăн?*
Ача хăй пĕр-пĕр пĕлнĕ, юратнă çимĕç ятне калать.
— Саша, санăн пуканӳ мĕн юратать? — ыйтать учитель.
— *Манăн пукане пан улми юратать.*
— Тархасшăн, пан улми ил.
Учитель ачана пан улми (муляжне е ӳкерчĕкне) парать.
— Таня, санăн пуканӳ мĕн юратать?
— ...
— Апат çирĕмĕр. Малалла мĕн тăватпăр?
— *Шкула каятпăр.*
Ачасем пуканесене партăсем хушшине (çине) вырнаçтарса лартаççĕ.
г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.
д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:
— мĕн тумаллине вулаççĕ;
— ӳкерчĕке сăнаççĕ;
— ыйтусемпе ĕçлеççĕ (учитель ачасене ӳкерчĕкпе çыхăннă 4—5 ыйту парать);
— пĕр парта хушшинче ларакан ачасем пĕрле калаçса пĕр текст тăваççĕ;
— текста каласа параççĕ.
е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.
**5. Киле ĕç.**
Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла.
**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**
**7. Ĕçе хаклани.**
Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.
**8. Урока вĕçлени.**

## 21-мĕш урок

### Тема: Кун йĕрки

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен кун йĕркипе çыхăннă чăвашла пуплевне иртнĕ вăхăтри глаголсен пурлă тата çуклă формисемпе усă курса пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) «аффикс» терминпа паллаштарасси; 2) иртнĕ вăхăтри 1-мĕш сăпатри пурлă тата çуклă формăсенчи глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 3) ачасене ĕçе юратма вĕрентесси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлне пĕлтерекен сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** иртнĕ вăхăтри 1-мĕш сăпатри глаголăн пурлă тата çуклă формисем.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

а) Хатĕрлесе килнĕ калавсене итлени, мĕншĕн вăл е ку глагол формипе усă курнине калани, çирĕплетни.

Ĕçе 11-мĕш урокри пек вăйă майлă ирттерме юрать. Пĕр-пĕр ача журналист ролĕнче. Вăл класри тепĕр ачаран «интервью илет», ăна ыйтусем парса калаçтарать. Калаçу пуçламăшĕ:

— *Сывлăх сунатăп, Лена. Санăн тус пур-и? Тусу çинчен каласа пар, тархасшăн.*

— ...

ă) Учитель ачасене ыйту парса инфинитив формипе усă курма пĕлнине тĕрĕслет.

— Витя, санăн тусу мĕн тума юрататъ?

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем сăмах майлашăвĕсене вулаççĕ, вĕсене куçараççĕ, унтан предложенисем тăваççĕ, вĕсене куçараççĕ. Кайран глаголсене *эсĕ, вăл* местоименисемпе каласа пăхаççĕ.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) «Калаçăва тăс» вăйă.

Ку вăйăра ачасем килте е класра мĕнле ĕçсем тунине пĕрре иртнĕ вăхăтра калаççĕ. Калаçăва пĕри пуçлать, ыттисем тăсаççĕ. Тĕслĕхрен:

— *Эпĕ ĕнер урай çурăм. Таня, эсĕ ĕнер урай çурăн-и?*

— *Çапла, эпĕ те ĕнер урай çурăм. Саша, эсĕ урай çурăн-и?*

— *Çук, эпĕ урай çумарăм. Эпĕ тусан шăлтăм. Лена, эсĕ ĕнер мĕн турăн?*

— *Эпĕ чечек шăвартăм...*

Кам ĕçе пĕлтерекен сăмахсемпе юлашкинчен предложени тупать, çав çĕнтерет.

Учитель кил-çурт таса, илемлĕ пулсан пурне те ырă пулни, ашшĕ-амăшĕ савăнни çинчен калать, ачасене ĕçчен çын пулса ӳсме вĕрентет.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

«Аффикс» терминпа паллашаççĕ.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 22—23-мĕш уроксем

### Тема: Кун йĕрки

***Урок тĕллевĕ:*** *хур, яр, тăр, пар, пыр, кĕр* глаголсене пĕрре иртнĕ вăхăтра сăпатлама вĕрентесси, ачасен кун йĕркипе çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *хур, яр, тăр, пар, пыр, кĕр* глаголсене сăпатлама вĕрентесси; 2) ачасене хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама хăнăхтарасси; 3) тăван тавралăхăн илемне курма, туйма вĕрентесси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлне пĕлтерекен сăмахсем; *унтан, каялла, унта, час-часах, сарлака, тупмалли юмах, тупсăмĕ.*

***Грамматика материалĕ:*** *хур, яр, тăр, пар, пыр, кĕр* глаголсен сăпатланăвĕ.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем сăвва пăхмасăр каласа параççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Кĕнекере панă схемăсене тишкерни, тĕслĕхсем тупса калани, предложенисем йĕркелени, пĕтĕмлетӳсем туни.

г) Кĕнекери 4—6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасем схемăпа паллашаççĕ: ансăр предложенисене вуласа куçараççĕ. Учитель ачасене *хур, яр, тăр, пар* глаголсен сăпатланăвĕн уйрăмлăхĕсене каласа парать. Ачасем пĕтĕмлетĕве вулаççĕ.

д) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5.** Киле ĕç.

Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. «Калаçăва тăс» вăйă.**

Ку вăйăра ачасем урокра хăйсем мĕнле ĕçсем тунине пĕрре иртнĕ вăхăтра, 3-мĕш сăпат форминче калаççĕ. Калаçăва пĕри пуçлать, ыттисем тăсаççĕ. Тĕслĕхрен:

— *Оля калаçрĕ. Паша калаçрĕ-и?*

— *Çапла, Паша та калаçрĕ. Дима мĕн турĕ?*

— *Дима вуларĕ...*

Иртнĕ урокри пекех, кам ĕçе пĕлтерекен сăмахсемпе юлашкинчен предложени тупать, çав çĕнтерет.

**7. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**8. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**9. Урока вĕçлени.**

## 24-мĕш урок

### Тема: Ылтăн кĕркунне

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен ылтăн кĕркуннепе çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсемпе усă курса ылтăн кĕркунне çинчен калаçтарасси; 2) йывăç ячĕсене аса илтересси; 3) тăван тавралăхăн илемне курма-туйма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлне пĕлтерекен сăмахсем; йывăç ячĕсем; уйăх ячĕсем; *пурçăн пек, мухтанать, авăнса лараççĕ, тирек, капăр, улмуççи, астив.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголсен пĕрре иртнĕ вăхăт форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

а) Çуллахи каникулта мĕн туни çинчен каласа параççĕ.

2—3 ача каласа парать, ыттисем итлеççĕ. Кайран учитель ачасем пĕр-пĕрне итлесе ăнланма пултарнин (аудировани хăнăхăвĕн) шайне тĕрĕслет: ачасем мĕн илтнине 3-мĕш сăпат форминче чăвашла каласа параççĕ е мĕн ăнланнине вырăсла куçараççĕ.

ă) *хур, яр, тăр, пар, пыр, кĕр* глаголсене сăпатлаççĕ, предложенисем тăваççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.
б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.
в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.
г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.
д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.
е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа уса курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## Экскурсие кайни. Уроксем хыççăнхи ĕç

Класра учитель ачасене вăрмана (парка е сад пахчине) экскурсие каясси пирки калать. Хăйсене мĕнле тытмаллине, çут çанталăка упрама пĕлмеллине асăрхаттарать. Çул çинче çул йĕркине пăхăнмалли çинчен ăнлантарать.

**1. Вăрмана çитсен учитель ачасене ыйтусем парса чăвашла калаçтарать.**

— Ачасем, кĕрхи вăрман мĕнле? Ачасем, шăп тăрса вăрман шавне итлер-ха. Мĕнле сасăсем илтĕнеççĕ? Кайăксен сассисем пур-и?

Ачасем вăрман илемĕпе унăн кĕввине итлесе киленеççĕ. Вăрманта шавламасăр çӳреççĕ.

**2. «Йывăç ăçта?» вăйă. Учитель пĕр-пĕр йывăç çулçине илет те калать:**

— Йывăçĕ хăшĕ?

Ачасем хăвăрт çав йывăçа шыраса тупаççĕ те:

— *Акă хурăн!* — теççĕ.

Кам маларах çав йывăça тупать, çав ачана учитель çулçине парать. Темиçе хут çапла вылянă хыççăн учитель ачасен çулçисене шутласа пăхать. Камăн çулçă нумайрах, çав çĕнтерет.

**3. Учитель калаҫăва малалла тăсать:**

— Мĕнле йывăҫсен ҫулҫисем чи кайран ӳкеҫҫĕ? Мĕнле йывăҫсен ҫулҫисем кашни ҫул ӳкмеҫҫĕ? Тупсăмне тупăр: «Хĕлле те, ҫулла та симĕс». *(Хыр, чăрăш.)* Мĕнле йывăҫсен халĕ те ҫырлисем пур? *(Пилеш, палан.)*

Вĕрентӳҫĕн ҫырласене усăсăр татса пĕтермелле маррине, хĕлле пирĕн пата кайăксем вĕҫсе килнине, вĕсем пилеш тата палан ҫырлисене ҫиме юратнине каласа хăвармалла.

— Вăрманта мĕнле тискер чĕр чунсем пурăнаҫҫĕ? Мĕнле чĕр чун хĕлле ҫывăрать, ҫуркунне вăранать? *(Упа.)* Мĕнле чĕр чун хăйне валли мăйăр тата кăмпа хатĕрлет? *(Пакша.)* Мĕнле чĕр чун ҫулла сăрă, хĕлле шурă? *(Мулкач.)*

**4. Малалла учитель экскурсие хăйне майлă тăсать. Тĕрлĕ вăййсем ирттерет.**

Тĕслĕхрен, «Тук-тукла» вăййă. Шăпа ярса е шут сăвви каласа ачасем вăййă пуҫне — вăрман хуралҫине — тата вăййă варрине тухмалли ачана суйлаҫҫĕ. Ытти вылякансем ҫавра туса ҫерем ҫине ларса е тăрса тухаҫҫĕ. Вăййă пуҫĕ кашни ачана хăлхаран, ыттисем илтмелле мар, тĕрлĕ йывăҫ ячĕсене каласа тухать. Вара вăййă варринче ларакан ача хыҫне тăрса ик аллипе унăн куҫĕсене хуплать.

— *Тук-тук!* — тет вăййă пуҫĕ.

— *Кам эсĕ?* — ыйтать варринче ларакан ача.

— *Патша.*

— *Сана мĕн кирлĕ?*

— *Йывăҫ.*

— *Мĕнле йывăҫ?*

— *Хурăн.*

— *Хурăн ҫук.* (Хурăн ятне панă ача ҫук пулсан.)

— *Эппин, юман.*

— *Пур,* — хуравлать варринче лараканни.

«Юман» ят илнĕ ача майĕпен, пĕр сассăр тăрса куҫне хупланă ачана, вăййă варринче лараканскерне, хыҫалтан аллипе тĕкĕнет. Унтан каллех пĕр сассăр хăй вырăнне кайса ларать. Вăййă пуҫĕ варринче ларакан ачан куҫĕсене уҫать те: «Кам тĕкрĕ?» — тесе ыйтать. Варринче лараканни кам тĕкĕннине пĕлсен «Юман» вырăнне кайса ларать. Ăна вăййă пуҫĕ ҫĕнĕ ят парать. «Юман» вăййă варрине тухса ларать.

Вăййă варринче лараканни кам тĕкĕннине пĕлеймесен хăй вырăнĕнчех юлать. «Юмана» вăййă пуҫĕ ҫĕнĕрен урăх йывăҫ ятне парать. Варринче ларакан ача виҫĕ хутчен те хăйне кам тĕкнине пĕлеймесен ăна пĕр-пĕр ĕҫ хушаҫҫĕ: е юрлаттараҫҫĕ, е чуптараҫҫĕ, е сиктереҫҫĕ.

Экскурси вăхăтĕнче ачасемпе чăвашла çеç калаçма тăрăшмалла. Вĕреннĕ сăвă-юрăсене аса илсен аван.

## 25—26-мĕш уроксем

### Тема: Кĕрхи вăрманта

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен кĕрхи вăрманпа çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсемпе кĕрхи вăрманпа çыхăннă пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) кăмпа ячĕсемпе паллаштарасси; 3) çут çанталăк илемне туйма, пуянлăхне упрама вĕрентесси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлне пĕлтерекен сăмахсем; кăмпа ячĕсем; ***-лăх(-лĕх)*** аффикспа пулнă сăмахсем; *киленет, купа, шăплăх, сăнать, тунката, пĕркенчĕк.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголсен пĕрре иртнĕ вăхăт форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хатĕрленĕ диалогсене каласа параççĕ: доска умне икшерĕн тухса калаçаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Учитель доска çине (е экран çине) схема ўкерет:

— Çак тăваткалсенче çулталăкăн хăш вăхăчĕ пытаннă? Çав сăмаха тупсан эпир паян урокра мĕн çинчен калаçассине пĕлĕпĕр. (Ачасем тупаççĕ.)

Паян эпир *кĕркунне* çинчен калаçăпăр.

Унтан ачасем П.И. Чайковскин кĕркунне çинчен çырнă кĕввине итлеççĕ.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем текста малтан харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, унтан содержание вырăсла каласа параççĕ. Кайран кам мĕнле кăмпа пуçтарни çинчен предложенисем туса текста малалла тăсаççĕ. Учитель грамматика материалне пĕлнине-ăнланнине тĕрĕслет.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.
з) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.
и) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.
й) Кĕнекери 12-мĕшпе 13-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 14-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне кӳрши хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 27-мĕш урок

### Тема: Хура кĕркунне

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен хура кĕркуннепе çыхăннă чăвашла пуплевне хальхи, пулас тата пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсемпе усă курса пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи, пулас тата пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) кĕрхи ĕçсем çинчен калаçма хăнăхтарасси; 3) тăван тавралăха сăнама, унăн илемне, пуянлăхне асăрхама вĕрентесси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** *чарăнать, хĕл каçма, çаралать, тем çинчен, кăнтăр, пĕрĕхет, сĕм, хыпар.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн вăхăчĕсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

**4. Çĕнĕ темăпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.
б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.
в) Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.
г) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.
д) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Малтан ӳкерчĕкпе ĕçлесе пахча çимĕç, улма-çырла ячĕсене аса илеççĕ.

ĕ) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ваттисен сăмахĕсене вĕренсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне кӳрши хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 28—29-мĕш уроксем

### Тема: Кĕр парни

***Урок тĕллевĕ:*** пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсем çинчен вĕреннине аса илесси, ачасен кĕрхи ĕçсемпе çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пахча çимĕç, улма-çырла ячĕсене аса илесси; 2) пĕрре иртнĕ вăхăтри тĕрлĕ сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 3) пулса иртнĕ ĕçсем çинчен пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсемпе усă курса каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕсем çинчен каласа пама кирлĕ сăмахсем; *шултра, сĕтеклĕ, усăллă, сиплĕ.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголсен пĕрре иртнĕ вăхăчĕн тĕрлĕ сăпат формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

а) Ачасем ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр калаççĕ.

ă) Вăйă выляни.

Сĕтел çинче тĕрлĕ çимĕçсем (е ӳкерчĕкĕсем, е муляжĕсем). Вăййа учитель пуçлать:

— Ĕнер эпĕ лавккана кайрăм. Лавккара пан улми (груша, банан, виноград) илтĕм. (Сĕтел çинчен çимĕçне илет.) Пан улмисем шултра, хĕрлĕ, илемлĕ. Килте эпĕ пан улмисене малтан çурăм, кайран çирĕм. Вĕсем питĕ тутлă пулчĕç.

Саша, эсĕ лавккана хăçан кайрăн?

Малалла ваййа Саша тăсать. Çапла майпа ачасем глаголсене пĕрре иртнĕ вăхăтра лартса калаçаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Сăмахсемпе предложенисем йĕркелемелле.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Тупмалли юмахсене ачасем пĕр-пĕринпе калаçса-хутшăнса хатĕрлеççĕ, кайран доска умне тухса калаççĕ. Ытти ачасем тупсăмне тупаççĕ.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Текста ачасен харпăр хăй тĕллĕн вуламалла, куçармалла.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

з) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

и) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр калама вĕренсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнче панă таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 30—31-мĕш уроксем

### Тема: Хура кĕркунне

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен хура кĕркуннепе çыхăннă чăвашла пуплевне çуклă формăри глаголсемпе усă курса пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вĕçен кайăксен ячĕсене аса илтересси; 2) çуклă формăри пĕррелле тата нумайлă хисепри тĕрлĕ сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 3) кĕрхи ĕçсем çинчен тĕрлĕ вăхăтри глаголсемпе усă курса калаcа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** хура кĕр çинчен калаçма кирлĕ сăмахсем; кайăк ячĕсем; *хускалчĕç, шăнать, канать, вырăнтан, тытăнать, çул тытрĕç.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ вăхăт формисем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**
**2. Пуплев зарядки.**
**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**
**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Кĕрхи уйăхсен ячĕсене аса илсе каламалла.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Урокра вĕреннĕ кайăк ячĕсене ĕç вĕçĕнче аса илмелле. Ӳкерчĕксемпе е электронлă пособипе усă курма юрать.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем текста вулаççĕ, куçараççĕ. Кайран ĕçе пурнăçлаççĕ.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ĕçе çырмасăр пурнăçлама юрать (е аффиксĕсене кăранташпа çырмалла). Сăвăпа паллашнă хыççăн вĕрентӳçĕ ачасене илемлĕ вулама вĕрентет: ачасем малтан унăн кăтартуллă вулавне итлеççĕ, унтан унпа пĕрле, кайран хăйсем пурте пĕрле, ретĕн-ретĕн, пĕчченшерĕн вулаççĕ.

з) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Якур çинчен çырнă сăвва пăхмасăр калама вĕренсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнче панă таблицăпа усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне вĕрентӳçĕ хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## Пĕтĕмлетӳ, тĕрĕслев урокĕ

***Урок тĕллевĕ:*** пĕрремĕш чĕрĕкре вĕреннĕ темăсемпе ачасен чăвашла пуплев хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсене тĕрĕслесси, хакласси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** вĕреннĕ темăсемпе çыхăннă сюжетлă тата уйрăм япаласен ӳкерчĕкĕсем, уйрăм текстсене çырнă карточкăсем.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Ачасен чăвашла пуплев хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсене тĕрĕслени, хаклани.**

а) Учитель кашни ачана вĕреннĕ темăсемпе пĕрер ӳкерчĕк валеçет, хатĕрленме вăхăт парать. Ачасем вĕреннине аса илеççĕ, ӳкерчĕке пăхса пĕчĕк калав тăваççĕ.

Тĕслĕхрен:

*Ку шкул. Вăл çутă, илемлĕ. Чӳречесем çинче чечексем ӳсеççĕ. Ачасем вĕсене шăвараççĕ.*

*Шкулта чĕр чунсен кĕтесĕ пур. Унта чĕрĕп, пакша, мулкач, тилĕ, тăмана пурăнаççĕ. Ачасем вĕсене юратса пăхаççĕ. Кишĕр, пан улми, мăйăр, курăк, какай параççĕ.*

*Эпĕ виççĕмĕш класра вĕренетĕп. Кĕнеке вулама юрататăп. Библиотекăран кĕнекесем илетĕп.*

Ачасем доска умне тухса хăйсен калавĕсене каласа параççĕ. Класри ытти ачасем вĕсене итлеççĕ (аудировани). Учитель ыйтусем парса ăнланнине тĕрĕслет. Çапла майпа аудированипе калаçу хăнăхăвĕсене хаклать.

ă) Вулав хăнăхăвне тĕрĕслес тата вĕреннине çирĕплетес шутпа учитель ачасене вĕреннĕ темăсемпе пĕчĕк калавсем парать. Калавсене карточкăсем çине çырмалла. Ача карточкăна илет, текста сасăпа вулать, куçарать. Вулав хăнăхăвне, чĕлхе материалне пĕлнине программăра панă виçесене тĕпе хурса тĕрĕслемелле, анчах ачасем вĕренмен грамматика материалĕпе çыхăннă йăнăшсем тăваççĕ пулсан оценкăна чакарма кирлĕ мар.

### Текстсем:

ТАРАСПА ПАВĂЛ

Тараспа Павăл туслă. Пĕррехинче вĕсем вăрмана кайрĕç. Вăрманта кăмпа питĕ нумай: уплюнкка, хыр кăмпи, шур кăмпа, кăрăç, ăвăс кăмпи, сар кăмпа. Тараспа Павăл кăрăç пуçтарчĕç. Вĕсем питĕ савăнчĕç.

МĂРЛИ

Пирĕн кушак пур. Вăл Мăрли ятлă. Мăрлин урисемпе хӳри шурă, хăй вара хура.

Пирĕн кушак питĕ ăслă. Вăл шăши тытать. Кăмака çинче çывăрма юрататать.

## АНЮКПА ИЛЮШ

Анюкпа Илюш — аппăшĕпе шăллĕ. Анюк виççĕмĕш класра вĕренет. Илюш — пĕрремĕш класра. Вĕсем иккĕшĕ те лайăх вĕренеççĕ. Вĕсене учительсем мухтаççĕ.

## ЯША

Манăн пичче Яша ятлă. Яша шкулта вĕренет. Вăл ĕçчен ача.

Яша мана лайăх вулама вĕрентет, çырма та пулăшать.

## ЛИЗА АМĂШĔ

Кĕркунне. Лизăпа амăшĕ пахчара ĕçленĕ. Вĕсем патне Зинăпа Зоя пынă. Лиза амăшĕ çĕр улми кăларнă, хĕр ачасем ăна пуçтарнă. Лиза амăшĕ хĕр ачасене тав тунă.

## ХУРАÇКА

Манăн хура йытă пур. Вăл Хураçка ятлă.

Хураçка кил-çурта лайăх сыхлать. Эпир унпа час-часах вылятпăр, урамра ăмăртмалла чупатпăр.

## ПИРĔН ÇЕМЬЕ

Пирĕн çемье пысăк мар. Эпир тăваттăн пурăнатпăр. Атте, анне, Полина тата эпĕ — Гриша. Эпĕ виççĕмĕш класра вĕренетĕп. Полина ача садне çӳрет. Пире аттепе анне юратаççĕ, вĕренме те пулăшаççĕ.

## КАНМАЛЛИ КУН

Канмалли кун Таня ирех тăчĕ. Вăл вырăнне пуçтарчĕ, чечексене шăварчĕ, урай çурĕ. Амăшне çĕр улми шуратма пулăшрĕ. Таня маттур хĕр ача.

## ĔÇЧЕН АЧА

Петя çулла ялта пурăннă. Вăл аслашшĕпе асламăшне пулăшнă. Сухан, купăста, кишĕр, хăяр ӳстернĕ. Пушă вăхăтра кĕнеке вуланă, пулă тытнă.

Петя — ĕçчен ача.

## ЯКУР

Манăн шăллăм Якур ятлă. Вăл пилĕк çулта. Эпĕ виççĕмĕш класра вĕренетĕп. Пушă вăхăтра эпир Якурпа вылятпăр. Пирĕн Якур лайăх ача.

## МАРЬЕ

Марье шкула çӳрет. Вăл Ольăпа пĕр парта хушшинче ларать. Марье тăрăшса вĕренет. Килте Марье амăшне пулăшать. Пушă вăхăтра кĕнеке вулать, телевизор пăхать.

## УРОКРА

Уроксем пуçланчĕç. Ачасем шăпланчĕç. Пĕрремĕш урокра вĕсем вуларĕç, иккĕмĕш урокра шутларĕç, виççĕмĕш урокра çырчĕç, тăваттăмĕш урокра ӳкерчĕç.

## ПЫСĂК САВĂНĂÇ

Пирĕн атте — ырă кăмăллă та ĕçчен çын. Вăл платник, пӳртсем тăвать.

Шăмат кун вăл хулана кайрĕ. Атте ман валли пальто, шăллăм валли коньки илсе килчĕ. Эпир аттене тав турăмăр.

## БИБЛИОТЕКА

Пирĕн ялта библиотека пур. Библиотекăра кĕнеке, журнал нумай.

Манăн йăмăк Анюк библиотекăна çӳрет. Вăл кĕнеке вулама юратать.

## СЕРЕЖА

Сережа шкултан таврăнать, апат çиет те выляма каять. Вăл пĕр сехет урамра вылять, унтан уроксем тăвать. Кайран амăшне пулăшать.

Сережа пур ĕçе те вăхăтра тăвать.

## ИРХИНЕ

Эпĕ ирех тăратăп. Вырăна пуçтаратăп. Унтан зарядка тăватăп. Çăвăннă хыççăн тумланатăп, ирхи апат çиетĕп. Сакăр сехетре шкула çитетĕп.

## ШКУЛ ПАХЧИ

Пирĕн шкулăн пахча пур. Вăл пысăк. Унта улмуççи, чие çырли, хурлăхан, хăмла çырли йывăççисем ӳсеççĕ. Кăçал улмаçырла ăнса пулчĕ.

Пирĕн шкул пахчи питĕ илемлĕ.

**4. Схемăсемпе ĕçлени.**

Учитель схемăсем (кĕнекере панисене) çĕклет е экран çине кăларать. Ачасем предложенисем тупаççĕ.

**5. Ачасен словарьне тĕрĕслес тĕллевпе тĕрлĕ вăйăсем выляма юрать.**

а) «Йывăç ячĕсене пĕлетĕн-и?» вăйă.

Доска çинче йывăçсен (хурăн, çăка, пилеш, юман, вĕрене, йăмра...) ӳкерчĕкĕсем. Сĕтел çинче вĕсен ячĕсене çырнă хăюсем. Ачасен ӳкерчĕк айне кирлĕ хăю хумалла.

ă) «Кам нумайрах пĕлет?» вăйă.

Учитель ачасене вĕçен кайăк (кăмпа, йывăç...) ячĕсене калама ыйтать. Кам юлашкинчен калать, вăл çĕнтерет.

б) «Ан ман» вăйă.

Доска умне 7—8 ача тухаççĕ. Пĕрремĕш ача *купăста* тет. Иккĕмĕш пĕрремĕш ача каланă сăмаха калать те çĕнĕ сăмах хушса хурать: *купăста, кишĕр.* Виççĕмĕшĕ — пĕрремĕшпе иккĕмĕш ача калани çумне тепĕр сăмах хушать те пур сăмахне те калать. Малалла çавăн пек выляççĕ. Юлашки ача малтан каланă сăмахсене пурне те калать те хăйĕнне хушса хурать. Калайман е малтанхи сăмахсене манса каякан ача вăйăран тухать.

в) Тупмалли юмахсен тупсăмне тупни. Тĕслĕхрен:

*Тулĕ симĕс, ăшĕ хĕрлĕ.* (Арбуз.) *Пуçĕ шалта, хӳри тулта.* (Кишĕр.) *Пин-пин кĕпе тăхăннă, ниепле хывса пĕтерейместь.* (Купăста.)

г) «Мĕн-ши вăл?» вăйă.

Пĕр ача класран тухать. Çав вăхăтра ыттисем, пĕр-пĕринпе калаçса татăлса, çимĕç суйласа илеççĕ. Сăмахран, *хăяр.*

Ача кĕрет, класра ларакансем суйласа илнĕ çимĕçĕн паллисене калаççĕ. Ачан унăн ятне пĕлмелле. Тĕслĕхрен: *Вăл симĕс, вăрăм, тутлă. Пахчара ӳсет.*

д) «Тĕсне кала» вăйă.

Учитель *пан улми* тесе калать, ачасем унăн тĕсне калаççĕ: *сарă, симĕс, хĕрлĕ.*

Ытти тĕслĕхсем: *хурлăхан — хура, хĕрлĕ, шурă; крыжовник — симĕс, хĕрлĕ, хăмăр; слива — кăвак; пилеш — хĕрлĕ, хура, симĕс* т. ыт. те.

е) «Вĕçне кала» вăйă.

Ачасем учитель каланă хыççăн сăвăри юлашки сăмаха ушкăнпа хушса хураççĕ. Тĕслĕхрен:

*Сарă, хĕрлĕ пан улми*
*Çитĕнтернĕ ...* (улмуççи).

*Пирĕн Ванюк пит чее,*
*Çиет вăл тутлă ...* (чие).

# 32-мĕш урок

## Тема: Пирĕн ĕмĕтсем

***Урок тĕллевĕ:*** харпăр хăйĕн пулас вăхăтри ĕçĕсем, ĕмĕчĕсем çинчен калаçма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) пулас вăхăтри ĕçсем, ĕмĕтсем çинчен калаçтарасси; 3) лайăх шкул ачи пулас туйăма аталантарасси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем; *тепĕр çул, тавлашать, хăю, шăпланать, çĕкленет, пĕр вĕçĕм, сывлăш.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн пулас вăхăтри пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпат форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ĕçленĕ хыççăн пĕтĕмлетӳ тăваççĕ:

*Форма единственного числа 1-го лица глаголов будущего времени образуется прибавлением аффикса **-ăп(-ĕп)** к основе глагола.*

Пĕтĕмлетĕве тата çапла та тума юрать:

*Чтобы мне рассказать о своих будущих делах по-чувашски, нужно присоединить к основе глагола аффикс **-ăп(-ĕп)**.*

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем текста пĕтĕмĕшле харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, ăнланма тăрăшаççĕ. Кайран содержание вырăсла каласа параççĕ. Учитель ачасен вулавĕн ăнланулăхĕн шайне тĕрĕслет.

е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Урокра ачасем учительпе пĕрле ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, куçараççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Ваттисен сăмахĕсене вĕренсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 33—34-мĕш уроксем

### Тема: Пушă вăхăтра

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен пулас вăхăтри ĕçĕсем çинчен пуплеме вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри нумайлă хисепри пĕрремĕш сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) пулас вăхăтри ĕçсем, ĕмĕтсем çинчен калаçма вĕрентесси; 3) çуралнă кунпа саламлама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен пушă вăхăтĕнчи ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем; тăванлăх сăмахĕсем; *хӳтĕлекен, тапăнакан, çуралнă кун, чун, кулă, сĕнет, кĕреке, пӳремеч.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн пулас вăхăт, нумайлă хисеп, пĕрремĕш сăпат форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

Ачасем ваттисен сăмахĕсене каласа параççĕ, иртнĕ урокра тунă пĕтĕмлетĕве аса илеççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани. (Аудировани ĕçĕ.)

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем текста харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, ăнланма тăрăшаççĕ. Кайран содержание вырăсла каласа параççĕ. Учитель ачасен вулавĕн ăнланулăхĕн шайне тĕрĕслет.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем калава пĕр-пĕринпе хутшăнса хатĕрлеççĕ, малтан пĕр-пĕрне, кайран доска умне тухса каласа параççĕ.

Калава малтан пулас вăхăтри, кайран хальхи вăхăтри глаголсемпе усă курса калаттармалла.

ж) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

з) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.

и) Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçлани.

— Арçын ачан точкăсем вырăнне ***а*** е ***к*** çырнă шайбăсене лартмалла. Атьăр ăна пулăшатпăр, — тет учитель.

Ачасем ĕçе пурнăçлаççĕ, сăмахĕсене вырăсла куçараççĕ. Унтан вĕсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ. Тĕслĕхрен:

— *Эпир çулла дачăра аттепе аннене пулăшăпăр.*

й) «Астуса юл» вăйă.

1-мĕш ача: *Эпир хоккейла выльăпăр.*

2-мĕш ача (тепĕр вăйă ятне хушса калать): *Эпир хоккейла, футболла выльăпăр...*

3-мĕш ача (татах хушать): *Эпир хоккейла, футболла, кушакпа шăшилле выльăпăр...*

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 13-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 35-мĕш урок

## Тема: Пушă вăхăтра

***Урок тĕллевĕ:*** пулас вăхăтри ĕçсем çинчен глаголăн пĕрреллĕ хисеп, иккĕмĕш сăпат формипе усă курса калаçма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри пĕрреллĕ хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсен пулăвне ăнланса илме пулăшасси; 2) пулас вăхăтри пĕрреллĕ хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 3) пулас ĕçсем çинчен калаçма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен пушă вăхăтĕнчи ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн пулас вăхăт, пĕрреллĕ хисеп, иккĕмĕш сăпат форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

Ачасем куçарса килнĕ предложенисене вуласа параççĕ.

Учитель ачасене *пулăш*, *çи* глаголсене пулас вăхăтра *эпĕ, эпир* сăмахсемпе калаттарать, ачасем сăмахсен аффиксĕсене уйăраççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем диалога малтан харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ. Ун хыççăн учитель ачасем текста мĕнле ăнланнине ыйтусем парса тĕрĕслет:

— Кампа кам калаçаççĕ?

— Дима ыран мĕн тăвăп тет?

— Алеша мĕн тăвăп тет?

Кайран диалога сасăпа вулаççĕ.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Пĕтĕмлетӳ çапла пулма пултарать:

*Форма единственного числа 2-го лица глаголов будущего времени образуется прибавлением аффикса **-ăн(-ĕн)** к основе глагола.*

Пĕтĕмлетĕве тата çапла та тума юрать:

*Чтобы спросить у друга о его будущих делах или рассказать о делах друга в будущем времени на чувашском языке, нужно присоединить к основе глагола аффикс **-ăн(-ĕн)**.*

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем диалога пĕр-пĕринпе хутшăнса хатĕрлеççĕ, кайран доска умне тухса каласа параççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Ачасен килте уроксем хыççăн мĕн тума палăртни çинчен пулас вăхăт формипе усă курса каласа пама хатĕрленсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 36-мĕш урок

### Тема: Пушă вăхăтра

***Урок тĕллевĕ:*** пулас вăхăтри ĕçсем çинчен нумайлă хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсемпе усă курса калаçма-хутшăнма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри нумайлă хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) пулас ĕçсем çинчен калаçма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен пушă вăхăтĕнчи ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн пулас вăхăт нумайлă хисепри иккĕмĕш сăпат форми.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

Ачасем уроксем хыççăнхи хăйсен ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ, пĕр-пĕрне итлеççĕ. Кайран мĕн илтнине сăпатне улăштарса (*эсĕ* сăмахпа) калаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Сăвăпа ĕçленĕ хыççăн учитель ачасене пурне те çапла калать:

— Ачасем, тăрăшса вĕренĕр. Ӳссен вара эсир лайăх çынсем пулăр.

Учитель каланă май предложенисем экран çине тухсан аван (е вĕсене урок пуçланиччен доска çине çырса хумалла).

Ачасем учитель сăмахĕсене вырăсла куçараççĕ:

— *Ребята, учитесь старательно. Тогда вы, когда вырастите, будете хорошими людьми.*

Куçараймасан учитель ачасене пулăшать. Малалла çапла ĕçлет:

— Как будет по-чувашски ***вы будете****?*

Ачасем чăвашла предложенире тупса калаççĕ: *Эсир пулăр.*

Учитель пĕтĕмлетсе калать:

*Форма множественного числа 2-го лица глаголов будущего времени образуется прибавлением аффикса* ***-ăр(-ĕр)*** *к основе глагола.*

Учитель ачасене доска (е экран) çинчи предложенисене тепĕр хут вулама хушать, ***-ăр(-ĕр)*** аффикс хушăннă тата тепĕр глагола тупма ыйтать. Ачасем сăмаха тупса местоименипе пĕрле калаççĕ: *эсир вĕренĕр.* Унтан вырăсла куçараççĕ: *вы учитесь.*

Çапла ĕçленĕ хыççăн кĕнекере панă пĕтĕмлетĕве вулаççĕ.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем текста харпăр хăй тĕллĕн çурма сасăпа вулаççĕ, кайран

содержание вырăсла каласа параççĕ. Унтан *мĕн тăвăр?* ыйтури глаголсене тупаççĕ, вĕсене вырăсла куçараççĕ, мĕнле тĕллевпе усă курнине кĕнекери пĕтĕмлетӳпе усă курса калаççĕ.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ыйтăвĕсем çапла пулма пултараççĕ:

*Миçе виçкĕтеслĕх (тăваткĕтеслĕх)?*

*Виçкĕтеслĕхсем (тăваткĕтеслĕхсем) мĕн-мĕн тĕслĕ?*

*Миçе хĕрлĕ (сарă, шурă, симĕс, кăвак, хăмăр, хура) виçкĕтеслĕх (тăваткĕтеслĕх)?*

ĕ) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ваттисен сăмахне вĕренсе килмелле. Текстпа тата тĕслĕхсемпе усă курса чăваш тĕрри ӳкерсе килмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 37—38-мĕш уроксем

### Тема: Пушă вăхăтра

***Урок тĕллевĕ:*** пулас вăхăтри ĕçсем çинчен глаголăн виççĕмĕш сăпат, пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп формисемпе калаçура тĕрĕс усă курма вĕрентесси, ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) пулас вăхăтри ĕçсем çинчен калаçма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен пушă вăхăтĕнчи ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** пулас вăхăтри глаголăн пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп, виççĕмĕш сăпат формиы.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** схемăсем, чăваш тĕрри-эрешĕ, Е.Н. Жачева тĕрĕçĕн фотоӳкерчĕкĕ.

#### ***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

Ачасем килте хатĕрлесе килнĕ тĕрĕсене пĕр-пĕрне кăтартаççĕ, вĕсем çинчен каласа параççĕ. Унтан учитель экран çине чăваш тĕррисене кăларать, Е.Н. Жачева çинчен каласа парать, ыйтусем парса калаçтарать. Юлашкинчен иртнĕ урокра вĕреннĕ материала аудировани шайĕнче тĕрĕслет. Пĕтĕмлетсе çапла калать:

— Ачасем, тĕрĕ кружокне çӳрĕр, чăваш тĕррисене тĕрлеме вĕренĕр. Вара эсир те ӳссен Евгения Николаевна Жачева пек паллă тĕрĕçĕ пулăр.

Ачасем предложенисене вырăсла куçараççĕ. Чи кирли — аффикссен пĕлтерĕшне тĕрĕс куçарма пултарни.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3—6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

г) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Текстпа ачасем харпăр хăй тĕллĕн вуласа паллашаççĕ, аффикссене пăхса ĕçсем хăш вăхăтра пулнине калаççĕ, унтан содержание вырăсла калаççĕ.

е) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçлани.

з) Кĕнекери 13-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель ачасене ӳкерчĕксене сăнама хушать, калаври тĕп сăнарсем камсем, калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле пулма пултарнине ыйтать. Унтан тĕп сăмахсене тĕп сăнарсем тавра пуçтараççĕ (кластер тăваççĕ):

| *Эпĕ* | *Анне* |
|---|---|
| таврăнăп | таврăнĕ, савăнĕ |
| тумтир улăштарăп | апат çиĕ |
| апат çиĕп | тав тăвĕ |
| ... | ... |

Сăмахсемпе анлă предложенисем тăваççĕ, калав йĕркелеççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 14-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 39-мĕш урок

### Тема: Ватă çынсене хисепле

***Урок тĕллевĕ:*** иртнĕ ĕçсем çинчен иртнĕ причасти формипе усă курса каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) иртнĕ причасти формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) ваттисене хисеплеме вĕрентесси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем; *вăратать, ыйхă, шуса ӳкнĕ, палланă, пăрлак, пултаруллă, сăмахлать.*

***Грамматика материалĕ:*** иртнĕ причасти форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**
**2. Пуплев зарядки.**
**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**
**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**
а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.
ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.
б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.
в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.
г) Кĕнекери 3—7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.
д) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.
е) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.
**5. Киле ĕç.**
Ваттисен сăмахĕсене, сăвва пăхмасăр калама вĕренсе килмелле.
**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**
**7. Ĕçе хаклани.**
Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.
**8. Урока вĕçлени.**

## 40—41-мĕш уроксем

### Тема: Шанчăклă юлташ

***Урок тĕллевĕ:*** хисеп ячĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси, ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) шут тата йĕрке хисеп ячĕсемпе япала ячĕсен çыхăнăвне аса илтересси; хисеп ячĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) тĕрлĕ вăхăтри глаголсемпе пуплевре усă курса тус-юлташ çинчен калаçтарасси.

***Лексика материалĕ:*** хисеп ячĕсем; ачасен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем; *ăнлантарать, шанчăклă, тăрмашать, хускалать, лăскать, туртать, тапранать, вырăнтан, шутлайман, парăнать, пулăшу, çырса ил.*

***Грамматика материалĕ:*** йĕрке тата шут хисеп ячĕсемпе япала ячĕсен çыхăнăвĕ. Инфинитив.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

а) Киле панă ĕçе «Чи маттур калавçă» конкурс ирттерсе тĕрĕслеме пулать. Кайран ушкăнпа чи маттуррине (е маттуррисене) палăртаççĕ.

ă) *Ту, çи* глаголсене пулас вăхăтра пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре пурлă тата çуклă формăра сăпатлани.

Икĕ ача ĕçе доска çине çырса пурнăçлаççĕ, ыттисем — тетрадьсенче. Кайран тĕрĕслеççĕ, предложенисем тупаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани. (Аудировани ĕçĕ.)

Кайран ачасем сăмахсене вуласа сăнарсене тупаççĕ.

Учитель ачасене çарăк ӳкерчĕкне кăтартать, ăна чăвашла калаттарать. «Çарăк» юмаха аса илеççĕ, маскăсем тăхăнса юмаха рольсемпе вылясан питĕ аван.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель ачасем кĕнекесене уçиччен аудировани ĕçĕ туса ирттерет: чăвашла калать, ачасем вăл каланине вырăсла куçараççĕ:

— *Один, одна парта, первая парта; восемь, восемь машин, восьмая машина.*

Ачасем куçарнă май правилăсене аса илеççĕ.

Çапла ĕçленĕ хыççăн 5-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 42—43-мĕш уроксем

### Тема: Шанчăклă юлташ

***Урок тĕллевĕ:*** тĕрлĕ вăхăтри глаголсемпе усă курса ачасен туслăхпа çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) текстран глаголсене уйăрса илме, вĕсене тĕрлĕ формăна лартса пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) туслăх туйăмне аталантарасси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăмахсем; *темшĕн, шăхăрать, иккен, çил ачи, йыхăрать.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ вăхăт формисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

а) Киле панă ĕçе иртнĕ урокри пекех «Чи маттур калавçă» конкурс ирттерсе тĕрĕслеме пулать. Пĕр ача хатĕрлесе килнĕ калавне доска умне тухса каласа парать. Класри ытти ачасем ăна итлеççĕ (аудировани), унтан итленĕ калав тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем парса калаçаççĕ. Тĕслĕхрен:

— *Дима, Сашăн юлташĕ мĕн ятлă?*

— *Катя, Сашăн юлташĕ миçемĕш класра вĕренет?*

— ...

ă) Ачасем пĕчĕк сăвă калама вĕренеççĕ. Малтан учитель сăвва хăй каласа парать:

Акă пирĕн ачасем,
Пĕчĕкренех маттурсем:
Пĕрремĕш — Саша,
Иккĕмĕш — Таня,
Виççĕмĕш — Витя,
Тăваттăмĕш — ...,
Пиллĕкмĕш — ...,
Улттăмĕш — ...,

Çиччĕмĕш — ...,
Саккăрмĕш — ...,

Тăххăрмĕш — ...,
Вуннăмĕш — ...
...
Пурте харăс утар!

Кайран сăвва ачасем учительпе пĕрле калаççĕ. Йĕрке хисеп ячĕсене пурте пĕрле, хăйсен ячĕсене пĕрерĕн йĕркипе асăнаççĕ.

Ку сăвăпа усă курса уроксенче физкультура саманчĕ йĕркелеме юрать.

б) «Хушнине пурнăçла та кала» вăййă. Вĕрентекен ăна çапла ирттерет: ачасене ĕç хушать, лешсем пурнăçлаççĕ те мĕн тунине калаççĕ. Учитель *умне, патне* сăмахсене ăнланнине тĕрĕслет:

— Вова, доска умне тух.

— *Эпĕ доска умне тухрăм.*

— Саша, алăк патне пыр.

— *Эпĕ алăк патне пыратăп.*

Учитель *сĕтел, парта, чӳрече, шкап, пукан* сăмахсемпе çавăн пекех ĕçлеме пултарать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— сăвва ачасем вулаççĕ;

— ыйтусене хуравланă май сăвă содержанине хăйсен сăмахĕсемпе вырăсла каласа параççĕ.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель ачасене ыйтусем парса ĕçлеттерет:

— Как ты определяешь глаголы? Что ты делаешь?

Ачасен кашни шухăша çирĕплетме пĕлмелле. Тĕслĕхрен, *«Определяю по смыслу»* тенине ача çапла çирĕплетме пултарать:

— *Ищу слово, которое обозначает действие, потому что глаголы обозначают действия предметов.*

*«Определяю по аффиксу»* тенине вара хăй пĕлекен глагол аффиксĕсене каласа çирĕплетме пултарать.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

з) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

и) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 44—45-мĕш уроксем

### Тема: Хĕл çитрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** хĕллехи ĕçсем çинчен хальхи тата пулас вăхăтри глаголсемпе усă курса каласа пама вĕрентесси, ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи тата пулас вăхăтри глаголсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) «Хĕлле» темăпа калаçма кирлĕ сăмахсене, халиччен вĕреннĕ кайăк ячĕсене аса илсе çĕннисемпе паллаштарасси; 3) хĕлле кайăксене пулăшмалли çинчен аса илтересси, ун çинчен пуплеттерессси.

***Лексика материалĕ:*** «Хĕлле» темăпа калаçма кирлĕ сăмахсем; кайăк ячĕсем; *йĕр хывать, кăпăшка, çывăхра, аякран, сиккелет, пĕсехе, пӳрт-çурт, кĕтеççĕ.*

***Грамматика материалĕ:*** пулас вăхăтри глаголсем, япала ячĕсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

Ачасем çут çанталăкри хĕллехи пулăмсене сăнаççĕ, çанталăка сăнласа параççĕ. Учитель ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет.

**3. Киле pană ĕçе тĕрĕслени. Вĕреннине аса илни.**

а) Киле панă ĕçе тĕрĕсленĕ хыççăн учитель схемăсемпе усă курса (доска çине çакмалла е экран çине кăлармалла) «Хĕлле» темăпа вĕреннĕ сăмахсене аса илтерет. Ачасем «Хĕлле» темăпа çыхăннă япала ячĕсене, глаголсене, паллă ячĕсене тупаççĕ, предложенисем тăваççĕ.

ă) «Ан ман» вăйă.

Доска умне 7—8 ача тухса тăраççĕ. Вĕсен вĕçе-вĕçĕн «Хĕлле» темăпа калаçма кирлĕ сăмахсене каламалла. Пĕрремĕш ача *хĕлле* тет. Иккĕмĕш пĕрремĕш ача каланă сăмаха калать те çĕнĕ сăмах хушса хурать: *хĕлле, сивĕ.* Виççĕмĕшĕ — пĕрремĕшпе иккĕмĕш ача калани çумне тепĕр сăмах хушать. Малалла та çавăн пек выляççĕ.

Юлашки ача малтан каланӑ сӑмахсене пурне те калать те хӑйӗнне хушса хурать. Калайман е малтанхи сӑмахсене манса каякан ача вӑйӑран тухать.

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) Урок темине, тӗллевӗсене пӗлтерни.

ӑ) Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Йытӑ ӑрачӗсен ячӗсене аса илсен аван.

б) Кӗнекери 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

в) Кӗнекери 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

г) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

д) Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

е) Кӗнекери 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасене вырӑсла-чӑвашла словарь памалла, словарьпе ӗҫлеме хӑнӑхтармалла. Кайӑк ячӗсене чӑвашла куҫарсан ачасене пӗр-пӗр кайӑкне суйласа илсе сӑнласа пама хатӗрленме хушмалла. Сӑнлава ачасем малтан пӗр-пӗрне каласа параҫҫӗ, кайран — пӗтӗм класа.

ё) Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

ӗ) Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

ж) Кӗнекери 9-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

з) Кӗнекери 10-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

**5. Киле ӗҫ.**

Кӗнекери 11-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**6. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени, вӗреннине ҫирӗплетни.**

**7. Ӗҫе хаклани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем хӑйсен ӗҫне хакласҫӗ, унтан вӗсен ӗҫне учитель хаклать.

**8. Урока вӗҫлени.**

## 46-мӗш урок

## Тема: Хӗлле

***Урок тӗллевӗ:*** калаҫура *камран? мӗнрен?* ыйтусене хуравлама вӗрентесси, ачасен хӗлпе ҫыхӑннӑ чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *камран? мӗнрен?* ыйтусенчи япала ячӗсемпе пуплевре усӑ курма вӗрентесси; 2) иртнӗ причасти формисемпе пуплевре усӑ курма хӑнӑхтарасси; 3) ачасене хӑйсен хӗллехи ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен пуплеттересси.

***Лексика материалӗ:*** ачасен хӗллехи ӗҫӗ-хӗлне пӗлтерекен сӑмахсем; *кӑмрӑк, улӑм, турат, чӑмӑркка.*

***Грамматика материалӗ:*** иртнӗ причастин пурлӑ тата ҫуклӑ формисем; *камран? мӗнрен?* ыйтусенчи япала ячӗсем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

«Ан ман» вăййă.

Доска умне 7—8 ача тухаççĕ. Вĕсен вĕçе-вĕçĕн кайăк ячĕсене каламалла. Юлашки ача малтан каланă сăмахсене пурне те калать те хăйĕнне хушса хурать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани. (Аудировани ĕçĕ.)

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4—6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

д) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 47-мĕш урок

## Тема: Хĕлле

***Урок тĕллевĕ:*** глаголсен тĕрлĕ формипе усă курса ачасен хĕллепе çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хĕллехи уйăх ячĕсене аса илесси; 2) хĕллехи ĕçсем çинчен глаголăн хальхи тата пулас вăхăт формисемпе каласа пама хăнăхтарасси; 3) Çĕнĕ çул уявне хатĕрленни çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** хĕллехи çанталăка сăнласа пама тата ачасен хĕллехи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама кирлĕ сăмахсем; *чĕпĕтет, хуçаланать, çил-тăман, тăм илни, варри, кĕпер, сыхлан, хулăнланать.*

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕпе паллă ячĕн çыхăнăвĕ, хальхи, пулас вăхăтри глаголсен тата иртнĕ причастисен пурлă тата çуклă формисем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Маларах вĕреннĕ сăвăсене калаттармалла. Вĕсене ачасем иртнĕ урокри пекех пурте пĕрле калаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Малтан учитель ачасене юр кĕлетке ӳкерчĕкне кăтартать. Ăна, унăн сăмсине, куçĕсене, тутине, аллисене мĕнрен тунине ыйтать. Кайран, ыйтусене хуравланă хыççăн, пĕтĕмĕшле текст тăваççĕ.

Иртнĕ причасти формипе тĕрĕс усă курма вĕрентни, хăнăхăва çирĕплетсе хăварни.

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

«Хĕлле» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 48—49-мĕш уроксем

### Тема: Килсе çитрĕ Хĕл Мучи

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен Çĕнĕ çулпа çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Хĕл Мучи патне çыру çырма вĕрентесси; 2) Çĕнĕ çул çинчен çырнă сăвăсене илемлĕ вулама вĕрентесси; 3) Çĕнĕ çул уявне хатĕрленни çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** Çĕнĕ çул уявне хатĕрленни çинчен каласа пама кирлĕ сăмахсем; пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем; *хĕпĕртет, тем чухлех, çу каçать, кермен, çуран, хăварать, капăр, çурçĕр, ĕлкĕрет.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголсен хальхи, иртнĕ тата пулас вăхăт формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Ачасем килте вĕреннĕ сăвва пăхмасăр каласа параççĕ.

ă) Маларах вĕреннĕ сăвăсене пурте пĕрле калаççĕ. (Суйласа илсе калаттарма юрать.)

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Учитель ачасене предложенисем калать (аудировани ĕçĕ):

— Йывăçсем шап-шурă. Тураттисем кĕмĕл пек курăнаççĕ. Çуртсем те шурă тум тăхăннă. Кантăк çинче тĕрĕсем. Кам илемлетнĕ вĕсене?

Ачасем ыйтăва чăвашла тӳрех хуравлаймасан вырăсла хуравлама пултараççĕ, унтан *Дед Мороз* чăвашла *Хĕл Мучи* пулнине калаççĕ.

Учитель ачасене сăвва вĕçлеме ыйтать:

Савăнать ачи-пăчи,
Кĕçех çи.. ... (Хĕл Мучи).

Ачасен глагола кирлĕ формăра лартмалла тата юлашки сăмахне пĕлмелле. Кайран ачасем Хĕл Мучие кĕтни, елкăна хатĕрленни (сăвă-юрă вĕренни, ташлани, теттесем касса кăларни) çинчен калаççĕ.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— мĕн тумаллине вулаççĕ;

— сăвва учитель вуласа е каласа парать, ачасем итлеççĕ;

— ачасем сăввăн содержанине хăйсен сăмахĕсемпе каласа параççĕ;

— сăвва пурте пĕрле сасăпа вулаççĕ;

— сăвва пĕчченшерĕн сасăпа вулаççĕ.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçре панă ыйтусене хуравлани.

Малтан ачасене кĕнекере панă ӳкерчĕке сăнама хушмалла, ыйтусене хуравланă чух сăвăри сăмахсемпе усă курма юранине каламалла. 1-мĕш ыйтăва анлăн хуравлаттармалла. Ачасене тӳрех анлă хуравсем пама йывăр пулсан доска çине (е экран çине) предложени пуçламăшĕсене çырса памалла:

Хĕл Мучи пуçне ... .

Хĕл Мучи аллине ... .

Хĕл Мучи урине ... .

Хĕл Мучи çине ... .

г) 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ĕç йĕрки:
— мĕн тумаллине вулаççĕ;
— çырăва вулаççĕ, куçараççĕ;
— Хĕл Мучирен мĕнле парне кĕтнине малтан пĕр-пĕрне калаççĕ, кайран çырса хураççĕ;
— хăйсен çырăвĕсене вуласа параççĕ.
д) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.
е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:
— мĕн тумаллине вулаççĕ;
— сăвва учитель вуласа е каласа, е юрласа парать;
— ачасем сăввăн содержанине хăйсен сăмахĕсемпе каласа параççĕ;
— сăвва пурте пĕрле сасăпа вулаççĕ;
— сăвва пĕччĕншерĕн сасăпа вулаççĕ;
— сăвва ярăмăн-ярăмăн пăхмасăр вĕренеççĕ;
— юрлама вĕренеççĕ.
ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ж) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.
з) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

«Савăнăçлă елка» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 50—51-мĕш уроксем

### Тема: Хĕлле

***Урок тĕллевĕ:*** *ăçта? ăçтан?* ыйтусенчи сăмахсемпе усă курса ачасен хĕлпе çыхăннă чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *ăçта? ăçтан?* ыйтусене хуравлама хăнăхтарасси; 2) хĕллехи ĕçсем, Çĕнĕ çул уявне мĕнле ирттерни çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** ачасен хĕллехи ĕçĕ-хĕлне пĕлтерекен сăмахсем; *инçе мар, пурпĕрех, çапăнать, илĕртет, шăпăр, улпут, пушă, кĕлет, кӳлтĕм, пĕрене.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн хальхи тата пулас вăхăт формисем; *ăçта?* (где?), *ăçта?* (куда?), *ăçтан?* (откуда?) ыйтусем.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Сăвва пăхмасăр калаççĕ.

ă) Маларах вĕреннĕ сăвăсене пурте пĕрле калаççĕ.

б) Урокра учитель ачасем çыхăнуллă каласа пама пĕлнине тĕрĕслет. Вăл вĕреннĕ темăсемпе ӳкерчĕксем валеçсе парать. Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ, калав тăваççĕ. Вĕрентекен малтан чăвашла лайăхрах калаçакан ачасенчен ыйтать. Çак ачасем ăна ыттисене тĕрĕслеме пулăшаççĕ. Çапла майпа кĕске вăхăт хушшинче пурне те тĕрĕслеççĕ. Ачасен хуравĕсенче предложенири сăмах йĕрки çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

в) Чăвашла пуплеве итлесе тăнлама пĕлнине тĕрĕслес тĕллевпе учитель ачасене текст вуласа парать, вĕренекенсен вара çав текст содержанине вырăсла çырса кăтартмалла.

### Тĕслĕхшĕн панă текстсем:

ТУССЕМ

Кольăпа Алеша — манăн туссем. Эпир шкулта пĕрле вĕренетпĕр. Уроксем хыççăн та яланах пĕрле библиотекăна çӳретпĕр, йĕлтĕрпе ярăнатпăр. Киле панă ĕçсене те пĕрлех тăватпăр.

ХĔЛЛЕ

Кĕçех сивĕ хĕл çитĕ. Юр çăвĕ. Уйсем, хирсем шап-шурă пулĕç.
Ачасем тăвайккинчен çунашкапа, йĕлтĕрпе ярăнĕç.
Мĕнле аван хĕлле!

КАМПУР

Кампур пӳрт умĕнче выртнă. Унăн ури ыратнă.

Дима Кампурăн урине бинтпа чĕркесе çыхнă. Кампурăн ури кĕçех ыратма чарăннă.

г) Вулав хăнăхăвне тĕрĕслени.

Кĕнекере панă текстсемпе усă курма юрать. Вулав хăнăхăвне программăра панă схемăпа усă курса тĕрĕслемелле.

**4. Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.**

а) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ă) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.
д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.
е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ё) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ĕ) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.
ж) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.
з) Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни, тĕрĕслени.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 52-мĕш урок

### Тема: Ӳссен эсĕ кам пулан?

***Урок тĕллевĕ:*** хальхи тата пулас вăхăтсенчи глаголсемпе тата тĕрлĕ профессипе çыхăннă сăмахсемпе усă курса пуплеве пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пуласлăх çинчен глаголăн хальхи вăхăт формипе усă курса калаçма вĕрентесси; 2) халиччен вĕреннĕ професси ячĕсене аса илесси; 3) тĕрлĕ професси çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** тĕрлĕ профессипе çыхăннă сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн хальхи тата пулас вăхăт формисем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** тĕрлĕ профессие сăнлакан ӳкерчĕксем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Вĕрентекен ӳкерчĕксем (слайдсем) кăтартать. Профессисем çинчен калаçтарать.

«Пĕл, мĕнле професси» вăййа выляни.

Ача хăй пĕлекен професси çинчен калать, ыттисен вăл мĕн çинчен каланине пĕлмелле, ӳкерчĕкне кăтартмалла.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2—6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

в) «Ӳссен эсĕ кам пулан?» диалог туни.

— *Сывлăх сунатăп, Саша.*

— *Ырă кун, Вова.*

— *Эсĕ мĕнле вĕренетĕн?*

— *Эпĕ аван вĕренетĕп.*

— *Саша, ӳссен эсĕ кам пулатăн?*

— *Ӳссен эпĕ инженер пулатăп.*

г) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем малтан Миша шухăшне, унтан хăйсен шухăшĕсене калаççĕ.

— *Эпĕ конькипе, йĕлтĕрпе ярăнма, футболла выляма, шыва кĕме, чупма, сикме юрататăп. Эпĕ кам пулăп-ши: футболист, йĕлтĕрçĕ, чупуçă, ишекен, конькипе чупакан? Эпĕ футболла выляма питĕ юрататăп. Кашни кун футболла вылятăп. Эпĕ футболист пулăп.*

д) Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

«Пур професси те пит лайăх, суйласа илме çеç пĕл» предложение доска çинчен вулаттарни, куçарни, калаçу йĕркелени.

Пурнăçра пур ĕç те кирли çинчен калаçни.

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

«Ӳссен эсĕ кам пулан?» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 53—54-мĕш уроксем

### Тема: Вĕрентӳçĕ

***Урок тĕллевĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен формисене, тĕрлĕ профессие пĕлтерекен сăмахсене тĕрĕс усă курса ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) аффикссем хушса тĕрлĕ профессие пĕлтерекен сăмахсем тума, вĕсене ытти сăмахсен хушшинче уйăрса илме хăнăхтарасси; 2) хальхи вăхăтри глаголсен ***-ай-(-ей-)*** аффикс хушăнса пулнă формипе паллаштарасси, ку формăри глаголсене ачасен пуплевне кĕртесси; 3) тĕрлĕ професси çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** тĕрлĕ профессипе çыхăннă сăмахсем; *тĕлĕк, кăшт, улталать, тĕттĕм, çул çӳрет, тинĕс, суять, çапах та.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн хальхи вăхăт формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Ачасем професси ячĕсене мĕнле астуса юлнине тĕрĕслени.

ă) Учитель тĕрлĕ профессипе çыхăннă ӳкерчĕксем (слайдсем) кăтартать, ыйтусем парать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни

ă) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 4—6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Доска çине сăмахсем çырнă. Ачасем вĕсене вулаççĕ, куçараççĕ, сăмахсем мĕнле пулнине сăнаççĕ, юлашкисенчен çĕнĕ сăмахсем тăваççĕ.

С ă м а х с е м:

| | |
|---|---|
| *вĕрентӳ — вĕрентӳ<u>çĕ</u>* | *пахча — пахча<u>çă</u>* |
| *чӳлмек — чӳлмек<u>çĕ</u>* | *атă — атă<u>çă</u>* |
| *йĕлтĕр — йĕлтĕр..* | *пулă — пулă..* |
| *тĕрĕ — тĕрĕ..* | *ăста — ăста..* |

в) «Кам вăл?» сăвăпа ĕçлени:

— учитель вулани;

— сăвă кам çинчен пулнине пĕлни;

— ыйтусемпе ĕçлени;

— шкул çинчен пĕчĕк калав туни.

КАМ ВĂЛ?

Кам пире шкула пырсассăн
Тĕрлĕ ăса вĕрентет?
Кунсерен пире хавассăн
Кăмăлпа кĕтсе илет?

Кам пире тĕрĕс çырмашкăн,
Вуламашкăн вĕрентет?
Эпир лайăх вĕреннишĕн
Камăн чунĕ хĕпĕртет?

Ушкăн-ушкăн вăйăсенче
Кам пире ертсе пырать?
Юрлама та, ташлама та,
Ĕçлеме те ăс парать?

*А. Çулĕç*

— Сăвăра кам çинчен çырнă? Эсир ăçта вĕренетĕр? Сире шкулта кам вĕрентет? Эсир шкулта мĕн тăватăр? Сире кам çырма, вулама, задачăсем шутлама, ӳкерме вĕрентет?

г) Ачасем шкул çинчен пĕчĕк калав тăваççĕ.

Т ĕ с л ĕ х:

*Эпĕ виççĕмĕш класра вĕренетĕп. Пире Роза Ивановна вĕрентет. Эпир шкулта вулатпăр, çыратпăр, задачăсем шутлатпăр, чăвашла калаçатпăр.*

д) «Вĕрентӳçĕ пурне те пĕлет» калавпа ĕçлени:

— фонохрестоматипе усă курса калава итлени;

— ăнланман сăмахсемпе ĕçлени;

— учитель ыйтусем парса ачасем калава мĕнле ăнланнине тĕрĕслет:

— Мишăн юлташĕ кам? Мĕншĕн Миша урокне тăвайман? Учитель Мишăпа Энтри урок туманнине ăçтан пĕлнĕ?

— ачасем калава хăйсем тĕллĕн вуласа рольсемпе вулама миçе çын кирлине шутлаççĕ;

— калава рольсемпе вулаççĕ, содержани тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ.

е) Кĕнекери 8—9-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Чăвашла предложенисенчи сăмахсен йĕрки çинчен аса илни.

Ачасем предложенисене вулаççĕ, чăвашла куçараççĕ.

**5. Киле ĕç.**

«Обрати внимание!» асăрхаттарура çырнине астуса юлмалла, текстран çавăн йышши сăмахлă предложенисене çырса илмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 55-мĕш урок

### Т е м а: Ӳссен эсĕ кам пулан?

***Урок тĕллевĕ:*** япала ячĕсенчен ***-ла(-ле), -лла(-лле)*** аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем тума, урокри ĕçсем çинчен çырнă текстсем тăрăх ыйтусем пама, вĕсене хуравлама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсем çумне ***-ла(-ле), -лла(-лле)*** аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем тума, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) физкультура урокне сăнлакан ӳкерчĕк тăрăх ыйтусене хуравласа çыхăнуллă калав тăвасси; 3) тĕрлĕ уроксем

çинчен çырнă текстсен содержанийĕ тăрăх ыйтусем пама, хуравлама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** *çивĕч, хастар, çирĕп сывлăхлă.*

***Грамматика материалĕ:*** глаголсен сăпатланăвĕ.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** «Физкультура урокĕнче» ӳкерчĕк.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

Учитель ачасене выляттарать. Ачасем тĕрлĕ аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем тума пулнине аса илеççĕ. Вĕрентекен сăмахсем калать, ачасем аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем тăваççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

б) Кĕнекери 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— ачасем ***-ла(-ле), -лла(-лле)*** аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ, çак аффиксăн пĕлтерĕшне ăнланаççĕ, схемăна ăнлантараççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;

— çĕнĕ сăмахсем тума хăнăхтарни.

Доска çинче:

хоккей — ... лаша — ...
мечĕк — ... тухтăр — ...
пукане — ... шкул — ...

в) Физзарядка.

Пĕр ача чăвашла каласа ачасене тĕрлĕ хусканусем тутарать (3—4 хускану).

— *Тăрăр! Чупăр! Сикĕр! Ишĕр! Вĕçĕр! Ларăр!*

Унтан учитель ачасене сăвă каласа хусканусем тума вĕрентет.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă.
Пирĕн пысăк пулмалла.
Физзарядка, физзарядка,
Физзарядка тумалла.

— Сире çакăн пек хусканусем тума кам вĕрентет? *(Вĕрентӳçĕ.)* Эсир мĕнле урокра хусканусем нумай тăватăр? Сире физкультура урокĕнче кам вĕрентет? Физкультура урокĕ сире килĕшет-и? Мĕншĕн? Ку урокра мĕнле вăйăсем вылятăр? (Кĕнекери ӳкерчĕкпе, доска çине çакса панă картинăпа е слайдпа усă курмалла.) Ку урок сире мĕнле пулма пулăшать? *(Вăйлă, маттур, сывлăхлă.)*

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани. Текстпа ĕçлени.

Малтан учитель вулать, ăнланман сăмахсене ăнлантарать, унтан текста ачасем хăйсем тĕллĕн вуласа тухаççĕ, ăнланман сăмахсемпе ĕçлеççĕ.

Пĕр-пĕрне текст содержанийĕ тăрăх ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ е хуравне текстра тупса вулаççĕ.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Текста ача хăй ячĕпе вулас тесен предложенисенче мĕнле сăмахсене улăштармалла тата мĕнле улăштармалли пирки калаçса татăлаççĕ, доска çине схемине ӳкереççĕ.

| Эпĕ | -атăп(-етĕп) |
| --- | --- |

е) Ыйтусене хуравласа çырни.

Ыйтăвĕсене доска çине çырмалла. Хуравланă чух кирлĕ сăмахсене памалла.

— Эсĕ миçе çулта? Эсĕ ăçта вĕренетĕн? Эсĕ шкулта мĕн тăватăн? Физкультура урокĕнче мĕн тăватăн?

Хуравлама кирлĕ сăмахсем: *шкулта, çыратăп, тăхăр, вылятăп, вулатăп, чупатăп, сикетĕп, ӳкеретĕп, юрлатăп.*

ё) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем ӳкерчĕк тăрăх çыхăнуллă калав тăваççĕ, текстпа усă кураççĕ.

ĕ) Кĕнекери 8—10-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр çырнă хыççăн пĕр-пĕрин ĕçĕсене кĕнекепе тĕрĕслеççĕ, хаклаççĕ. Мĕнле хакламаллине тĕрĕслес умĕн калаçса татăлаççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла, шут сăввине пăхмасăр вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

Класра ачасем шут сăввине вулаççĕ, Ю. Гагарин, Г. Титов, А. Николаев, В. Соколов кам пулни çинчен калаçаççĕ.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 56-мĕш урок

### Тема: Тухтăр

***Урок тĕллевĕ:*** *камсăр? мĕнсĕр?* ыйтусенчи сăмахсене тухтăр çинчен пулленĕ чухне усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *камсăр? мĕнсĕр?* ыйтусенчи япала ячĕсем

мĕнле пулнине ăнлантарасси, вĕсене пуплеве кĕртесси; 2) ачасене сывлăх ҫинчен калаҫтарасси; 3) кĕнекери материалпа ĕҫленĕ май ачасене тирпейлĕ пулма, сывлăха упрама, ăна ҫирĕплетме кирлине вĕрентесси, ун ҫинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** *наян, хастар, сывлăх, ҫирĕплет, хисепле, хура, тасат, якат, чĕрне, чирле.*

***Грамматика материалĕ:*** *камсăр? мĕнсĕр?* ыйтусенчи япала ячĕсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** тухтăр ĕҫне сăнлакан ӳкерчĕксем е слайдсем, фонохрестомати.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕҫе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Киле панă ĕҫе тĕрĕслени. Малтан вĕреннĕ професси ячĕсене аса илни.

ă) Учитель ачасене ӳкерчĕксем валеҫсе парать. Ачасем ҫав ӳкерчĕксем тăрăх тĕрлĕ професси ҫинчен калавсем тăваҫҫĕ. Малтан парта хушшинче пĕр-пĕрне каласа параҫҫĕ, кайран доска умне тухаҫҫĕ.

**4. Ҫĕнĕ материалпа ĕҫлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Калаҫăва учитель пĕчĕк сăвăпа пуҫлать, юлашки сăмахсене каламасть. Ачасем вĕҫлеҫҫĕ:

*Алă ҫăвăр, шăл тасатăр —*
*Вĕрентет пире шав — ... (тухтăр).*

Ачасем ҫав сăмаха тупса калаймаҫҫĕ пулсан учитель ӳкерчĕк кăтартать те калать:

— Паян эпир тухтăр патĕнче пулăпăр, вăл вĕрентнине, хушнине итлĕпĕр.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.

Словарь ĕҫĕ. Ҫĕнĕ сăмахсене доска ҫине ҫырса ĕҫлемелле.

Учитель сăвва фонохрестоматипе усă курса итлеттерет, тĕрлĕ майлă вулаттарать, куҫарттарать, ыйтусем парса калаҫтарать, Ванюка ӳкерчĕкри ачапа танлаштарттарать.

— Сĕтел хушшинче кам ларать? Ун умĕнче мĕнле ача тăрать? Ванюк мĕнле ача?

б) Кĕнекери 3—5-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.

Ачасем схемăсене ăнлантараҫҫĕ. Аффикссем хушса ҫĕнĕ сăмахсем тăваҫҫĕ, вырăсла куҫараҫҫĕ.

в) Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.

Ачасем куҫарнӑ предложенисене доска ҫине ҫыраҫҫӗ, сӑмахсене йӑнӑш ҫырасран асӑрхаттараҫҫӗ, унтан тетраде ҫырса хураҫҫӗ.

г) Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

д) Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени.

е) Кӗнекери 9-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

ё) В. Давыдов-Анатрин «Санюк», М. Волковӑн «Мӗншӗн тетӗр эп патвар?» сӑввисемпе, «Хӑвна ху таса тыт — сывлӑхлӑ пулӑн» сӑмахсемпе усӑ курса калаҫу йӗркелемелле.

### САНЮК

Пирӗн пӗчӗк Санюк пур,
Вӑл хӑй вара пит маттур:
Ирех тӑрать,
Тумланать,
Питне супӑньпе ҫӑвать,
Апат ҫиет,
Чей ӗҫет,
Унтан ӗҫе пикенет.
Тӗлӗнмелле Санюкран
Пултаруллӑ пулнӑран.

*В. Давыдов-Анатри*

### МӖНШӖН ТЕТӖР ЭП ПАТВАР?

Ир ҫывӑрса ир тӑрас,
Тӑрсан ырӑн пуҫтарас,
Хуҫкалансан виҫ авӑк,
Ҫавӑнпа та пит савӑк.
Ыйхӑ каять уҫӑлса,
Ӗҫӗ ман пырать ӑнса.
— Мӗншӗн, — теҫҫӗ, — эс хастар,
Пӗчӗкҫеҫҫӗ ху, патвар?
Эп калатӑп хаваспа:
— Физзарядка тунӑран,
Ҫывӑрмашкӑн эп каҫпа
Ир выртса ир тӑнӑран.

*М. Волкова*

Калаҫура усӑ курмалли ваттисен сӑмахӗсем:

Ӗҫрен ан хӑра, вӑл хӑй санран хӑратӑр; Ӗҫ тӑрантарать, кахал пӑсать; Пуҫра пулнӑ ӗмӗте ӗҫе кӗртсе пыр; Ӗҫе йӗркине пӗлсе ӗҫле.

**5. Киле ӗҫ.**

«Ванюк, мӗншӗн эс наян?» сӑвӑ содержанийӗ тӑрӑх ӳкерчӗк ӳкермелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 57-мĕш урок

### Тема: Тĕрлĕ профессисем

***Урок тĕллевĕ:*** çăкăр мĕнле пулни çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) тĕрлĕ профессисем çинчен аса илсе каласасси; 2) П. Емельянов çырнă «Шурă çăкăр — кулач» калава вуласа ăнланасси; 3) çăкăр мĕнле пулни çинчен калаçтарасси; 4) çăкăра упрама вĕрентесси, ун çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** *кулач, уй-хир, ял ĕçченĕ, çап, выр.*

***Грамматика материалĕ:*** чăвашла предложенири сăмахсен йĕрки.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** çăкăр мĕнле пулнине сăнлакан ӳкерчĕксем (слайдсем); тулă, ыраш пĕрчисем; çăнăхран пĕçернĕ апат-çимĕç, фонохрестомати.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Чăвашла пуплеве итлесе тăнлама, каласа пама пĕлнине тĕрĕслени.

ă) Учитель тĕрлĕ профессипе ĕçлекен çынсем çинчен каласа парать, ачасен ăна итлесе кам çинчен каланине ăнланмалла.

б) Сĕтел çинче тĕрлĕ профессие сăнласа паракан ӳкерчĕксем. Ача пĕрне суйласа илет те каласа парать. Тĕслĕхрен:

— *Ку рабочи. Вăл заводра ĕçлет, тракторсем тăвать.*

в) Калаçу йĕркелени.

Калаçу тĕсĕ:

— *Манăн анне тухтăр. Вăл больницăра ĕçлет. Чирлĕ çынсене сыватать. Саша, санăн аннӳ кам пулса ĕçлет? Вăл ăçта ĕçлет? Унта мĕн тăвать?*

— ...

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Панӑ сӑмахсемпе усӑ курса ачасем ҫарӑк, ҫӑкӑр ҫинчен предложенисем тӑваҫҫӗ, унтан ҫыхӑнуллӑ каласа параҫҫӗ.

б) Кӗнекери 5—7-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани, «Шурӑ ҫӑкӑр — кулач» калавпа ӗҫлени:

— калава фонохрестоматипе усӑ курса итлени, харпӑр хӑй тӗллӗн вулани, ӑнланни;

— ыйтусемпе ӗҫлени;

— калава сасӑпа вулани, содержанине калани.

в) Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Малтан кашни ӳкерчӗкпе уйрӑм ӗҫлеҫҫӗ. Вӗрентӳҫӗ ыйтусем парать, ачасем хуравлаҫҫӗ, унтан ҫыхӑнуллӑ калаҫҫӗ. Кайран ӳкерчӗксемпе, калавпа усӑ курса кулач мӗнле пулни ҫинчен калав ҫыраҫҫӗ.

г) «Хытӑ ҫӑкӑр» калавпа ӗҫлени:

— учитель калава вуласа парать;

— ыйтусем парса содержанине мӗнле ӑнланнине тӗрӗслет.

## ХЫТӐ ҪӐКӐР

Ҫерукӑн ашшӗ — ҫӑкӑр пӗҫерекен. Вунӑ ҫул вӑл пекарньăра ӗҫлет. Ирпе ирех, хӗвел тухичченех, вӑранать те ӗҫе каять. Кӑнтӑрла магазина, шкул столовӑйне ҫемҫе ҫӑкӑр илсе килеҫҫӗ.

Паян Ҫерукӑн ашшӗ чирлӗ. Ӗҫе каймарӗ.

— Ҫерук, шкул ачисене паян ҫемҫе ҫӑкӑр пулмасть тесе кала, — терӗ ашшӗ.

Кӑнтӑр апатне шкул ачисем столовӑйне кайрӗҫ.

— Мӗншӗн паян ҫӑкӑр хытӑ? — тӗлӗнчӗҫ ачасем.

— Манӑн атте чирленӗ, — хурлӑхлӑн пӗлтерчӗ Ҫерук. — Паян хытӑ ҫӑкӑр ҫеҫ пулать. Ыран та ҫаплах пулать-и тен...

*(В. Сухомлинский ҫырнинчен)*

Икӗ калав содержанийӗ тӑрӑх пӗтӗмлетсе калаҫу йӗркелени:

*Ҫӑкӑр пирӗн сӗтел ҫине ӑҫтан килет? Тырра мӗнпе выраҫҫӗ? Комбайнпа кам ӗҫлет? Тырра ӑҫта авӑртаҫҫӗ? Тырӑран ҫӑнӑх ӑҫта тӑваҫҫӗ? Ҫӑкӑра ӑҫта пӗҫереҫҫӗ? Ҫӑкӑра кам пӗҫерет? Ҫӑкӑр ҫинчен мӗнле ваттисен сӑмахӗсем пӗлетӗр?* (Чӑвашла та, вырӑсла та калама юрать.)

д) Кӗнекери 10-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасем вырӑсла та, чӑвашла та ҫӑкӑр ҫинчен калакан ваттисен сӑмахӗсем тупаҫҫӗ, иккӗш-виҫҫӗшне, чӑвашлисене, пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ. Пӗр ачи доска ҫине ҫырать, ӑна пурте пӗрле тӗрӗслеҫҫӗ.

е) Кӗнекери 9-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Малтан ачасем панӑ тӗслӗхпе усӑ курса калаҫаҫҫӗ, унтан ушкӑнпа ӗҫлеҫҫӗ, пӗр-пӗр професси суйласа илсе ун ҫинчен каласа пама хатӗрленеҫҫӗ.

Калаҫу тӗсӗ:

— *Манӑн пичче тракторпа ӗҫлет. Кала-ха, вӑл кам?*

— *Санӑн пиччӳ — тракторист. Вӑл мӗн тӑвать?*

— *Вӑл тракторпа ҫӗр сухалать, ... .*

**5. Киле ӗҫ.**

Текста вуламалла, ун содержанийӗ тӑрӑх килӗшнӗ вырӑна суйласа илсе ӳкерчӗк тумалла.

**6. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени, вӗреннине ҫирӗплетни.**

Урок вӗҫӗнче е тепӗр урок пуҫламӑшӗнче ачасем профессисем ҫинчен мӗн пӗлнине тӗрӗслемелли ӗҫсем:

а) Юпасенче панӑ сӑмахсене вулани, вӗсен пулӑвӗ пирки калаҫни, кашни сӑмахӗпе предложени е пӗчӗк калав туни.

Урок пуҫланиччен учитель сӑмахсене доска ҫине ҫырать е слайдпа усӑ курать.

| | | |
|---|---|---|
| сутуҫӑ | тӗрӗҫӗ | вӗрентӳҫӗ |
| арманҫӑ | ӑстаҫӑ | тухтӑр |
| атӑҫӑ | чӳлмекҫӗ | пахчаҫӑ |
| ҫӗвӗҫӗ | пулӑҫӑ | тимӗрҫӗ |

ӑ) Учитель чӑвашла текста доска ҫине ҫырса хурать е слайд кӑтартать, ачасем тетраде ҫав текста ҫырса илеҫҫӗ, унтан вырӑсла куҫарса ҫыраҫҫӗ. Учитель тетрадьсене пуҫтарса илет, тӗрӗслет, пахалать. Ҫакӑн пек ӗҫсене тӗрӗсленӗ чухне учителӗн ачасем тӗрӗс ҫырса илме пӗлнине уйрӑм хак памалла, предложенисенче сӑмахсене тӗрӗс йӗркеленине, тӗрӗс куҫарнине тепӗр отметкӑпа хакламалла. Пӗр парта хушшинче ларакан ачасене пӗр пек ӗҫ памалла мар.

## Текстсем:

### ЛЕВА ПИЧЧЕ

Лева пичче — летчик. Вӑл Шупашкарта пурӑнать.

Лева пичче пысӑк самолетпа вӗҫет. Пӗррехинче вӑл мана самолет ҫине лартрӗ. Эпӗ питӗ савӑнтӑм.

Ӳссен эпӗ те летчик пулатӑп.

### ЭРХИП

Эрхип чирленӗ. Унӑн пуҫӗ ыратнӑ. Эрхип піччӗшӗ тухтӑра чӗннӗ. Тухтӑр Эрхипе эмел панӑ. Эрхип эмел ӗҫнӗ. Тухтӑр Эрхипе сывалма пулӑшнӑ.

ЗАВОДРА

Шупашкарта фабрикăпа завод пур. Заводра рабочисем ĕçлеççĕ.

Борисăн пиччĕшĕ агрегат заводĕнче ĕçлет. Вăл трактор валли запас пайĕсем тăвать.

ЙЫВĂР ЗАДАЧА

Лида задача шутланă. Анчах задача тухман.

— Пар, хам шутласа паратăп, — тенĕ пиччĕшĕ.

— Çук, çук. Эпĕ хамах шутлатăп, — тенĕ Лида. Вăл задачăна тăрăшса шутланă. Задача тухнă.

НИНĂПА АСЛАМĂШĔ

Нина шкултан киле таврăннă. Килĕнче унăн асламăшĕ çеç пулнă. Нина сĕтел хушшине ларнă. Вăл асламăшне кĕнеке вуласа панă. Унтан сăвă каланă. Асламăшĕ савăнса итленĕ. Вăл Нинăна мухтанă.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 58—59-мĕш уроксем

### Тема: Çемье

***Урок тĕллевĕ:*** «Çемье» темăпа мĕн вĕренни çине таянса ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) «Çемье» темăпа ачасене çыхăнуллă калаçтарасси; 2) камăнлăх категорийĕнчи япала ячĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси; 3) *мĕн тумасть?* ыйтури сăмахсене уйăрса илме пултарнине тĕрĕслесси; 4) панă сăмахсемпе усă курса чăвашла предложенисем тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** *мухтан, картиш, вăрç, тĕрĕс, иксĕр, йăл кул, йăнăш, мухтан.*

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕсен камăнлăх категорийĕ.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** «Çемье» ӳкерчĕк е слайд, фонохрестомати.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

*Бабушка, дедушка, брат, сестра* сăмахсем икĕ хут тĕл пулни çинчен калаççĕ.

Бабушка — асанне, кукамай; ... .

б) Кĕнекери 1—4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

в) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

Аттем — манăн атте, юлташăм — манăн юлташ, пиччӳ — санăн пиччӳ, амăшĕ — унăн амăшĕ...

г) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем япала ячĕсем камăнлăх форминче мĕнле аффикс йышăнасси сăмах мĕнле сасăпа вĕçленнинчен килнине калаççĕ. Кашни схемипе тĕслĕхсем тупаççĕ. Схемăсемпе усă курса сăмах майлашăвĕсем, унтан предложенисем тăваççĕ.

д) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Малтан ачасем пĕрремĕш юпари сăмахсем çумне *манăн, санăн, унăн* сăмахсем хушса сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, вĕсене доска çине çыраççĕ, унтан иккĕмĕшпе виççĕмĕш юпасенчен кирлĕ сăмахсем суйласа илсе предложенисем йĕркелеççĕ. Ачасем юпасенчи сăмахсене тĕрĕс майлаштарса предложенисем тăваççĕ. С ă м а х р а н: *Манăн асанне нуски çыхать.*

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Пăнчăсем вырăнне *асанне* тата *кукамай* сăмахсене лартаççĕ. Мĕншĕн çак сăмахсене лартмаллине ăнлантараççĕ (умĕнчи йĕркесен юлашки сăмахсен вĕçне пăхса тата содержание ăнланса).

ё) «Çемье» темăпа малтан вĕреннине аса илни. «Манăн çемье» калав туни.

Учитель ачасене малтан ушкăнăн-ушкăнăн е икшерĕн калаçма ирĕк парать. Калаçнă вăхăтра ачасем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, вĕреннине аса илеççĕ, калав йĕркелеççĕ. Унтан калава класри ачасем умĕнче каласа параççĕ.

ĕ) Ӳкерчĕксемпе ĕçлени. Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель ӳкерчĕксенче сăнланă çемьери çынсем çинчен каласа пама ыйтать. Ачасем унта кам-кам пуррине йĕркипе каласа тухаççĕ. Учитель ыйтусем парса пулăшать.

— Çемьере кам-кам пур? Ку çемье пысăк-и?

Унтан çемьери çынсем мĕн туни çинчен ыйтать. Юлашкинчен кашни ӳкерчĕкĕпе çыхăнуллă калав тăваççĕ.

ж) Кĕнекери 7-мĕш ĕçри 1-мĕш юпари сăмахсене çырни.

Ку ĕçĕн тĕллевĕ — икĕ пĕр пек сасăллă сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма хăнăхтарасси.

Учитель малтан кашни сăмаха вулаттарать, ӳкерчĕкре япалине туптарать, калаттарать. Пурне те каласа тухнă хыççăн панă сăмахсене тепĕр хут тимлĕ пăхма хушать, унтан вĕсене учитель каланă хыççăн çырасси çинчен пĕлтерет. Ачасем тимлĕ вуласа тухсан кĕнекесене хуптарать. Сăмах диктанчĕ çыртарать. Унтан кĕнекесене уçса мĕн çырнине тĕрĕслеççĕ, пĕр-пĕрин ĕçĕсене хаклаççĕ.

з) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— учитель текста фонохрестоматипе усă курса итлеттерет, унтан ыйтусене хуравлаттарать:

— Çемьере миçе çын? Катя ăçта çӳрет? Вăл унта мĕн тăвать? Миша мĕншĕн килте? Вăл кăнтăрла мĕн ĕçлет? Катя Миша çинчен мĕн каланă? Мишăпа Катя мĕнле ачасем?

— ачасем текста вулаççĕ;

— ачасем килте мĕн ĕçлени çинчен пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлеççĕ;

— тăрăшса вĕренни яланах кирлĕ пулни çинчен калаççĕ, «Ӳссен эсĕ кам пулатăн?» темăпа калаçаççĕ, юрă юрлаççĕ.

и) Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçлани. Калаçу çакăн майлă пулма пултарать:

— *Эпĕ яланах аттепе аннене пулăшатăп. Чечексене шăваратăп, савăт-сапа çăватăп, лавккана çăкăр илме каятăп. Миша, эсĕ аçуаннӳне пулăшатăн-и? Мĕн тăватăн?*

— *Эпĕ те аттепе аннене пулăшатăп...*

**5. Киле ĕç.**

Кĕнекери 11-мĕш ĕçе, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Класра ачасем предложенисене тупса вулаççĕ, килте вĕсене çырса илеççĕ, *мĕн тумасть?* ыйтури сăмахсене аялтан икĕ йĕрпе туртаççĕ, тăррине ыйтăвне çыраççĕ.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 2, 4, 5, 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

# 60-мӗш урок

## Тема: Çемье

***Урок тӗллевӗ:*** килти кайӑк-кӗшӗк ячӗсене аса илесси, çемье çинчен пуплеттересси.

***Урок задачисем:*** 1) шӳтлӗ сӑвва, калава вуласа ӑнланасси; 2) иртнӗ вӑхӑтри глаголсене уйӑрса илме хӑнӑхтарасси; 3) килти кайӑк-кӗшӗк ячӗсене астуса юлассси; 4) асламӑшӗ, кукамӑшӗ çинчен каласа пама пӗлесси.

***Лексика материалӗ:*** çемье çинчен каласа пама кирлӗ сӑмахсем, килти кайӑк-кӗшӗк ячӗсем.

***Грамматика материалӗ:*** иртнӗ вӑхӑтри глаголсем.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** щетка, цирк, йӗлтӗр, çӑра, сехет, пурӑ, ӗне, орден, килти кайӑк-кӗшӗк ӳкерчӗкӗсем е слайдсем, фонохрестомати.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗçе тӗрӗслени, малтан вӗреннине аса илни.**

**4. Çӗнӗ материалпа ӗçлени.**

а) Урок темине, тӗллевӗсене пӗлтерни.

Учитель урока калаçуран пуçлать:

— *Паян шӳтлӗ урок иртттеретпӗр. Эсир тупмалли юмахсем, шӳтлӗ сӑвӑсем, шут сӑввисем пӗлетӗр-и?*

Вырӑсла калама та юрать. Унтан учитель тупмалли юмахсем, вӗçлемен сӑвӑсем вуласа парать. Ачасем тупсӑмне ӑнкарса илеймесен ӳкерчӗкне кӑтартать.

1) Вӑл пулать-мӗн тӗрлӗрен:
Шӑл тасатать ирсерен,
Тепри пушмак çутатать,
Леш тумтире якатать.
*(Щетка.)*

2) Кӑтартаççӗ тамаша:
Ик уран ташлать лаша,
Конькипе ярӑнать упа,
Çын вылять арӑсланпа.
*(Цирк.)*

3) Çулла канатӑп — кахал мар.
Хӗлле шӑватӑп — çӗлен мар.
*(Йӗлтӗр, çунашка.)*

4) Пӳрт тулли пурăнаççĕ,
Чӳрече касаймаççĕ.
*(Хăяр.)*

5) Вĕрмест, çыртмасть, çынна кĕртмест. *(Çăра.)*
6) Урасăр — утать, алăсăр — шаккать. *(Сехет.)*
7) Хăй шап-шурă — сахăр мар,
Тытсан çырать — ручка мар.
*(Пурă.)*
8) Асатте кăкри çинче
Çутă çăлтăр.
Йăлкăшать кун çутинче
Йăлтăр-йăлтăр.
*(Орден.)*

9) Му-ук! тесе макăрать,
Вăл пире сĕтне парать.
*(Ĕне.)*

Сăвва вĕçле:
1) Ăс парать мана пĕрмай
Ырă чунлă ... *(кукамай).*
2) Хатĕрлерĕм эп парне,
Савăнать ман ... *(асанне).*
3) Савăнать ачи-пăчи
Кĕçех çитĕ ... *(Хĕл Мучи).*
4) Шĕвĕр сухал, ик мăйрака,
Мекекек тет ... *(качака).*
5) Витали сарайĕнче
Тем касать каска çинче.
«Эп пулатăп, — тет, — пилот».
Ăсталать вăл ... *(самолет).*
6) Сĕтел çинче ларать куршак,
Унтан хăйма вăрлать ... *(кушак).*
7) Стадион шавлать, кĕрлет.
Ай футбол, футбол, футбол!
Мечĕк хапхана кĕрет —
Кăшкăраççĕ пурте ... *(гол).*
8) «Нăрик-нăрик!» — ун юрри,
Ку вара сысна ... *(çури).*
9) Авăтса калать: «Вăран!»
Куккарекук сар ... *(автан).*
10) Кашни йыттăн ячĕ пур,
Çакă йытă вăл ... *(Кампур).*

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем хăйсем тĕллĕн ĕçлени. Учитель «Кукамайăн миçе чăх?» сăвва вуласа чăхсен шутне пĕлме хушать.

— Урама миçе чăх тухнă? Миçе чăхха Хураçка хăваланă? Пахчара пурĕ миçе чăх?

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

в) Сăвва фонохрестоматипе усă курса илемлĕ вулама вĕренни.

Ачасене килте ашшĕ-амăшне вуласа парса чăхсен шутне шутлаттарма, астуса юлнă тупмалли юмахсен тупсăмне туптарма хушма юрать.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ӳкерчĕксемпе усă курса сăввăн содержанине калаттармалла.

д) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Вĕренекенсем иртнĕ вăхăтри глаголсен схемисене, аффиксĕсене аса илеççĕ, унтан вĕсене сăвăра шыраççĕ.

е) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ё) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель «Калаçу» шӳтлĕ калава вуласа парать.

— Мĕншĕн ку калава шӳтлĕ калав теме пулать?

Калав тăрăх сценка хатĕрлени.

Автор, амăшĕ, Çемен тата Шурик сценка лартаççĕ.

ĕ) Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ачасем килти ĕçе класра вулаççĕ, йĕрсем çине мĕнле сăмахсем çырмаллине калаççĕ, астуса юлаççĕ, килте çырса пурнăçлаççĕ.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 61—62-мĕш уроксем

### Тема: Çĕршыв хӳтĕлевçисем

***Урок тĕллевĕ:*** Çĕршыв хутĕлевçисем тата вĕсен уявĕ çинчен калама кирлĕ сăмахсемпе пуплеве пуянлатасси.

***Урок задачисем:*** 1) Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен уявĕ çинчен каласа пама вĕрентесси; 2) иртнĕ вăхăтри глаголсемпе усă курма хăнăхтарасси; 3) «Кивĕ альбом» калав содержанийĕ тăрăх калаçтарасси.

***Лексика материалĕ:*** *хăюллă, çапăçу, тăнăç, тĕнче, ватă асатте, паллă, çар, вăрçă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, Георги хĕресĕ, сăмах пар.*

***Грамматика материалĕ:*** иртнĕ вăхăтри глаголсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** вăрçă ветеранĕсен пурнăçĕпе çыхăннă слайдсем е ӳкерчĕксем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

5-мĕш ĕçе çырмасăр пунăçлаççĕ, килте тетраде çыраççĕ.

б) Кĕнекери 8-мĕшпе 9-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

в) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

1-мĕш ĕçе пурнăçланă чух сăмах майлашăвĕсене пĕр-пĕринпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ. 3-мĕш ĕçе пурнăçличчен предложени йĕрки мĕнле пулмалли çинчен аса илеççĕ.

д) Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

4-мĕш ĕçе пурнăçланă хыççăн ачасем пĕр-пĕрин ĕçĕсене кĕнекепе тĕрĕслеççĕ, хаклаççĕ. Мĕнле хакламаллине тĕрĕслес умĕн калаçса татăлаççĕ.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 63-мĕш урок

## Тема: Ветеран патĕнче

***Урок тĕллевĕ:*** вăрçă ветеранĕсем çинчен вуласа пĕлесси, вĕсем çинчен каланă чухне иртнĕ вăхăтри глаголсен формисемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) «Салтак» сăвва ăнланма пулăшасси; 2) «Ветеран патĕнче хăнара» текстпа ĕçлеттересси; 3) иртнĕ вăхăтри глаголсен тĕрлĕ формисене пĕр-пĕринчен уйăрма вĕрентесси, вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** салтак тата вăрçă ветеранĕ çинчен каласа пама кирлĕ сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** иртнĕ вăхăтри глаголсен тĕрлĕ формисем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** салтаксене, вăрçă ветеранĕсене сăнлакан ӳкерчĕксем, слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ваттисен сăмахне вуланă хыççăн вĕсене çырнă чухне йăнăш тăвасран асăрхаттармалла. Ачасем хăш сăмахра, мĕнле вырăнта йăнăш тума пултарнине палăртмалла, çав вырăнсене тимлĕ пăхса тепĕр хут вуламалла.

**5. Киле ĕç.**

Çывăх пĕлекен салтак е вăрçă ветеранĕ çинчен материал илсе килмелле, ун çинчен каласа пама хатĕрленмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 64—65-мĕш уроксем

### Тема: Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисем

***Урок тĕллевĕ:*** çĕршыв хӳтĕлевçисем çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) сăвă содержанийĕ тăрăх панă ыйтусене хуравлама хăнăхтарасси; 2) танлаштарусене уйăрса илме вĕрентесси; 3) çĕршыв хӳтĕлевçисем çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** вăрçă ветеранĕ çинчен каласа пама кирлĕ сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** танлаштару сăмахĕсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** проект çырнă чухне усă курмалли Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисемпе çыхăннă материал.

### *Урок юхăмĕ*

Пĕрремĕш урокра ачасем кĕнекери 1—5, 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1, 3, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлаççĕ. Килте 6-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ, проект валли материал пухаççĕ.

Иккĕмĕш урокра ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ, ушкăнпа çĕршыв хӳтĕлевçисем çинчен проект хатĕрлеççĕ, хӳтĕлеççĕ, пĕр-пĕрин проекчĕсене калаçса татăлнă виçесене шута илсе хаклаççĕ.

## 66-мĕш урок

## Тема: Тăван çĕршыв

***Урок тĕллевĕ:*** Тăван çĕршыв çинчен хатĕр план тăрăх каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) «Туслăх» сăвă материалĕ тăрăх туслăх ăнлавăн пĕлтерĕшне ăнланса илме пулăшасси; 2) диалогра палăртнă сăмахсене улăштарса çĕннине тума вĕрентесси; 3) Тăван çĕршыв çинчен хатĕр планпа усă курса калама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** *Инçет Хĕвел тухăç, пуянлăх, хĕрӳ, çĕр чăмăрĕ, çĕр кăмрăкĕ, тăвăл, хурçă.*

***Грамматика материалĕ:*** чăвашла предложенисенчи сăмах йĕрки.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** Тăван çĕршыв пуянлăхне кăтартакан ӳкерчĕксем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Сăвăра П. Ялкир туслăх мĕншĕн ылтăнран хаклăрах, хурçăран çирĕпрех, тăвăлтан вăйлăрах, хĕвелтен хĕрӳрех тенине ачасем тĕслĕхсемпе ăнлантарса парсан аванрах пулмалла, капла ачасем туслăх пĕлтерĕшне лайăхрах ăнланса илĕç.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Калаçăва виçĕ çын хутшăннине ачасен пĕлмелле, вĕсен ячĕсене палăртмалла. Палăртнă сăмахсем выранне мĕнле сăмах

лартасси ушкӑнри ачасенчен хӑшӗ мӗнле роль илнинчен килнине ӑнланмалла. Ролӗсене суйласа илсен кам ҫинчен калассине шутламалла.

в) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Малтан ачасем планри кашни ыйтӑва уйрӑм хуравлаҫҫӗ, унтан хуравсене пӗрлештерсе калаҫҫӗ.

**5. Киле ӗҫ.**

«Туслӑх» сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренмелле, амӑшӗн сӑн ӳкерчӗкне илсе килмелле.

**6. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени, вӗреннине ҫирӗплетни.**

**7. Ӗҫе хаклани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем хӑйсен ӗҫне хаклаҫҫӗ, унтан вӗсен ӗҫне учитель хаклать.

**8. Урока вӗҫлени.**

## 67—68-мӗш уроксем

### Тема: Ытарайми анне

***Урок тӗллевӗ:*** ***чи*** татӑкпа тата ***-ҫӑм(-ҫӗм)*** аффикспа усӑ курса анне ҫинчен пуплеме вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) паллӑ ячӗсен ***чи*** татӑкпа пулнӑ вӑйлӑ формипе паллаштарасси, пуплевре усӑ курма вӗрентесси; 2) сӑмахри ***-ҫӑм(-ҫӗм)*** аффиксӑн пӗлтерӗшне ӑнланса илме, унпа усӑ курма пулӑшасси; 3) ***чи*** татӑкпа тата ***-ҫӑм(-ҫӗм)*** аффикспа усӑ курса анне ҫинчен пуплеттересси.

***Лексика материалӗ:*** *чи, ҫитер, ӑсат, кил-ҫурт, шӑкӑл-шӑкӑл.*

***Грамматика материалӗ:*** паллӑ ячӗсен *чи* татӑкпа пулнӑ вӑйлӑ форми, ***-ҫӑм(-ҫӗм)*** аффикс хушӑнса пулнӑ япала ячӗсем.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** ачасен амӑшӗсен сӑн ӳкерчӗкӗсем.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, малтан вӗреннине аса илни.**

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) Урок темине, тӗллевӗсене пӗлтерни.

Учитель урока сӑвӑран пуҫлать. Сӑвва илемлӗ, васкамасӑр калать.

КАМ-ШИ ВӐЛ?

Кам пире ачашшӑн
Лӑпкать пӗчӗкрен,
Чипер ҫын тӑвасшӑн
Ҫунать чӗререн?
Вӑл пирӗн ... (анне).
Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫать,
Юрӑ юрлать, савӑнать,
Яланах ӗҫеваскать,
Ачисемшӗн тӑрӑшать.
Кам-ши вӑл?
Вӑл пирӗн ... (анне).

Ачасем сӑвва вӗҫлеҫҫӗ, унтан кӗнеке тӑрӑх хӑйсем вулаҫҫӗ. Вӗҫлеме тавҫӑраймасан учитель доска ҫине ҫырнӑ *анне* сӑмаха вулаттарать. Ку сӑвӑ урока пуҫлама ҫеҫ кирлӗ, ҫавӑнпа ӑнланман сӑмахсем ҫинче чарӑнса тӑмасан та юрать.

Учитель ачасене урокра анне ҫинчен калаҫассине, вулассине пӗлтерет.

ӑ) Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

б) Кӗнекери 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Юпасенче панӑ сӑмахсене вулани, куҫарни.

в) Ачасен амӑшӗсем ҫинчен калаҫни.

Учитель ачасене ыйту парать:

— Санӑн аннӳ мӗнле?

Ачасем юпасенчи сӑмахсемпе усӑ курса хуравлаҫҫӗ.

*— Манӑн анне чи хитри, чи ырри т. ыт. те.*

Учителӗн ҫак ыйтӑва нумай ачаран ыйтма тӑрӑшмалла. Ачасем хӑйсем пӗр-пӗринчен ыйтма пултараҫҫӗ (икшерӗн ӗҫлесси).

г) Кӗнекери 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасене схемӑсене ҫакӑн пек ӑнлантармалла:

Сӑмах вӗҫӗнче уҫӑ сасӑ пулсан ҫав уҫӑ сасӑ тухса ӳкет те ***-и*** хушӑнать; вӗҫӗнче хупӑ сасӑ пулсан хупӑ сасси вӑрӑмланать; ***-ӑ, -ӗ*** пулсан вӗсем тухса ӳкеҫҫӗ, юнашар тӑракан хупӑ сасси вӑрӑмланать, ***-и*** хушӑнать.

д) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасем кӗнекере панӑ сӑмахсем умне *чи* татӑк хушса, схемӑпа усӑ курса, сӑмах вӗҫӗсене пӑхса ушкӑнласа ҫыраҫҫӗ. Паллӑ ячӗн формине тунӑ чух сӑмахсенчи хупӑ сасӑсене вӑрӑмланнине асӑрхамалла. Сӑмахран, *чи ырри, чи ӗҫченни, чи маттурри, чи лайӑххи, чи сывви, чи усалли, чи япӑххи, чи наянни, чи тирпейсӗрри*. Хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене палӑртсан аван пулмалла.

е) Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани. Ребуспа ӗҫлени.

*Кĕнеке* сăмахран *анне* сăмах тăваççĕ. Çак ĕçе пурнăçланă чух урокра вĕреннине пĕтĕмлетсе хăвармалла.

ё) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Текста вулани. Унпа усă курса ачасем хăйсен амăшĕсем çинчен каласа параççĕ.

Ачасем амăшĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене кăтартса вĕсем çинчен каласа параççĕ.

Тĕслĕхрен:

— *Манăн анне Нина ятлă. Вăл заводра ĕçлет. Анне лайăх ĕçлет. Эпĕ ăна килти ĕçсене тума пулăшатăп. Эпĕ аннене питĕ юрататăп...*

ж) Кĕнекери 8—11-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасен сăмах майлашăвĕсене йĕрпе çыхăнтармалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 2—4-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 69-мĕш урок

## Тема: Пирĕн çемье

***Урок тĕллевĕ:*** вĕреннĕ грамматика формисемпе усă курса аттеаннене пулăшни çинчен пуплеме хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ***-çăм(-çĕм)*** аффикслă сăмахсемпе усă курма вĕрентесси; 2) хальхи тата иртнĕ вăхăтри глаголсене тĕрлĕ сăпата лартма хăнăхтарасси; 3) ашшĕ-амăшне мĕнле пулăшни çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** *кĕпе арки, пултар, юса, ан хурат, астуса ут, кивĕ, тытса юрат.*

***Грамматика материалĕ: -çăм(-çĕм)*** аффикслă сăмахсем, хальхи тата иртнĕ вăхăтри глаголсен тĕрлĕ сăпат форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

а) Иртнĕ урокра вуланă «Кам-ши вăл?» сăвва тепĕр хут вулаççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасене хăйсен амăшĕсем пирки лайăх сăмахсем калаттарать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Д. Гордеевăн «Тытса юрат» сăввине вулани. Учитель пăхмасăр калать, ачасем сăвва мĕнле ăнланнине тĕрĕслет.

Словарь ĕçĕ хыççăн ачасем сăвва вулаççĕ, ăна илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ. 3—4 ачана сасăпа вулаттарнă хыççăн класпа вулама юрать. Хăш рет лайăхрах вуланине палăртаççĕ.

б) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем малтан ӳкерчĕк çине пăхса пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ, унтан ушкăнсене пайланса çыхăнуллă калав тăваççĕ, каласа параççĕ, чи лайăх калава суйласа илеççĕ.

в) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем сăмахсене сылтăмран сулахаялла вуланă хыççăн доска çине çыраççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ. «Хыçалтан малалла вула» вăйă выляççĕ. Пĕр ача сăмаха доска çине çырать, тепри хыçалтан малалла вулать. Хыçалтан вуласан та пĕлтерĕшлĕ сăмах пулакан тĕслĕхсем тупмалла.

г) Кĕнекери 6—8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Класра ачасем текста вуласа йĕрсем вырăнне мĕнле аффикссем лартмаллине калаççĕ, схемине доска çине ӳкереççĕ. Текстпа усă курса хăйсен амăшĕсем çинчен калаççĕ. Килте тетраде çыраççĕ.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

В. Давыдов-Анатрипе Ф. Лукин çырнă «Юратнă анне» юрра фонохрестоматипе усă курса юрлама вĕренни.

ЮРАТНĂ АННЕ

Кам-ха пире юратса,
Хăй аллипе хăй йăтса
Лăпка-лăпка ӳстерет,
Çунат пиллет, вĕçтерет?
— Юратнă анне.

Кам-ха эпир чирлесен,
Япала-мĕн çĕмĕрсен,
Аран-аран вĕренсен

Куçне хупмасть каççерен?
— Юратнă анне.

Кам-ха эпир иртĕхсен,
Тухса кайсан йĕркерен,
Ĕçрен юлса çӳресен
Çунать пĕтĕм чĕререн?
— Юратнă анне.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 70—71-мĕш уроксем

### Тема: Чи çывăх çын

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен амăшĕсене пулăшни çинчен калаçтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) паллă ячĕсене вăйлă степене лартма хăнăхтарасси; 2) тĕрлĕ вăхăтри глаголсемпе усă курма хăнăхтарасси; 3) ачасем амăшне мĕнле пулăшни çинчен пуплеттересси.

***Лексика материалĕ:*** *япăх, кахал.*

***Грамматика материалĕ:*** паллă ячĕсен вăйлă степенĕ, глаголăн тĕрлĕ вăхăчĕсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** ачасем амăшне пулăшнине кăтартакан ӳкерчĕксем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Малтан вĕреннине аса илни. Иртнĕ урокра вуланă «Тытса юрат» сăвва рольпе вулани.

ă) «Юратнă анне» юрра аса илсе юрлани.

Ушкăнсемпе те юрлаттарма юрать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасем вăйлă степеньри паллă ячĕсем мĕнле пулнине аса илеççĕ, схемисене доска çине ӳкереççĕ, ăнлантараççĕ, унтан сăмахсене *чи* татăк хушса калаççĕ.

Ăнланман сăмахсене учитель словаре пăхма сĕнет, калаçу йĕркелет.

— Хăш сăмахĕсемпе анне çинчен каланă чух усă курма пулать? Мĕншĕн? Ытти сăмахсемпе хăçан усă куратпăр?

б) Калаçу йĕркелени:

— Сан аннӳ мĕн ятлă? Вăл ăçта ĕçлет? Эсĕ ăна пулăшатăн-и? Килте мĕн-мĕн тăватăн?

в) Кĕнекери 1—2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

«Чи çывăх çын» текстпа ĕçлени.

Текста вуласа панă хыççăн учитель ăна мĕнле ăнланнине ыйтса пĕлет, сăмахсене ăнлантарать.

Текста çурма сасăпа вуланă хыççăн ачасем ыйтусене хуравлаççĕ.

— Ача амăшне мĕнле пулăшать?

— Вăл мĕн тăвать?

— Ку мĕнле ача?

Текста тепĕр хут вулаççĕ, 3—4 предложенипе каласа пама вĕренеççĕ. 2—3 ача каласа парать.

г) Ӳкерчĕкпе ĕçлени.

Урок вĕçĕнче ачасем хăйсен амăшĕсене мĕнле пулăшнине сăнлакан ӳкерчĕксем тăваççĕ. Хăйсем ӳкернĕ саманта сăмахпа каласа ăнлантарса параççĕ.

Тĕслĕх: *Эпĕ аннене пулăшатăп. Эпĕ чечек шăваратăп.*

«Юратнă анне» юрра тепĕр хут юрлани.

д) Кĕнекери 6—9-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Урокра ачасем пулас вăхăтри глаголсен схемисене аса илеççĕ, ӳкереççĕ, ăнлантараççĕ, предложенисене сăмахсенчи кирлĕ аффикссене лартса вулаççĕ. Килте ĕçе çырса пурнăçлаççĕ.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

«Хыçалтан малалла вула» вăййа выляни.

куккук — куккук
аппа — аппа
ялав — Валя
сăвă — ăвăс
Анна — Анна

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

# 72-мĕш урок

## Тема: Аннене парне

***Урок тĕллевĕ:*** Мартăн саккăрмĕшĕпе саламлама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) амăшĕсен уявне мĕнле хатĕрленни çинчен пĕр-пĕринпе калаçма тата каласа пама хăнăхтарасси; 2) чечексен ячĕсемпе паллаштарасси, вĕсене пуплеве кĕртесси; 3) ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусем пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** *пин, çут, çăлтăрсен çыххи, салтак тӳми, лантăш, утмăл турат, мăкăнь.*

***Кирлĕ хатĕрсем:*** телевизор макечĕ, «Пирĕн аннесем» хаçат е альбом.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Урок калаçуран пуçланать. Ачасем ĕнер килте амăшĕсене мĕн туса пулăшни çинчен каласа параççĕ.

Хĕрарăмсен кунĕ çывхарса пыни, асаннесем, аннесем валли парне хатĕрлесси çинчен калаçаççĕ.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

«Парнелесчĕ аннене» сăвва учитель вулать. Ăна мĕнле ăнланнине ыйтусем парса тĕрĕслет.

— Мĕнле уяв çитет?

— Вăл кун камсене парне параççĕ?

— Ача амăшне мĕн парнелесшĕн?

Ачасем сăвва сасăпа вулаççĕ.

б) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Иккĕмĕш ыйтăва хуравланă чухне ачасем кашни чечек тĕсне каласа тухаççĕ:

— Салтак тӳми шурă, утмăл турат кăвак, мăкăнь хĕрлĕ...

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем пĕлекен чечек ячĕсене доска çине çыраççĕ, ушкăнсене пайлаççĕ, мĕнле ушкăнланине ăнлантараççĕ.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

«Эсĕ мĕнле парне хатĕрлетĕн?» темăпа калаçу йĕркелени.

Малтан учитель пĕр ачана çак ыйтăва парать, унтан çак ыйтăвах ачасем пĕр-пĕрне параççĕ, хуравлаççĕ. Хуравĕсене кашни ачаран ыйтса тухмалла. Хуравĕсем çакăн пек пулма пултараççĕ:

*— Паян эпĕ «5» илтĕм. Манпа пĕрле анне те савăнĕ.*

*— Эпĕ аннене тĕрленĕ ал шăлли парнелĕп. Асаннене алсиш парнелĕп.*

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ыйтăвĕсене ушкăнпа хатĕрлеççĕ, кайран тепĕр ушкăнран ыйтаççĕ.

е) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Юлашкинчен ачасем пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслеççĕ, хаклаççĕ, унтан учитель ачасем мĕн çырнине тата мĕнле хакланине тĕрĕслет.

ё) «Чечексем туп» вăййă.

— Аннене мĕнле чечек парнелеме пулать? — ыйтать учитель.

Чечексене ӳкерчĕкре тупаççĕ, вĕсен ячĕсене чăвашла, вырăсла калаççĕ.

ĕ) Класпа пĕрле амăшĕсем валли уяв телепередачи йĕркелени.

Çак передачăна чи лайăх калавсене, сăвăсене, амăшĕсем юратакан юрăсене кĕртмелле. Унтан «дикторсене» суйламалла (илемлĕ вулама пĕлекен, хитре тăхăннă, тирпейлĕ ачасене). Кашни «диктор» хăй калавне, сăввине телевизор макечĕ умне тăрса вулать. Темиçе ача пĕрле юрă юрлаççĕ. Ытти ачасем — куракансем. «Пирĕн аннесем» хаçатпа е альбомпа та кунта усă курма юрать. Передачăна çак сăвăпа вĕçлесен аван:

Кам пире мĕн пĕчĕкрен
Ӳстерет савса куллен?
Вăл анне, тăван анне,
Тайма пуç сана, анне!

ж) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Пĕр йĕр чăваш тĕрри ӳкерни.

Амăшĕсене уяв ячĕпе саламласа открытка çырма хатĕрленеççĕ. Малтан ачасем пĕрерĕн мĕн калас тенине доска çине çыраççĕ, унтан суйласа илсе саламлă çырăва тетрадьсене куçараççĕ, килте открытка çине çыраççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

# 73—74-мĕш уроксем

## Тема: Çуркунне çитрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен çурхи çанталăка сăнлассипе çыхăннă пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ачасене çурхи çанталăка сăнлама вĕрентесси; 2) уйăх ячĕсене аса илесси; 3) кураксем çинчен калав тутарасси.

***Лексика материалĕ:*** *лапам, ака, пуш, çу, çĕртме, кăрлач, раштав, юпа, авăн, нарăс, утă, çурла, чӳк.*

***Грамматика материалĕ:*** хальхи тата иртнĕ вăхăтри глаголсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** П.И. Чайковскин «Времена года» кĕвви, «Çуркунне» картина е слайд.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Малтан ачасем çанталăка сăнласа параççĕ. Учитель вĕсем каланине пĕтĕмлетет.

— Халĕ мĕнле вăхăт? Эсир халь çуркунне иккенне ăçтан пĕлтĕр?

— *Хĕвел хĕртсе пăхать, юр ирĕлет, тӳпе кăвак, çанталăк ăшă.*

— Ачасем, çуркунне савăнăçлă е тунсăхлă?

Учитель ачасене П. Чайковскин «Времена года» музыка хайлавĕнчи «Çуркунне» темăна итлеттерет.

б) Кĕнекери ӳкерчĕкпе ĕçлени.

в) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ӳкерчĕкре мĕн сăнланине калаççĕ. Çурхи уйăхсен ячĕсене чăвашла калама вĕренеççĕ: пуш, ака, çу.

г) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем сăмахсене ушкăнсем çине пайлаççĕ. Мĕнле ушкăнланине ăнлантараççĕ. Ачасен ушкăнлани тĕрлĕрен пулма пултарать, ăнлантарса пама пултармалла çеç. Уйăх ячĕсене вырăсла куçарса çыраççĕ. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

д) Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани. Текста вулани, ăнланни, ят пани. Ĕç йĕрки:

— хĕвел çинчен каланине тупса вулаççĕ;

— юр çинчен каланине тупса вулаççĕ;

— йывăçсем çинчен каланине тупса вулаççĕ;

— кайăксем çинчен каланине тупса вулаççĕ;

— ачасем мĕн туни пирки каланине тупса вулаççĕ;
— çил çинчен каланине тупса вулаççĕ.

Ачасем текстпа усă курса урамри çанталăка сăнлаççĕ.

е) Сăвăпа ĕçлени.

Учитель ачасене сăвва вуласа парать:

Йывăççемшĕн ай мĕн лайăх?
Ăшă çумăр çăвать — çав лайăх.
Выльăх-чĕрлĕхшĕн ай мĕн лайăх?
Симĕс курăк ӳсет — çав лайăх.
Ача-пăчашăн ай мĕн лайăх?
Сарă хĕвел пăхать — çав лайăх.

Кашни çаврине вуласа куçараççĕ. Унтан учитель сăвва тепĕр хут васкамасăр вулать, ачасем тимлĕ итлеççĕ. Çакăн хыççăн учитель пĕрремĕш йĕркене вулать, ачасен иккĕмĕш йĕркине каламалла. Ку ĕç ачасене тимлĕхе вĕрентет.

ё) Кĕнекери 6—8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ыйтусемпе хуравсене хакламалли виçесем çакăн пек пулма пултараççĕ:

— сăмахсене тĕрĕс калани;
— вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарни;
— ыйтăва е хурава тĕрĕс йĕркелени.

Анчах ку тĕслĕх çеç, ачасем пĕр-пĕринпе ĕçе мĕнле хакламаллине калаçса татăлма пултараççĕ.

ĕ) Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Курак çинчен калав туни. Ачасем калав çырнă чух текстри тата сăвăри предложенисемпе усă курма пултараççĕ.

ж) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем çуркунне çинчен калакан калавра усă курма май пур сăмахсене вулаççĕ, унтан вĕсемпе калав тăваççĕ. Ăнланман сăмахсем пур пулсан пĕр-пĕрне ăнлантараççĕ.

з) Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Предложенисене сиктерсе хăварнă сăмахсене лартса вулаççĕ. Уйăх ячĕсене чăвашла калаççĕ, çыраççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Уйăх ячĕсене чăвашла тата вырăсла астуса юлмалла, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 75-мĕш урок

### Тема: Шăнкăрчсем вĕçсе килчĕç

***Урок тĕллевĕ:*** шăнкăрчсем çинчен çырнă материалпа паллаштарса пуплеве пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кайăксен ячĕсене аса илесси, вĕсен çуркуннехи пурнăçĕ çинчен калаçтарасси; 2) чăвашларан вырăсла, вырăсларан чăвашла куçарас хăнăхусене аталантарасси; 3) шăнкăрчсем çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** *пирĕн пата, шăхăр, васка, пух, кĕвĕле, тĕк, ывăнма пĕлмесĕр.*

***Кирлĕ хатĕрсем:*** кайăксен ӳкерчĕкĕсем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Вĕрентӳçĕ кайăксен ӳкерчĕкĕсене кăтартать, ачасем вĕсен ячĕсене вырăсла, чăвашла калаççĕ.

б) Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем тетрадьри кайăксен ӳкерчĕкĕсене пăхса вĕсен ячĕсенчи сас паллисен шутне кура клеткăсене çыраççĕ, палăртнă юпари «кĕнеке» сăмаха вулаççĕ.

в) Кĕнекери 1—2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

г) Кĕнекери 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасем чăвашла тата вырăсла предложенисенчи сăмахсен йĕркин уйрăмлăхĕсене аса илеççĕ.

д) Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Сăмахсене çырнă чух вĕренекенсем 1-мĕш хăнăхтарупа усă курма пултараççĕ.

е) Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Сăмахсене тупаймасан ачасене 3-мĕш ĕçри предложенисенче тупма май пурри çинчен каламалла.

**5. Киле ĕç.**

«Шăнкăрч юрри» сăввăн пĕр куплетне çырса илмелле, йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртмалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 7-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 76—77-мĕш уроксем

### Тема: Çуркунне. Тискер чĕр чунсем

***Урок тĕллевĕ:*** тискер чĕр чунсем çинчен панă материалпа ĕçлесе ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) тискер чĕр чунсен, вĕсен çурисен ячĕсене аса илесси; 2) тискер чĕр чунсене сăнласа пама вĕрентесси; 3) тискер чĕр чунсем çинчен тупмалли юмахсем тутарасси.

***Лексика материалĕ:*** *утар, çĕрле, çари çухăр, хир сысни, ĕçе пуçăн, улăштар, вăран, вăрат, хыв, хыпар.*

***Кирлĕ хатĕрсем:*** тискер чĕр чунсен ӳкерчĕкĕсем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Тискер чĕр чун ӳкерчĕкĕсемпе е слайдсемпе ĕçлени.

Учитель тискер чĕр чун ӳкерчĕкĕсене е слайдсене пĕрерĕн кăтартса пырать, пĕр ретри ачасем вĕсен ячĕсене калаççĕ, тепĕр ретрисем тĕрĕс е тĕрĕс мар каланине çирĕплетеççĕ.

— Ку упа.

— *Çапла, ку упа. (Çук, ку упа мар, ку тилĕ.)*

Унтан вĕсем çинчен предложенисем тăваççĕ.

б) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Упана сăнланă чухне ӳкерчĕкпе усă кураççĕ.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Малтан сăмахсене вулаççĕ, мĕнле сас палли çырмаллине каласа пыраççĕ. Икĕ уçă сасă тата ялан янăракан хупă сасăпа уçă сасă хушшинчи хупă сасă янăраса илтĕнни, анчах çырнă чухне унăн янăраман мăшăрне çырмалли çинчен аса илеççĕ. Унтан тĕслĕхсем çыраççĕ. Тĕрĕсленĕ чух пăнчăсем вырăнне мĕнле сас палли çырнине тата мĕншĕн вăл сас паллине çырнине калаççĕ.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Сиктерсе хăварнă сăмахсене малтан доска çине çыраççĕ, унтан тин тетраде куçараççĕ.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасен хуравĕсем çакăн пек пулмалла:

— *Çапла, чĕрĕп шăши тытать.*

— *Çук, мулкач мăйăр çимест.*

— ...

е) Кĕнекери 7—9-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Чĕр чунсем çинчен каласа пама хатĕрленнĕ чухне 5-мĕшпе 7-мĕш хăнăхтарусенчи текстсем тĕслĕх пулса тăраççĕ. Вĕсемпе усă курма сĕнмелле.

ё) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем валли 5-мĕш ĕçри материал тĕслĕх вырăнĕнче пулмалла.

Ачасем хăйсен ĕçĕсене хаклани.

**5. Киле ĕç.**

«Упа çури» сăвва çырса килмелле, йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртмалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 78-мĕш урок

### Тема: Çуркунне. Вăрманта

***Урок тĕллевĕ:*** панă йĕркепе усă курса кайăксем çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пĕр-пĕр чĕр чун çинчен каласа пама кирлĕ япала ячĕсене, паллă ячĕсене, глаголсене суйласа илме вĕрентесси; 2) ачасене вăрман, вăрманти чĕр чунсем çинчен каласа пама хăнăхтарасси; 3) вĕçен кайăксем çинчен çырса панипе ӳкерчĕке шайлаштарма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** *илĕрт, сар, шăрантар, туйăн, шăршă, ырă.*

***Грамматика материалĕ:*** япалана, ун паллине, ĕçе пĕлтерекен сăмахсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** тискер чĕр чунсен, вĕçен кайăксен ӳкерчĕкĕсем, кайăксен сасси (диск), фонохрестомати.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

«Куккук килнĕ» сăвăпа ĕçлени. Малтан вĕрентӳçĕ илемлĕ вулаunion парать, унтан ачасем вулаççĕ, автор тата ачасен сăмахĕсене палăртаççĕ, рольпе вулаççĕ.

б) Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем сăмахсене тĕрлĕрен ушкăнлама пултараççĕ, мĕншĕн çапла ушкăнланине ăнлантарса пама çеç пултармалла. Учитель юлашкинчен ятсене тискер чĕр чунсемпе вĕçен кайăксен ячĕсем çине уйăрмаллине палăртса калать.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ. Хатĕр планпа калав тунă чух иртнĕ урокри 5-мĕшпе 7-мĕш хăнăхтарусенчи текстсемпе усă курма юранине каламалла.

г) Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

«Çуркунне вăрманта» текстпа ĕçлени.

Ăнланман сăмахсене ачасене словарьте туптармалла. Шырама пуçличчен сăмахсене пуçламăш формăна лартмалли çинчен аса илтермелле:

*Илĕртеççĕ — илĕрт.*

д) Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

7-мĕш ĕçе пурнăçланă чух ачасем ушкăнпа ĕçлеме пултараççĕ.

е) Кайăксем çинчен каласа пама пултарнине тĕрĕслени.

Ачасем вĕçен кайăксен ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ, ячĕсене калаççĕ, унтан кайăксем çинчен каласа параççĕ.

— Хура йăмăкăн юрри хитре. Мĕн вăл? — ыйтать учитель.

Ачасем тупсăмне калаççĕ. Шăнкăрча сăнласа параççĕ.

ё) «Кам нумайрах пĕлет?» вăйă.

Ачасен малтан тискер чĕр чунсен, унтан вĕçен кайăксен ячĕсене каламалла. Кам нумайрах ят пĕлет, çав çĕнтерет.

ĕ) Вĕçен кайăксем çут çанталăка пысăк усă кӳни çинчен калаçни.

Усă курмалли материал:

*Шăнкăрч — шăхличĕ сассипе юрлакан кайăк. Чĕпписене ӳстернĕ вăхăтра сакăр пине яхăн май нăррине (майский жук) пĕтерме пултарать.*

*Кăсăя пĕр кун хушшинче пине яхăн тĕрлĕ сиенлĕ хурт-кăпшанка тĕп тăвать.*

*Шăнчас (поползень) пĕр кунта 4000 ытла тĕрлĕ хуртпа шĕкĕ шыраса тупма, вĕсене йăвине çĕклесе пырса чĕпписене çăвартан хыптарма ĕлкĕрет.*

Учитель кайăксене упрамалли, пулăшмалли çинчен асăрхаттарса хăварать, фонограмма (кайăксен сассисене) итлеттерет те сăвă калать:

Кайăк-кĕшĕк çухалсан
Пахча çимĕç нихăçан
Тулăх пулмĕ, пĕтĕмпех
Хурт пултарĕ пĕтерме.
Ман чĕре çапла сĕнет:
Çав çунатлă туссене
Куç шăрçи пекех упрар,
Вĕллесем туса парар!

ж) Кроссворд шутлани.

Доска çине учитель клеткăсем ӳкерет, вĕçен кайăксен ячĕсене тупса çырма хушать.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | а | | | | | |
| | к | | | | | |
| | ă | | | | | |
| | ш | | | | | |

**5. Киле ĕç.**

«Куккук килнĕ» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 79—80-мĕш уроксем

### Тема: Çуркунне. Килти чĕр чунсем

***Урок тĕллевĕ:*** чĕр чунсемпе çыхăннă лексикăпа паллаштарасси, пуплеве пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чĕр чунсене ушкăнлама, пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемпе усă курма хăнăхтарасси; 2) чĕр чунсен çурисен ячĕсене аса илесси; 3) чĕр чунсем çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалӗ:*** *утă, патвар, çур аки, йăлтах, хурткăпшанкă, кĕçен, çаран, кутăн чăм, пайти (усси) сахал.*

***Грамматика материалӗ:*** пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемлĕ предложенисем.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** тискер чĕр чунсен ӳкерчĕкĕсем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

Ачасем вĕçен кайăксен ячĕсене астуса юлнине тĕрĕслеме «Вĕçен кайăксем» ятлă вăйă irттерме пулать.

Вăйă пуçличчен учитель ачасене асăрхаттарать:

— Эпĕ вĕçен кайăксен ячĕсене асăнатăп. Эсир вĕсен шутне кĕмен чĕр чун е япала ятне илтсен алă çупăр.

Учитель:

Вĕçсе килчĕç кайăксем:
Шăнкăрчсем те кураксем,
Тилĕсем те шăпчăксем...
Хăшĕ тĕрĕс мар?

Ачасем: *Тилĕсем.*

Учитель:

Вĕçсе килчĕç кайăксем:
Шăнкăрчсем те чĕкеçсем,
Куккуксем те тăрнасем,
Кураксем те кашкăрсем.
Мĕн тĕрĕс мар?

Ачасем: *Кашкăрсем.*

Учитель:

Вĕçсе килчĕç кайăксем:
Шăнкăрчсем те чĕкеçсем,
Куккуксем те упасем.
Мĕн тĕрĕс мар?

Ачасем: *Упасем.*

Учитель:

Вĕçсе килчĕç кайăксем:
Шăнкăрчсем те чĕкеçсем,
Куккуксем те тăрнасем,
Чанасем те кураксем,
Кăсăя та тăмана.
Вăйă пĕтрĕ тупата.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Вăйă вылянă май учитель ачасене урок темине пĕлтерет.

— Эсир вĕçен кайăксен ячĕсемсĕр пуçне вăйăра мĕнле сăмахсем тĕл пултăр?

— *Упасем, тилĕсем, кашкăрсем.*

— Вĕсем ăçта пурăнаççĕ?

— *Вĕсем вăрманта пурăнаççĕ.*

— Эсир тата мĕнле чĕр чунсен ячĕсене пĕлетĕр?

Ачасем калаççĕ. Унтан учитель çак чĕр чунсем тискер чĕр чунсем пулни çинчен калать.

ă) Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Кроссвордпа ĕçлени. Ачасем тупсăмне пĕлнĕ май ӳкерчĕкĕсене кăтартса пыраççĕ.

б) Çыру ĕçĕ. Диктант.

Пĕр ача доска çине çырать, ыттисем тĕрĕслеççĕ.

*Упа, кашкăр, пăши, мулкач, чĕрĕп — тискер чĕр чунсем. Вĕсем вăрманта пурăнаççĕ.*

*Пурăнаççĕ* сăмахра икĕ ***ç*** сас палли çырмаллине асăрхаттармалла.

в) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

3-мĕш ĕçе пурнăçланă чух малтан сăмахсене доска çине çыраççĕ, унтан тетраде куçараççĕ.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасен кĕнекисем хупă. Учитель илемлĕ сасăпа калать:

— Ачасем, паян пирĕн пата урока питĕ нумай «хăна» килет. Мĕнлисем кăна çук! Мăйракаллисем те, хӳреллисем те, пĕчĕк куçлисем те, чакăр куçлисем те пур; кашни хăй майлă калаçать. Мĕнле «хăнасем-ши» вĕсем? Пĕлес килет-и?

Ачасем хуравлаççĕ.

д) Ӳкерчĕксемпе ĕçлени.

Учитель кĕнекесене уçтарать.

— Мĕнле «хăнасем» килчĕç? Кам калать?

Ачасем чĕр чунсен, вĕсен чĕпписен е çурисен ячĕсене каласа тухаççĕ. Калаймасан пĕр-пĕринчен е вĕрентекентен ыйтаççĕ.

— Ачасем, сывлăх сунар-ха «хăнасене». Вĕсем те, тен, пире сывлăх сунĕç.

Учитель малтан хăй сывлăх сунать, кайран ачасем йĕркипе хăнасене сывлăх сунаççĕ.

Тĕслĕхрен:

— Ырă кун, качака!

— Качаки мĕн калать?

— *Ме-ке-кек! тет* (ачасем хорпа калаççĕ).

Учитель:

— Ваня, ӗнене сывлӑх сун.

— *Ырӑ кун, ӗне.*

— Ӗни мӗн калать?

— *Му-у-у! тет* (хорпа).

Малалла ҫакӑн пек пур «хӑнана» та сывлӑх сунаҫҫӗ, «хӑнисем» хуравлаҫҫӗ.

Ӳкерчӗксем айӗнчи пӗчӗк сӑвӑсене вулани.

Учитель ҫак сӑвӑсене П. Хусанкай ҫырнине, вӑл чӑваш халӑхӗн паллӑ поэчӗ пулнине калать. Портретне кӑтартать.

е) Сӑвӑсемпе ӗҫлени:

— кӑвакал ҫинчен тупса вулаҫҫӗ;

— хур ҫинчен тупса вулаҫҫӗ...

Е ҫакӑн пек те калама юрать:

— *Саша, лаша ҫинчен мӗн ҫырнӑ?*

ё) Кӗнекери 5-мӗшпе 6-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

Ачасем схемӑсем мӗнле сӑмахсене пӗлтернине ӑнлантараҫҫӗ, унтан предложенисем туса вулаҫҫӗ.

ӗ) Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Вӗрентӳҫӗ ачасене 8 ушкӑна пайлать, кашни ушкӑн пӗр ӳкерчӗкпе калав хатӗрлет. Ачасем пӗрле ҫыраҫҫӗ, унтан вуласа параҫҫӗ, ытти ушкӑнрисем вӗсен ӗҫне хаклаҫҫӗ.

ж) Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасене 4-мӗш хӑнӑхтарури сӑвӑпа усӑ курма сӗнмелле.

з) Сӑвӑсене вӗҫлени.

1) Кӑт-кӑт! тесе чӗнеҫҫӗ,
   Хӑвалаҫҫӗ кша!
   Мӗн? *(Чӑх.)*

2) Авӑтса калать: «Вӑран!»
   Куккарекук сар ... *(автан).*

3) Сӗтел ҫинче ларать куршак.
   Унтан хӑйма вӑрлать ... *(кушак).*

4) Чух-чух-чух! тесе чӗнеҫҫӗ,
   Хӑвалаҫҫӗ хаҫ! тесе
   Мӗне? *(Сыснана.)*

5) Тӑвата уралла, икӗ хӑлхалла,
   Пӗр хӳреллӗ. Сасси вӑйлӑ:
   Хам-хам-хам! Мӗн вӑл? *(Йытӑ.)*

6) Пӗҫ-пӗҫ! тесе чӗнеҫҫӗ,
   Хӑвалаҫҫӗ прис! тесе
   Мӗне? *(Кушака.)*

7) Нăрик-нăрик! ун юрри.
   Ку вара сысна ... *(çури).*

и) Çыру ĕçĕ.

Ачан вуласа панă текстран килти чĕр чунсен ячĕсене çырса хумалла.

*Ĕне сĕт парать. Сысна аш парать. Чăх çăмарта тăвать. Картара автан çӳрет. Асаннен икĕ хур пур. Качака курăк çиет.*

Кĕнекерен килти выльăхсен ячĕсене çырса илмелле.

й) Кĕнекери 9—12-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Урокри материала кĕнекере ăçта тупма май пулни çинчен каламалла.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 81-мĕш урок

### Тема: Çуркунне садра

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен çурхи садри ĕçсемпе çыхăннă пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) йывăççен ячĕсемпе пуплевре усă курасси; 2) ĕнерхи ĕçсем çинчен пупленĕ чух иртнĕ вăхăтри глаголсемпе усă курма вĕрентесси; 3) садри ĕçсем çинчен çыхăнуллă каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** *тислĕк, наçилкка, кĕреçе, кăпкалат, йăт, шурат.*

***Грамматика материалĕ:*** пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** «Садра ачасем ĕçлени», «Çуркунне» картинăсем е слайдсем, фонохрестомати, садри ӳсен-тăран ӳкерчĕкĕсем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Ачасемпе урок темине, тĕллевĕсене палăртни.

Калаçу йĕркелени:

— Халĕ çулталăкăн хăш вăхăчĕ? Çанталăк мĕнле? Çуркунне çынсем урамра, пахчара мĕнле ĕçсем тăваççĕ? Шкул ачисем пахчара мĕн тăваççĕ?

Ӳкерчĕке пăхса е хăйсем курнине аса илсе ачасем пахчара мĕн туни, мĕнле ĕç хатĕрĕсемпе усă курни çинчен каласа параççĕ.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ, сăмахсене икĕ юпана çыраççĕ: пахчапа çыхăннă сăмахсене пĕрремĕш юпана, садпа çыхăннисене — иккĕмĕш юпана. Ĕçе вĕçленĕ хыççăн пĕр ушкăнĕ доска умне тухса сăмахсене вуласа парать. Ытти ушкăнĕсем итлеççĕ, хăйсеннипе танлаштараççĕ. Пĕр пек пулсан килĕшеççĕ, хăш ушкăнĕ сăмахсене урăхларах пайланă, çав ушкăн доска умне тухать, тĕслĕхсемпе çирĕплетсе сăмахсене мĕнле ушкăнланине ăнлантарать.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Предложенисене тĕрĕс йĕркелеме пулăшма ачасене малтан сăмахсен йĕрки пирки аса илмелле.

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани. «Садра» калавпа ĕçлени:

— ачасем калава çурма сасăпа, унтан сасăпа вулаççĕ;

— ыйтусене хуравлаççĕ;

Хуравне текстра тупса вулаççĕ.

— Садра мĕнле йывăçсем ӳсеççĕ? Петьăпа Миша мĕн тăваççĕ? Камсем йывăçсен тымарĕсене кăпкалатаççĕ? Хĕр ачасем мĕн тăваççĕ? Димăпа Женя мĕн тăваççĕ? Ачасем çинчен мĕн калама пултаратăр?

д) «Астуса юл» вăйă.

Малтан учитель пĕр йывăç ятне калать, тĕслĕхрен, *улмуççи*. Ачан çак йывăç ятне астуса юлмалла, ун çумне тепĕр йывăç ячĕ хушса каламалла. Кам юлашкинчен калать, çав çĕнтерет.

Пĕрремĕш ача: *Улмуççи, чие.*

Иккĕмĕш ача: *Улмуççи, чие, хурлăхан.*

Виççĕмĕш ача: *Улмуççи, чие, хурлăхан, груша.*

Тăваттăмĕш ача: *Улмуççи, чие, хурлăхан, груша, слива.*

Çакăн пекех ĕç хатĕрĕсен ячĕсене каласа выляма пулать:

Пĕрремĕш ача: *Кĕреçе.*

Иккĕмĕш ача: *Кĕреçе, кĕрепле.*

Виççĕмĕш ача: *Кĕреçе, кĕрепле, витре.*

Тăваттăмĕш ача: *Кĕреçе, кĕрепле, витре, лейка.*

...

е) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель курса иртнĕ вăхăтри глаголсем çинчен аса илтерет, схемăсене доска çине ӳкерет.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Эпĕ | л<br>н -тăм(-тĕм)<br>р -рăм(-рĕм) | Эпир | л<br>н -тăм-ăр(-тĕм-ĕр)<br>р -рăм-ăр(-рĕм-ĕр) |
| Эсĕ | л<br>н -тăн(-тĕн)<br>р -рăн(-рĕн) | Эсир | л<br>н -тăр(-тĕр)<br>р -рăр(-рĕр) |
| Вăл | л<br>н -чĕ<br>р -рĕ | Вĕсем | л<br>н -чĕç<br>р -рĕç |

Ачасене каласа пама мĕнле текст пулăшма пултарни çинчен ыйтмалла.

ё) «Лартар симĕс йывăçсем» юрра фонохрестоматипе усă курса вĕренни.

ЛАРТАР СИМĔС ЙЫВĂÇСЕМ

Сăвви *В. Давыдов-Анатрин* Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Айтăр тухар, тантăшсем,
Пурте аслă урама.
Лартар симĕс йывăçсем:
Хурăн, йăмра, хурама.

Пирĕн ешĕл йывăçсем
Ӳсчĕр анлăн кашласа.
Вĕсем çинче кайăксем
Ларччăр юрă юрласа.

Пирĕн аслă урамсем
Илемленччĕр çулсерен.
Эпир уншăн, ачасем,
Тăрăшатпăр чĕререн.

Айтăр тухар, тантăшсем,
Пурте аслă урама.
Лартар симĕс йывăçсем:
Хурăн, йăмра, хурама.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасене «Садра» текстпа усă курмалли çинчен каламалла. Хуравĕсене текстра туптармалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 82—83-мĕш уроксем

### Тема: Çуркунне. Йывăççем

***Урок тĕллевĕ:*** çуркунне йывăççемпе пулса иртекен улшăнусем çинчен чăвашла калаçтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) йывăççен ячĕсене аса илесси; 2) глаголсене тĕрлĕ вăхăтра лартса çуркуннехи ĕçсем çинчен калама вĕрентесси; 3) çуркуннехи йывăççем çинчен панă материалпа усă курса чăвашларан вырăсла, вырăсларан чăвашла куçарма хăнăхтарасси; 4) япала ячĕсене уйăрса илсе вĕсем патне ыйтусем лартма пĕлнине тĕрĕслесси.

***Лексика материалĕ:*** *тăпра, хуç, пилле, амант, хăрат, улмуççи.*

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕсен ыйтăвĕсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** пан улми муляжĕ, ачасем садра ĕçленине кăтартакан ӳкерчĕк е слайд, йывăççен ӳкерчĕкĕсем е слайдсем, фонохрестомати.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

Учитель ачасене тупмалли юмах вуласа парать, тупсăмне пĕлме хушать:

Хĕрлĕ, сарă, çаврака,
Тутлă çимĕç. Яп-яка.
Йывăç çинче хăй ӳсет,
Пур çынна та илĕртет.
Ку мĕн?

Хĕрлĕ енлĕ çаврака,
Кĕрпеклĕ, тутлă.
Мĕн вăл?

«Пан улми» юрра аса илни.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасен сăмахсене икĕ ушкăна уйăрмалла, хăйсем мĕншĕн çапла ушкăнланине ăнлантарса пама пултарччăр. Тĕрлĕрен ушкăнланипе килĕшмелле. Садра тата вăрманта ӳсекен йывăççен ячĕсем çине уйăрмалла пулнине палăртмалла.

в) «Çуркунне садра» темăпа калаçу йĕркелени.

— Садра мĕнле йывăççем лартаççĕ? Лартнă хыççăн мĕн тăваççĕ? Йывăççем мĕнле усă параççĕ?

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

«Пан улми çиме килĕр» текстпа ĕçлени. Сăмахсен пĕлтерĕшĕсем çинчен каланă хыççăн ачасене текста вулаттарма юрать. Учитель ăна мĕнле ăнланнине тĕрĕслет, тепĕр хут вулаттарать те ĕç парать: ачан ĕçне кăтартакан сăмахсене тупса вуламалла.

д) Ялти кукамăшĕн сачĕ çинчен калаçни.

Ачасем садра ӳсекен йывăççене каласа пынă май ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ.

Калав тĕсĕ:

*Пирĕн кукамайăн сад пур. Унта улмуççисем, чие, груша, слива йывăççисем, хура, хĕрлĕ, шурă хурлăхан, хăмла çырли, крыжовник ӳсеççĕ. Вĕсене кукамайпа кукаçи лартнă. Эпир вĕсене пулăшатпăр. Йывăççен, тĕмсен айне кăпкалататпăр, шыв сапатпăр.*

е) Канмалли кунсенче ăçта пулни, мĕн туни çинчен калаçни.

Калаçнă чух ачасем пĕр-пĕрне çакăн пек ыйтусем пама пултараççĕ:

— *Саша, эсĕ канмалли кунсенче ăçта пултăн?*

— *Вăхăта мĕнле ирттертĕн? Мĕн турăн?*

— ...

ё) Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

ĕ) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

*Улмуççи, пан улми* сăмахсене ĕç тетрадьне çырса хураççĕ.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

# 84-мĕш урок

## Тема: Çуркунне. Чечексем

***Урок тĕллевĕ:*** çуркуннехи чечексемпе çыхăннă материалпа усă курса ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çуркуннехи чечексен ячĕсене астуса юласси; 2) пĕр-пĕр япалана е ĕçе сăнласа пама хăнăхтарасси; 3) Хĕрлĕ кĕнекери чечексене мĕншĕн татма юраманнине ăнланма пулăшасси, вĕсем çинчен пуплеттересси; 4) çуркунне çинчен мĕн вĕреннине аса илесси.

***Лексика материалĕ:*** *лантăш, çеçпĕл, кăкшăм курăкĕ, çил курăкĕ, чăпăл курăкĕ, çеçке сар, тавра, ялкăш, кăвар, кĕрен, черченкĕ.*

***Кирлĕ хатĕрсем:*** çурхи чечексен ӳкерчĕкĕсем е слайдсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем ушкăнсемпе ĕçлеççĕ. Малтан сăмахсене çыраççĕ. Кашни ушкăн хăйĕн сăмахĕсене вуласа парать. Пĕр-пĕрне итлесе кирлĕ мар сăмахсене кăлараççĕ, кирлисене хушса предложенисем туса çыраççĕ. Вĕсене вулаççĕ, тĕрĕс йĕркеленине пăхаççĕ. Юлашкинчен предложенисенчен çыхăнуллă калав тăваççĕ. Чи илемлине суйласа илеççĕ. Çав ушкăнри ачасене пурне те «5» паллă лартмалла.

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Кишĕр çинчен каланă чух тĕслĕхри пек калаççĕ. Шăнкăрч çинчен каланă чух çапла каламалла:

— *Мана та паллама вĕрент-ха. Мĕнле вăл?*

Пăши çинчен калаçнă чух:

— *Манăн та пăши çинчен нумай пĕлес килет. Каласа пар-ха.*

г) Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем тӳрех ыйтусене хуравлаймасан ăнланман сăмахсемпе ĕçлемелле, пайăн-пайăн содержание вырăсла калаттармалла. Ыйтусене вырăсла хуравлаттарма е хурава текстра тупса вулаттарма юрать.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Чечексем çинчен мĕнле йĕркепе калассине калаçса татăлмалла, план тумалла.

*Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ чечексене ан татăр.* Çак предложение вулаттармалла, тетрадьсене çыртармалла.

е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Çеçпĕл çинчен каласа пани.

**5. Киле ĕç.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Чечексен чăвашла-вырăсла ячĕсене пăхмасăр вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 85—87-мĕш уроксем

### Тема: И.Я. Яковлев — чăваш халăхне çутта кăлараканĕ

***Урок тĕллевĕ:*** И.Я. Яковлев чăваш халăхне çутта кăлараканĕ пулни çинчен калаçтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) И.Я. Яковлев кам пулни çинчен калаттарасси; 2) И.Я. Яковлевăн халал сăмахĕсемпе паллаштарасси; 3) ырă çын çинчен каласа пама вĕрентесси; 4) хальхи вăхăтри глаголсене текстра туптарасси, вĕсене вырăсла тĕрĕс куçарма вĕрентесси; 5) *ан* татăклă глаголсене уйăрса илтересси, вырăсла куçарттарасси.

***Лексика материалĕ:*** *Чĕмпĕр, çутта кăларакан çын, хак, вăрла, асран кайми, халал, пуçна ан каçăрт, кĕçĕн, ан кӳрентер, тавăрса пар.*

***Грамматика материалĕ:*** тĕрлĕ вăхăтри глаголсен формисем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** И.Я. Яковлев портречĕ, И.Я. Яковлевăн пурнăçне сăнлакан альбом, И.Я. Яковлев çырнă ача-пăча калавĕсем, халал сăмахĕн вырăсла варианчĕ, «И.Я. Яковлев» презентаци.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) И.Я. Яковлевпа, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарни.

Учитель ачасене И.Я. Яковлев портретне кăтартать, пĕлтĕр вĕреннине аса илтерет. Ачасем иккĕмĕш класра вуланă «Автан» калава аса илеççĕ.

Кун хыççăн учитель ачасене И.Я. Яковлев çинчен туллин каласа парать.

Учителе кирлĕ материал:

И.Я. Яковлев 1848 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 18-мĕшĕнче хальхи Тутар Республикине кĕрекен Кăнна Кушки ялĕнче çуралнă. Çуралсассăнах вăл тăлăха юлнă. Ачана кӳршĕри Пахом Энтрийĕн кил-йышĕ усрава илнĕ. Вăл ырă çын пулнă. Иван шкула вĕренме кайнă. Шкултан вĕренсе тухсан Чĕмпĕре мишавайсем хатĕрлекен шкула вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан Иван Чĕмпĕрпе Самара кĕпĕрнисенче çĕр виçекен пулса ĕçлеме пуçлать. Çак ĕçре тăватă çул хушши вăй хурса И. Яковлев ĕç халăхĕн асаплă, тертлĕ, хĕн-хурлă пурнăçне пĕлсе çитет. Унăн тăван халăха çутта тухма пулăшас хĕрӳ шухăш çуралать. Вăл малалла пĕлӳ пухма тăрăшать, Чĕмпĕр гимназийĕн пиллĕкмĕш класне вĕренме кĕрет. Çав хушăрах хулари пуян çын ачисене вĕрентет.

Гимназирен ылтăн медальпе вĕренсе тухать, Хусан университетне вĕренме кĕрет. Гимназире вĕреннĕ чухне И.Я. Яковлев ĕç халăхне çутта кăларма тăрăшакан вырăс çыннисемпе, уйрăмах Илья Николаевич Ульяновпа, çывăх паллашнă. Кĕçех вăл пулăшнипе Чĕмпĕрте чăваш шкулĕ уçăлать, унта чăваш ялĕсенчи ачасем вĕренме пуçлаççĕ. 1871—1872 çулсенче И.Я. Яковлев чăваш алфавитне йĕркелесе çитерет, унпа усă курса чăвашла букварь пичетлесе кăларать. Часах çак букварьпе ачасем тăван чĕлхепе вулама, çырма вĕренме тытăнаççĕ.

Хусан университетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн И.Я. Яковлевăн малашнехи пурнăçĕ чăваш халăхне çутта кăларас, чăваш ачисене хут вĕрентес ĕçпе çыхăнса тăнă.

И.Я. Яковлев шкулсен инспекторĕ пулса ĕçленĕ. Вăл чăваш шкулĕсем нумай уçнă, вĕсенче ĕçлеме Чĕмпĕрте учительсене вĕрентсе кăларнă, кĕнекесем çырнă.

И.Я. Яковлев 1930 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнче 82 çулта вилнĕ.

Учитель ӳкерчĕксемпе усă курса И.Я. Яковлев çинчен кĕскен каласа парать. Шупашкарта унăн палăкĕ пурри çинчен пĕлтерет.

в) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

— текста вуласа ăнланни;

— ыйтусене хуравлани:

— И.Я. Яковлев ăçта пурăннă? Вăл мĕн тунă? *(Чăваш шкулĕ уçнă, чăваш алфавитне тунă...)*

Ачасем хӑйсем тӗллӗн хуравлаймаҫҫӗ пулсан текстпа усӑ курма юрать.

г) «Чакак», «Пулӑ сӗрни» калавсене учитель вуласа парать, ӑнланнине тӗрӗслет.

д) Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасем хуравсене тӳрех тупаймасан хальхи вӑхӑтри глаголсем ҫинчен аса илмелле, схемисене доска ҫине ӳкермелле.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Эпӗ | -атӑп(-етӗп) | Эпир | -атпӑр(-етпӗр) |
| Эсӗ | -атӑн(-етӗн) | Эсир | -атӑр(-етӗр) |
| Вӑл | -ать(-ет) | Вӗсем | -аҫҫӗ(-еҫҫӗ) |

е) Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасем икшерӗн калаҫаҫҫӗ: пӗри ыйтусем парать, тепри хуравлать. Унтан улшӑнаҫҫӗ.

ё) Кӗнекери 6—8-мӗш ӗҫсене, ӗҫ тетрадӗнчи 2—4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани. И.Я. Яковлевӑн калавӗсене аса илни.

Учитель ачасене пӗчӗк сӑвӑсем калать, вӗсене И.Я. Яковлевӑн калавӗсен ячӗсемпе вӗҫлеме хушать.

Кӑшкӑрать ирех паян
Киккириклӗ сар ... *(автан).*
Шӑп ларасчӗ сан пӑртак,
Сик хӳреллӗ чак-... *(чакак).*

И.Я. Яковлевӑн халал сӑмахне учитель вуласа парать, словарьпе ӗҫлеттерет, глаголсен формисене палӑрттарать, куҫарттарать.

Халалӑн вырӑсла варианчӗ пулсан лайӑхрах пулмалла.

ё) Кӗнекери 9—11-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

**5. Киле ӗҫ.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**6. Ӗҫ тетрадӗнчи 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани, вӗреннине ҫирӗплетни.**

Класра глаголсен тӗрлӗ вӑхӑт формисем ҫинчен аса илеҫҫӗ, киле панӑ ӗҫе ӑсра тӑваҫҫӗ, килте ҫырса пурнӑҫлаҫҫӗ. Ырӑ ҫын ҫинчен каласа пама вӗренеҫҫӗ. И.Я. Яковлевӑн халалӗпе усӑ кураҫҫӗ (6-мӗш ӗҫ).

И.Я. Яковлев калавӗсем:

## ЧАКАК

Чакак ҫулла вӑрманта пурӑнать, юр ҫусан яла пырать. Ҫулла вӑрманта вӑл чӗпӗ кӑларать, ялтан ҫӑмарта вӑрласа кайса чӗпписене тӑрантарать. Хӗлле сивӗ пулсан йывӑҫ ҫине ларать те чак-чакак, чак-чакак тесе чаклатать.

ПУЛĂ СĔРНИ

Пĕр аслă кӳлĕре чăвашсем, вырăссем, мăкшăсем пулă сĕрсе çӳреççĕ тет.

Чăвашсем сĕрсе кăлармассерен:

— Çук та çук! — тесе калаççĕ тет.

Мăкшăсем сĕрсе кăлармассерен:

— Араç та араç! — тесе калаççĕ тет.

— Ну епле чăвашпа мăкшă телейлĕ! Щӳкке те карас, щӳкке те карас тытаççĕ, — тесе тĕлĕнеççĕ тет вырăссем.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 88—89-мĕш уроксем

### Тема: Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш Республикин Патшалăх символĕсемпе паллаштарасси, вĕсем çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) Чăваш Республикин Патшалăх символĕсемпе, вĕсен авторĕсемпе паллаштарасси; 2) Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕн вырăсла куçарăвне чăвашлипе шайлаштарттарасси; 3) тăван республика çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** *патшалăх, мухтав, асран кайми.*

***Кирлĕ хатĕрсем:*** Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем, фонохрестомати, «Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем» презентаци.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Учитель Чăваш Республикин Патшалăх ялавне, гербне кăтартать, гимнне ачасене ура çине тăратса итлеттерет.

в) Кĕнекери 4—6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Учителе кирлĕ материал:

Кашни патшалăхăн хăйĕн символĕсем пур. Вĕсем шутне герб, ялав тата гимн кĕреççĕ. Çак символсем патшалăх суверенитетне (никама пăхăнманлăхне) палăртаççĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх символĕсене республикăн Аслă Канашĕ 1992 çулхи апрель уйăхĕн 29-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

Ялав — тăватă кĕтеслĕ, çӳлти пайĕ сарă тĕслĕ, аялти — тĕксĕм хĕрлĕ. Варринче тăван халăхăн авалхи эмблемисем — «Пурнăç йывăçĕ» (чĕрĕлсе вăй илнин символĕ) тата «Виçĕ хĕвел». Вĕсем йĕпкĕн хĕрлĕ тĕслĕ. Çутă сарă тĕс чăвашсемшĕн чи хитри те чи пахи шутланнă. Вăл — Хĕвел çутин тĕсĕ.

«Пурнăç йывăçĕ» пирĕн тăван халăх ĕмĕрсем хушшинче утса тухнă вăрăм çула палăртать. Ăна авалхи Пăлхарсен руна çырулăхне тĕпе хурса ӳкернĕ. Вăл чăвашсем сума сăвакан хăватлă та вăрăм ĕмĕрлĕ юмана аса илтерет.

«Пурнăç йывăççин» никĕсĕ — йăмăх хĕрлĕ «уй» — халăх мĕн ĕлĕкрен ирĕклĕх çĕнсе илме тăрăшнине пĕлтерет. Йăмăх хĕрлĕ «уй» — чăваш çĕрĕ.

«Пурнăç йывăççи» туратланса тăрать. Вĕсен тăррине сакăр кĕтеслĕ виçĕ çăлтăр çутатать. Çак çăлтăр — чăваш тĕррин чи анлă сарăлнă эрешĕ. Вăл — илемпе хăтлăх палли.

Чăваш Республикин Патшалăх гербĕ те сарă тата йăмăх хĕрлĕ тĕссенчен тăрать. Ун çинче те «Пурнăç йывăçне» ӳкернĕ щит, тăрринче — сакăр кĕтеслĕ виçĕ çăлтăр (чăвашсен авалхи «Виçĕ хĕвел» эмблеми), аялта — «Чăваш Республики — Чувашская Республика» тесе çырнă лента, вĕçĕнче — хăмла ӳкерчĕкĕ. Герб çинчи хăмла чăваш халăхĕн пуянлăхне тата тăнăç пурнăçне палăртать.

Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ тесе «Тăван çĕршыв» юрра çирĕплетнĕ. Унăн авторĕсем — Герман Лебедев композитор тата Илле Тукташ сăвăç. Гимн республикăра паллă тăвакан халăх уявĕсенче, чаплă пухусене уçнă тата хупнă чухне, тĕрлĕ церемони вăхăтĕнче, Патшалăх ялавне çĕкленĕ чухне янăрать. Чăвашрадио передачисем вара кашни ир гимн юрланипе пуçланаççĕ.

Тăван Патшалăх символĕсене хисеплесси — кашни çын тивĕçĕ.

Малтан ачасем Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем çинчен калаççĕ, унтан вĕрентӳçĕ хушса калать.

г) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Гимна тĕрĕс вулама, фонохрестоматипе усă курса юрлама вĕренеççĕ.

д) Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Чăвашла тунă текста доска çине çырмалла.

**5. Киле ĕç.**

Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕн сăмахĕсене пăхмасăр калама вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 90-мĕш урок

### Тема: К.В. Иванов — чăваш халăх поэчĕ

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш халăх поэчĕ К.В. Иванов çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш халăх поэчĕ К.В. Ивановăн пурнăç çулĕпе, унăн ĕçĕсемпе паллаштарасси; 2) çын, хула, урам ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырма хăнăхтарасси; 3) глаголсен вăхăтне палăртма, ыйтăвĕсене пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** *çеçен хир, чĕрĕл, хĕрт, çарал, сĕм вăрман.*

***Грамматика материалĕ:*** пайăр ятсем, тĕрлĕ вăхăтри глаголсен формисем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** К.В. Иванов портречĕ, «К.В. Иванов» ятлă альбом, К.В. Иванов çырнă кĕнекесем, «К.В. Иванов — чăваш халăх поэчĕ» презентаци.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

Урок пуçламăшĕнче И.Я. Яковлев çинчен аса илеççĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçни çинчен, çав шкулта чăваш халăхĕн маттур ывăлĕсемпе хĕрĕсем вĕренни çинчен калаçаççĕ. Унтан учитель К.В. Ивановăн портретне кăтартать, альбомпа усă курса ун çинчен кĕскен каласа парать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Учителе кирлĕ материал:

Константин Васильевич Иванов 1890 çулта, çу (май) уйăхĕн 15 (27)-мĕшĕнче Ĕпхӳ кĕпĕрнин Пелепей уесĕнчи Слакпуç ятлă ялта чăваш хресченĕн кил-йышĕнче çуралнă. Халĕ çав ял Пушкăрт Республикин Пелепей районне кĕрет.

1898 çулта К. Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн хатĕрлев класне вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл тăван халăх сăмахлăхĕпе тата литературăпа интересленме пуçлать. Вăл нумай вуланă, халăх юмах-халапне, сăвви-юррине итлеме юратнă, вĕсене пуçтарса пынă. Хăй те сăвăсем çырма тытăннă. 1905—1907 çулсенче хулара та, ялта та халăх кивĕ йĕркесене хирĕç çĕкленнĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен çамрăксем те пăлханма пуçлаççĕ. Уйрăмах вăл К. Иванов вĕреннĕ класра сисĕннĕ. Хусан вĕрентӳ округĕн пуçлăхĕсем К. Ивановпа унăн юлташĕсем вĕренекен класа хупма хушаççĕ, вĕренекенсене килĕсене салатса яраççĕ.

Пултаруллă çамрăка И.Я. Яковлев манман, 1907 çулхи кĕркунне ăна Чĕмпĕре чĕнсе илнĕ те вырăсла кĕнекесене чăвашла куçарса кăларас ĕçе хутшăнтарнă. К. Иванов хаваслансах ĕçлеме тытăннă. Вырăс халăхĕн паллă поэчĕсен ĕçĕсене чăвашла куçарнипе пĕр вăхăтрах вăл хăй те сăвăсем çырнă. Ку хушăра хăйĕн чи ăста, пур енчен пулса çитнĕ хайлавĕсене — «Икĕ хĕр» сăвăлла юмах, «Тимĕр тылă» тата «Тăлăх арăм» балладăсем, «Нарспи» поэма — çырнă. Литература ĕçне туса пынипе пĕрлех К. Иванов хăй тĕллĕн нумай вĕреннĕ, учитель ятне илме экзамена хатĕрленнĕ. 1909 çулхи çуркунне Чĕмпĕрти арçын ачасен гимназийĕ çумĕнче экзамен тытса халăх шкулĕн учителĕ ятне илнĕ.

1910—1914 çулсенче К.В. Иванов ачасене вĕрентес ĕçпе пурăннă. Литературăра асăннă тапхăрта вăл нумаях ĕçлеймен. Поэта чир аптратма пуçлать. Вăл ӳпке туберкулезĕпе тата хырăм катарĕпе чирлесе ӳкет. 1915 çулхи пуш (март) уйăхĕн 13 (26)-мĕшĕнче К.В. Иванов 25 çула çитмесĕрех вилнĕ.

ă) Кĕнекери 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ĕçе пурнăçланă чухне «Нарспи» поэмăн вырăсла куçарнă сыпăкĕпе усă курмалла.

б) «Константин Васильевич Иванов» текстпа ĕçлени:

— текста вуласа ăнланни;

— ыйтусене хуравлани (текстпа усă курса хуравлаççĕ):

— К. Иванов ăçта вĕреннĕ? Ăна кам вĕрентнĕ? Вăл кам пулса ĕçленĕ? Поэт мĕн-мĕн çырнă?

в) Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

г) Кĕнекери 7—9-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

«Çулталăк хушши» сăвва вулани.

Учитель кĕнекери ӳкерчĕксене кăтартать, вĕсенче çулталăкăн хăш вăхăчĕ сăнланнине ыйтать. Ачасем хуравлаççĕ. Унтан учитель К.В. Иванов çырнă сăвă йĕркисене вулать, тупсăмне тупма хушать.

Çакăн пек ĕçлесе сăвва пĕтĕмĕшле вуласа тухаççĕ, куçараççĕ, илемлĕ вулама вĕренеççĕ.

Çак ĕç хыççăн учитель кĕнекесене хуптарать, ачасем сăвва мĕнле ăнланнине тĕрĕслет: çаврасене арпаштарса калать, ачасен тимлĕ итлесе çулталăк вăхăтне тĕрĕс каламалла. Сăвва кам çырнине ыйтать, К.В. Иванов çинчен вĕреннине пĕтĕмлетет.

д) Ачасем хăйсен ĕçĕсене хак пани.

**5. Киле ĕç.**

«Çулталăк хушши» сăвăран хальхи çулталăк вăхăтне сăнлакан йĕркесене пăхмасăр калама вĕренмелле.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 91—93-мĕш уроксем

### Тема: Чăваш театрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çинчен калаçтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çинчен пĕлесси; 2) театрпа çыхăннă паллă çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарасси; 3) театрта пулни çинчен калаçма вĕрентесси; 4) «Кам-ши кĕнĕ пахчана?», «Юлхав» сăвăсемпе сценка йĕркелесе хатĕрлесси; 5) пайăр ятсене уйăрса илсе мĕнле çырмаллине ăнлантарасси.

***Лексика материалĕ:*** *Хусан, хĕрри, вырнаç, лекет, хуçа, халех, шан, йыш.*

***Грамматика материалĕ:*** хисеп ячĕсем, пайăр ятсем.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** театр ӳкерчĕкĕ, «Шупашкар» кĕнеке, театр çинчен тухнă буклетсем, чăваш артисчĕсен сăн ӳкерчĕкĕсем, «Чăваш патшалăх академи драма театрĕ» презентаци.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Умĕнхи калаçу. Учитель ачасенчен мĕнле спектакльсем курни, Шупашкарта мĕнле театрсем пурри çинчен ыйтать. Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çинчен мĕн пĕлнине каласа пама хушать.

— Ăçта вырнаçнă? Мĕнле? Унта пулнă-и? Театрта мĕн тунă?

в) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

«Чăваш театрĕ» текстпа ĕçлени:

— текста вуласа панă хыççăн учитель ачасенчен мĕн ăнланнине ыйтать;

— харпăр хăй тĕллĕн вуласан ачасем çак ыйтусене хуравлаççĕ:

*Чăваш патшалăх академи драма театрĕ ăçта вырнаçнă? Вăл мĕнлерех? Унта камсем ĕçлеççĕ?*

— вĕрентӳçĕ чăваш театрĕ çинчен мĕн каланине тепĕр хут текстран тупса вулама хушать.

г) Кĕнекери 5—8-мĕш ĕçсене тата ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

д) Кĕнекери 9—11-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасенчен вĕсем курнă спектакльсем çинчен ыйтса пĕлни.

Чăваш артисчĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене кăтартса вĕсемпе кĕскен паллаштармалла. Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çинчен кăларнă буклетпа усă курмалла.

е) Чăваш театрĕн историйĕпе кĕскен паллаштарни.

Учителе кирлĕ материал:

Чăваш театрĕ 1918 çулта Хусанта уçăлнă. Ăна пуçарса яраканĕ Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский пулнă. 1920 çулта театр Шупашкара куçса килнĕ. 1976 çулта театр коллективĕ Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă. Театрăн хальхи çуртне 1961 çулта туса пĕтернĕ. Пĕтĕмпе унта 800 вырăн. 1961 çулхи октябрь уйăхĕн 17-мĕшĕнче çак çуртра пĕрремĕш спектакль лартнă. Театра спектакль курма ялпа хула çыннисем çӳреççĕ. Театр коллективĕ çĕнĕлле ĕçлеме тăрăшать. Коллективра паллă артистсем нумай: Вера Кузьмина, Нина Яковлева, Валерий Семенов, Валентина Трифонова, Нина Григорьева, Валерий Яковлев, Николай Григорьев т. ыт. те.

ё) Чăваш театрĕн историйĕпе çыхăннă материалпа ĕçлени:

— учитель И.С. Максимов-Кошкинский портретне кăтартать;

— чăваш театрĕ çинчен çырнă текста вулама хушать;

— ыйтусене хуравлаттарать;

— текст çыртарать.

ĕ) Пĕрремĕш чăваш артисчĕсен пултарулăхĕпе тĕплĕнрех паллаштарни.

Учителе кирлӗ материал:

Петр Николаевич Осипов (1900—1987) сцена ҫинче выляма Хусан университечӗн медицина факультечӗн студенчӗ пулнӑ чухне тытӑннӑ. Пӗр хушӑрах театрта та вылянӑ, университетра та вӗреннӗ. Вӗренсе тухсан тухтӑр пулса ӗҫленӗ, театр ӗҫне те пӑрахман. Вӑл пьесӑсем ҫырнӑ: «Икӗ каччӑн пӗр шухӑш», «Кушар», «Айтар», «Кулленхи симфони» т. ыт. те. Вӗсем халӑха хӑйсен шухӑш тарӑнӑшӗпе, сӑнарсен витӗмлӗхӗпе хумхантарaҫҫӗ, илӗртеҫҫӗ.

П.Н. Осипов — «Чӑваш АССР халӑх писателӗ», «Чӑваш АССР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ», «РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗ» хисеплӗ ятсене илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Вӑл медицина наукисен кандидачӗ.

Ҫакӑн пек пултаруллӑ ҫын пулма ӑна мӗн пӗчӗкрен тӑрӑшса вӗренни, ӗҫлени, пур енлӗ аталанса пыни, пур ӗҫе те вӗҫне ҫити пурнӑҫлани пулӑшнӑ.

Ольга Ивановна Ырзем (1892—1979) 60 ҫул хушши театр сцени ҫинче вылянӑ. Хусанти педагогика институтӗнче вӗреннӗ чухнех кашни рольне хӑйӗн чунне парса калӑпланӑ. Чи паллӑ артистка пулса тӑнӑ. 1933 ҫулта ӑна «Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артистки» ята панӑ. Каярахпа вӑл «Чӑваш АССР халӑх артистки» ята илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Ольга Ивановна Ырзем ачасене юратнӑ. Вӗсене лайӑх пӑхса ӳстересси уншӑн чи пысӑк телей пулнӑ.

ж) Кӗнекери 11-мӗшпе 12-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

Фонохрестоматипе усӑ курса П. Эйзинӑн «Кам-ши кӗнӗ пахчана?» сӑввипе ӗҫлени.

Текстпа усӑ курса сценка лартма хатӗрленни.

з) Театрта харпӑр хӑйне мӗнле тытмалли, спектакль курнӑ чух мӗнле лармалли ҫинчен калаҫу йӗркелени.

Учитель ачасене этикет правилисемпе паллаштарать.

и) «Театр кассинче» вӑйӑ.

Пӗр ача кассир пулать, ыттисем — курма килекенсем. Ачасем кассирпа калаҫҫӗ, билет туянаҫҫӗ.

Тӗслӗх:

— *Ырӑ кун пултӑр!*

— *Ырӑ кун!*

— *Сирӗн билетсем пур-и?*

— *Ҫапла, пур.*

— *Мана билет парӑр-ха.*

— *Тархасшӑн.*

— *Тавтапуҫ.*

Унтан ачасем пӗр-пӗринпе калаҫаҫҫӗ.

*— Санăн вырăн миçемĕш ретре?*
*— Манăн вырăн пиллĕкмĕш ретре.*
*— Манăн та пиллĕкмĕш ретре.*

й) Кĕнекери 14-мĕшпе 15-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5. Киле ĕç.**

Чăваш театрĕ çинчен ашшĕ-амăшне килте вуласа тата каласа памалла. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 7-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

Учитель ачасене Чăваш патшалăх академи драма театрне илсе кайма пултарать. Спектакль пуçланиччен артистсемпе тĕл пулма, театр çинчен каласа панине итлеме пултараççĕ.

Учитель артистсен сăнĕсене кăтартса вĕсем çинчен каласа пама сĕнет, 2—3 паллă артистпа калаçса татăлать, хăйсем çинчен каласа пама ыйтать.

Театра кайма май килмесен заочно экскурси йĕркелеме юрать. Урокра артистсен сассине е пĕр-пĕр спектакль сыпăкне итлеттермелле. Пĕрер артистне урока чĕнме е артистсен сăн ӳкерчĕкĕсене кăтартса вĕсем çинчен каласа пама та юрать.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 94—96-мĕш уроксем

### Тема: Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарса ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн историйĕпе паллаштарасси; 2) Н. Павлова балерина çинчен вуласа пĕлесси; 3) тĕне кĕмен чăвашсен арçын ача тата хĕр ача ячĕсемпе паллаштарасси, вĕсене уйăрма вĕрентесси; 4) Г.Я. Хирбю, Ф.С. Васильев композиторсен пултарулăхĕпе паллашса вĕсем çинчен калаçтарасси; 5) урокра илнĕ пĕлӳпе усă курса Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ çинчен диалог тутарасси.

***Лексика материалĕ:*** *пултарулăх, тĕлĕнтер, уçланкă, асамлă, ытам, кермен.*

***Грамматика материалĕ:*** чăвашла предложенири сăмахсен йĕрки.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** «Шывармань» опера, «Сарпике» балет сыпăкĕсем; Н.В. Павловăпа Ф.С. Васильев портречĕсем, оперăпа балет театрĕ çинчен хатĕрленĕ буклет, фонохрестомати, «Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ» презентаци.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

Чăваш патшалăх оперăпа балет театрне кайса курни, унта мĕн-мĕн курни-пĕлни çинчен калаçни.

ă) Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

«Савăнăçлă кун» текстпа усă курса Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ çинчен çыхăнуллă калав йĕркелени.

в) Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Хăнăхтарăва пурнăçличчен Н.В. Павловăн портретне кăтартмалла, ун çинчен вуласа пĕлме хушмалла.

г) Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасене сăмахсене вулаттармалла, мĕншĕн вĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырнине, вĕсем мĕне пĕлтернине ыйтмалла.

Ачасем сăмахсене тĕрлĕрен ушкăнлама пултараççĕ, мĕншĕн çапла ушкăнланине ăнлантарса пама пултарччăр.

д) Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн историйĕпе паллаштарни.

В ĕ р е н т ӳ ç ĕ   в а л л и   м а т е р и а л:

Оперăпа балет театрĕ 1959 çулхи декабрь уйăхĕнче Чăваш академи драма театрĕн çуртĕнче уçăлнă. Ăна ертсе пыма Б. Марков режиссера уйăрса лартнă. Икĕ театр пĕрле ĕçлесе пынă. Ун чухне ăна Музыка театрĕ тенĕ.

Театрти пĕрремĕш опера «Шывармань» (Водяная мельница) ятлă пулнă. Ăна чăвашсен паллă композиторĕ Федор Семенович Васильев çырнă. Ку оперăна лартма 200 яхăн çын хутшăннă. Вĕсем хушшинче артистсем çеç мар, каменщиксем, слесарьсем, шоферсем, медицина сестрисем, пир тĕртекенсем, вĕрентекенсем, инженерсем, студентсем пулнă. Вĕсем репетицисене каçхине ĕç хыççăн çӳренĕ.

Чăваш оперисемсĕр пуçне театрта пĕтĕм тĕнчери классиксен оперисемпе опереттисене лартнă. Вĕсен шутĕнче «Евгений Онегин», «Алеко», «Паяцы», «Севильский цирюльник» оперăсем, «Сильва», «Вольный ветер», «Цыганский барон» тата ытти опереттăсем.

Чăваш музыка театрĕн тепĕр паллă кунĕ — чăваш театрĕн сцени çинче пĕрремĕш балет кăтартни. Вăл 1967 çулхи май уйăхĕн 19-мĕшĕнче пулнă. Ку — А. Аданăн «Жизель» балечĕ. Унта А.Я. Ва-

ганова ячĕллĕ Ленинградри хореографи училищине вĕренсе пĕтерсе килнĕ çамрăксем ташланă.

1970 çулхи июнь уйăхĕн 26-мĕшĕнче пĕрремĕш чăваш балечĕ çуралнă. Вăл «Сарпике» ятлă. Ăна та Ф.С. Васильев композитор çырнă. Балетмейстерĕ — В. Богданов.

1969 çултан пуçласа музыкăпа драма театрĕнчен икĕ театр пулать — операпа балет театрĕ тата Чăваш патшалăх академи драма театрĕ.

Халăх юратнă оперăсем шутне «Нарспи», «Чапай» кĕреççĕ. Вĕсене чăваш халăх поэтне К.В. Иванова тата Граждан вăрçин мухтавлă паттăрне В.И. Чапаева халалласа çырнă.

Хĕрлĕ Ялав орденлĕ К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕпе Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ — чăвашсен чăн-чăн культура вучахĕсем. Вĕсенче ĕçлекенсем пĕтĕм чăваш халăхне хăйсен ăсталăхĕпе илĕртеççĕ, килентереççĕ.

е) Кĕнекери 9—12-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Кĕнекери 12-мĕш хăнăхтарура панă сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе çыраççĕ.

ё) Ачасене Ф.С. Васильев, Г.Я. Хирбю композиторсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарни.

Учитель ачасене музыкăллă комедисем, оперăпа балет лартнă чух кĕвĕ (музыка) пысăк вырăн йышăнни çинчен калать. Сăмахран, «Нарспи» оперăн музыкине Г. Хирбю çырнă. Кĕвĕ çут çанталăк илемне, этем шухăш-кăмăлне, туйăмне лайăхрах ăнланма, вăйлатма пулăшать.

Учитель композиторсен пултарулăхĕпе тĕплĕнрех паллаштарать.

Учителе кирлĕ материал:

Григорий Яковлевич Хирбю (Хирбиков) 1911 çулта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Аксарино ялĕнче çуралнă. Шупашкарти коммуна-шкулта вĕреннĕ вăхăтрах С. Максимов сĕннипе музыка шкулне çӳренĕ. Чăваш патшалăх хорĕнче юрланă, чăвашсен музыка театрĕн техникумĕнче вĕреннĕ. Техникумра ăна Ф.П. Павлов, В.М. Кривоносов, И.В. Люблин, С.И. Габер вĕрентнĕ.

Г. Хирбю питĕ маттур ача пулнă. Унăн пултарулăхĕпе Степан Максимович Максимов музыка шкулне кĕнĕ чухнех интересленнĕ. Вăл кĕмĕл сасăллă ачана Сĕнтĕрвăрри районĕн юррисене юрлаттарнă, вĕсене çырса илнĕ. Вĕсем «Песни верховых чуваш» кĕнекене кĕнĕ.

Музыка техникумĕнче Г. Хирбюне Ф.П. Павловпа В.М. Кривоносов композиторсем вĕрентнĕ.

Григорий Хирбю пĕччен, хорпа юрламалли юрăсем, симфони оркестрĕ валли сюитăсемпе увертюрăсем, музыка комедийĕсем, оперăсем çырнă.

Г. Хирбюн «Нарспи» опери хӑйӗн виҫипе чи чаплӑ, капмар, халӑх шухӑш-туйӑмне кӑтартакан опера пулса тӑрать. Поэмӑн шухӑшне вӑл кӗвӗпе тӗрӗс кӑтартса пама пултарнӑ. «Нарспи» опера ҫырнӑ чух Г. Хирбю халӑх юррисемпе анлӑ усӑ курнӑ: «Алран кайми», ташӑ кӗввисем, туй юррисем т. ыт. те.

Г. Хирбю юррисен кӗввисем — ансат, ҫепӗҫ те ырӑ кӑмӑллӑ, чӗререн шӑранса тухакан кӗвӗсем. Юрӑсем ҫырма вӑл чи лайӑх сӑвӑсем суйласа илнӗ. Вӗсен шутне П. Хусанкайӑн, Ҫеҫпӗл Мишшин, Н. Ваҫанккан, В. Урташӑн, В. Давыдов-Анатрин, А. Артемьевӑн, Г. Орловӑн, Ю. Петровӑн сӑввисем кӗреҫҫӗ.

Г. Хирбю ачасем ҫинчен те манман. Вӗсем валли темиҫе юрӑ пуххи те кӑларнӑ.

Г. Хирбю — Ҫеҫпӗл Мишши тата К.В. Иванов ячӗллӗ премисен лауреачӗ. Вӗсене ачасем валли хывнӑ юрӑсемшӗн, «Нарспи» оперӑшӑн панӑ.

Федор Семенович Васильев Муркаш районӗнчи Тури Панкли ялӗнче 1920 ҫулта ҫуралнӑ. Шкултан вӗренсе тухсан Шупашкарти музыка училищинче хор дирижерӗ пулма вӗреннӗ, консерватори пӗтернӗ. Чӑвашсен юрӑпа ташӑ ансамблӗн хормейстерӗ пулса ӗҫленӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче танкист пулнӑ, Мускав, Орел хулисене хӳтӗленӗ, Украинӑна, Польшӑна, Чехословакие ирӗке кӑларнӑ ҫӗре хутшӑннӑ, Берлина ҫитнӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн чӑваш музыкине малалла аталантарассишӗн тӑрӑшнӑ.

Ф. Васильев — пултаруллӑ чӑваш композиторӗ. Чи малтанхи произведенийӗсем — ачасем валли ҫырнӑ юрӑсем: «Шӑпчӑк», «Летчик пулӑн», «Сӑпка юрри», «Шкул ачисен юрри» т. ыт. те.

Каярахпа сонатӑсем, сюитӑсем, симфониеттӑсем, оперӑсем, ораторисемпе кантатӑсем, балет ҫырнӑ.

Ф.С. Васильев — пӗрремӗш чӑваш оперине тата пӗрремӗш чӑваш балетне ҫыраканӗ.

«Шывармань» оперӑна 1957 ҫулта ҫырнӑ, пӗрремӗш хут ӑна музыкӑпа драма театрӗнче 1960 ҫулта лартнӑ. Оперӑна халӑх хапӑл туса кӗтсе илнӗ, пысӑка хурса хакланӑ.

«Сарпике» балет либреттине Е. Никитин юмахне тӗпе хурса ҫырнӑ. Балет кӗвви — чуна пырса тивекен, ҫепӗҫ те кӑмӑллӑ, савӑнӑҫлӑ кӗвӗ.

Ф. Васильев «Арҫури» балет ҫырнӑ. Либретти те хӑйӗнех.

Хӑйӗн пултарулӑхӗпе, ӗҫӗпе Ф.С. Васильев тӑван халӑха тӗлӗнтерет, килентерет, ырӑ чунлӑ пулма пулӑшать.

Учитель Ф.С. Васильев ҫырнӑ «Шывармань» опера е «Сарпике» балет кӗввине итлеттерет.

ӗ) Кӗнекери 13-мӗшпе 14-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

ж) «Улма йывăç» юрăпа (фонохрестоматипе) ĕçлени:
— сăвва вуласа ăнланни;
— илемлĕ вулама вĕренни;
— юрра юрлама вĕренни.

УЛМА ЙЫВĂÇ

Сăвви *Н. Шелепин* Кĕвви *Г. Хирбюн*

Юлташăмсем, тусăмсем,
Çуркуннехи илемсем.
Ман çиййĕме пăхăр-ха!
Пурçăн чаршав витрĕм эп.
Чечек айне хăвартăм
Чаплă шăпчăк юрăçне.
Колхозсенчи садсене
Ырă шăршă тултартăм.
Мĕнпур ачи-пăчине
Тутлă улма çитерĕп.

Кашни йĕркене икĕ хут юрламалла.

Ачасене Чăваш патшалăх оперăпа балет театрне экскурсие илсе кайма юрать.

**5. Киле ĕç.**

Ашшĕ-амăшĕсене паян урокра мĕн çĕнни пĕлни çинчен каласа памалла. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 97—98-мĕш уроксем

### Тема: Музыка инструменчĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** музыка инструменчĕсен ячĕсене кĕртсе ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) музыка инструменчĕсемпе паллаштарасси, вĕсен ячĕсене астуса юласси; 2) пушă вăхăта мĕнле ирттерни çинчен калаçтарасси; 3) Ф.П. Павловпа С.М. Максимов композиторсем çинчен пĕлтересси; 4) «Пĕлĕве сутăн илеймĕн» калава рольсемпе вулама хăнăхтарасси.

***Лексика материалӗ:*** *кӳршӗ, сутӑн, тен, пӗлӳ, шӑпӑр, сӑрнай, палнай, купӑс, кӗсле, шӑхлич, сӗрме купӑс.*

***Грамматика материалӗ:*** чӑвашла предложенисенчи сӑмахсен йӗрки.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** Ф.П. Павловпа С.М. Максимов портречӗсем, музыка инструменчӗсем е вӗсен ӳкерчӗкӗсем, фонохрестомати.

## *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, малтан вӗреннине аса илни.**

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) Урок темине, тӗллевӗсене пӗлтерни. Калаҫу йӗркелени.

ӑ) Кӗнекери 1—4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

Чӑваш тата ытти халӑхсен музыка инструменчӗсем ҫинчен калаҫни. Ачасен музыка инструменчӗсен ячӗсене астуса юлма тӑрӑшмалла.

б) Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ачасем пушӑ вӑхӑта мӗнле ирттерни, кружока ҫӳрени, унта мӗн тума вӗренни ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Унтан учитель калаҫӑва пӗтӗмлетсе кашни ҫыннӑн мӗн пӗчӗкрен ырӑ тӗллев пулмаллине ӑнлантарать.

в) «Ӳссен эсӗ кам пулан?» вӑййа выляни.

— Эпӗ вӗрентӳҫӗ. Сережа, эсӗ кам пулатӑн? — ыйтать вӗрентӳҫӗ.

— *Эпӗ летчик пулатӑп. Таня, эсӗ кам пулатӑн?* — тет Сережа.

— *Эпӗ тухтӑр пулатӑп. Ира, эсӗ кам пулатӑн?* — калать Таня.

Ачасем пӗр-пӗринчен вӗҫе-вӗҫӗн ыйтса тухаҫҫӗ.

г) Кӗнекери 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

«Пӗлӗве сутӑн илеймӗн» калавпа ӗҫлени, рольсемпе вулама хатӗрленни.

Ыйтуллӑ, калуллӑ предложенисене сӑнаҫҫӗ, тӗрӗс вулама тӑрӑшаҫҫӗ. Ашшӗ, амӑшӗ, Валерик сӑмахӗсене тупса вулаҫҫӗ, содержание шута илсе сасса кирлӗ пек улӑштараҫҫӗ.

— Уроксем хыҫҫӑн Валерик ӑҫта васкарӗ? Вӑл кам пуласшӑн? Ашшӗ ӑна мӗн илсе пачӗ? Валерик мӗнле ача? Кам музыка шкулне ҫӳрет?

д) Кӗнекери 7-мӗшпе 8-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

е) Кӗнекери 9-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

Ф.П. Павлов тата С.М. Максимов композиторсен ӗҫӗ-хӗлӗпе

паллашни. Учитель ачасене музыкăна юратни, вĕренни пархатарлă ĕç пулни, вăл пур çĕрте те кирлĕ пулни çинчен калать, ачасем вырăссен тата чăвашсен мĕнле композиторĕсене пĕлни çинчен ыйтса пĕлет.

Учителе кирлĕ материал:

Федор Павлович Павлов (1862—1931) — чăвашсен профессионаллă музыка искусствине пуçласа яраканĕ, чăваш халăх юррине саракансенчен пĕри. Вăл паллă композитор, дирижер, музыкăна вĕрентекен, драматург тата публицист пулнă.

Ачасем валли çырнă чи паллă юррисем — «Пĕчĕк çеç путене» (Крошка-перепелка), «Линкка-линкка», «Тӳнкки-тӳнкки», «Пирĕн урам анаталла» (Вниз по нашей улице).

Ачасем пĕлекен юрра юрлаттарма юрать. Пĕлмеççĕ пулсан — фонохрестоматипе итлеттермелле. Итленĕ хыççăн ун çинчен калаçтармалла.

Степан Максимович Максимов — пултаруллă музыкант, композитор, чăваш халăх юррисене пухса йĕркелекен.

С.М. Максимовăн «Чăваш юррисем» кĕнеки — тăван халăхăн чаплă парни. Вăл юрăсем хывнă: «Çăпата» (Лапти), «Колхозниксен ĕç юрри» (Колхозная трудовая), «Çуллахи çил» (Летний ветерок) т. ыт. те; халăх юррисене илемлетнĕ — «Акасуха юрри» (Застольная), «Вĕç, вĕç, куккук» (Лети, лети, кукушка), «Мулкач юрри» (Песня зайца), «Пирĕн атте — сасан пул» (Наш отец, как рыба сазан), «Анатран хăпарать шурă пăрахут» (Снизу идет белый пароход) т. ыт. те.

Пĕрер юррине юрлаттарса е итлеттерсе пăхмалла, ун çинчен калаçтармалла.

Ф.П. Павловпа, С.М. Максимовпа çыхăннă паллă вырăнсем çинчен калаçни. Ачасем вĕсене пĕлмеççĕ пулсан учитель Шупашкарта Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищи тата С.М. Максимов ячĕллĕ музыка шкулĕ пурри çинчен, унтан паллă композиторсем вĕренсе тухни çинчен калать.

ё) Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ĕ) Ачасем хăйсен ĕçĕсене хаклани.

**5. Киле ĕç.**

Музыка инструменчĕсен ячĕсене чăвашла тата вырăсла астуса юлмалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, вĕреннине çирĕплетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени.**

## 99—100-мĕш уроксем

### Тема: Чăваш çĕршывĕ

***Урок тĕллевĕ:*** тăван республика, унăн тĕп хули çинчен калаçма-хутшăнма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) Чăваш çĕршывĕ çинчен ытларах пĕлесси; 2) «Пирĕн хулари палăксем» проект валли материал пухасси; 3) вырăнти палăксем çинчен пĕрремĕш класс ачисем валли экскурси ирттерме хатĕрленесси.

***Лексика материалĕ:*** *çепĕç, палăк, Атăл хĕрри, тĕп хула.*

***Кирлĕ хатĕрсем:*** «Шупашкар» кĕнеке, Шупашкара сăнлакан пысăк ӳкерчĕксем, открыткăсен пуххи, фонохрестомати, «Шупашкар» презентаци.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçсене тĕрĕслени, малтан вĕреннине аса илни.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Урок темине, тĕллевĕсене пĕлтерни.

ă) Кĕнекери 1—2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Калаçу йĕркелени. Хула ятне чăвашла тĕрĕс калаттарни (Шу[б]ашкар).

— Эсир ăçта пурăнатăр? Сан асаннӳ ăçта пурăнать? Чăваш Республикин тĕп хули мĕн ятлă?

б) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Пысăк ӳкерчĕкпе е кĕнекери ӳкерчĕкпе ĕçлени.

*Ку Шупашкар хули. Хулара пысăк çуртсем, заводсем, хитре урамсем, театрсемпе музейсем пур. Шупашкар — Чăваш Республикин тĕп хули.*

в) Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани. Ĕç йĕрки:

— учитель вуласа пани;

— сăмахсене ăнлантарни;

— ачасене пĕрер предложенин вулаттарни, куçарттарни;

— ыйтусене хуравлани:

— Чăваш Республикин тĕп хули мĕн ятлă? Вăл мĕнле юхан шыв хĕрринче вырнаçнă? Чăваш Республикинче пурăнакансенчен ытларахăшĕ мĕнле чĕлхепе калаçать? Эсир Шупашкар çинчен тата мĕн каласа пама пултаратăр?

Çак калаçура открыткăсемпе, ӳкерчĕксемпе усă курмалла. Чăваш чĕлхи çинчен каланине тупса вулаттармалла.

— Сире чăваш чĕлхине вĕренме килĕшет-и?

г) «Шупашкарăм» сăвăпа ĕçлени:

— сăвва фонохрестоматипе итлеттерни; ачасене илемлĕ вулама вĕрентни;

— сăввăн содержанине ăнланнине тĕрĕслени;

— ачасем мĕнле ăнланнине учитель çакăн пек ĕç ирттерсе тĕрĕслеме пултарать: доска умне пĕр ача тухать. Учитель ăна Шупашкар хулин урамĕсене, çурчĕсене, завочĕсене, шкулĕсене, Атăла сăнлакан открыткăсем парать. Ачасем сăвва пĕрер çавран вулаççĕ. Доска умĕнчи ача сăвă содержанийĕ тăрăх кирлĕ открыткăсене тупса вĕренекенсене кăтартать, доска çине çакса хурать. Çак ĕçе тунă хыççăн ачасем сăвва тепĕр хут вуласа тухаççĕ;

— ыйтусене хуравлани.

д) Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

е) Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Шупашкарти паллă вырăнсем çинчен калаçу йĕркелени.

Учитель ачасене «экскурсие каясси» çинчен пĕлтерет. Кĕнекери ӳкерчĕке пăхма сĕнет.

— Илемпипе Пӳрнеске тăрантас çине ларса хула курма тухнă. Вĕсем паллă вырăнсене курса çӳреççĕ. Эпир те вĕсемпе пĕрле хулапа паллашма тытăнăпăр.

— Вокзалтан иртсен çӳллĕ постамент çинче хĕç тытнă юлан утçа куратпăр. Кам-ха ку? (Ачасем хуравлаççĕ.)

— Мĕншĕн Шупашкарта лартнă ку палăка?

Ачасем В.И. Чапаев кунта çуралса ӳсни çинчен калаççĕ. Учитель хушса калать.

Учителе кирлĕ материал:

Василий Чапаев Шупашкар районĕнчи Будайка ялĕнче çуралнă. Халĕ Будайка ялĕ вырăнĕнче Ю.А. Гагарин урамĕ.

В. Чапаевăн аслашшĕ Атăлтан пĕренесем кăларнă çĕрте ĕçленĕ. Вăл питĕ вăйлă пулнă. Пĕренисене вăл тимĕр çекĕллĕ пакурпа шывран туртса кăларнă. Ыттисене те лайăх ĕçлеме чĕнсе: «Чепай!» — тесе кăшкăрнă. «Чепай» сăмахран каярахпа Чапаев хушамат пулса кайнă.

Василий маттур, вăйлă, пултаруллă ача пулнă. Ӳссен вăл хăюллă командир пулса тăрать. Шуррисене хирĕç хастар çапăçать. Унăн полкне, бригадине, дивизине яланах чи йывăр вырăна янă. В.И. Чапаев ертсе пынипе салтаксем яланах çĕнтернĕ, тăшмана çапса аркатнă. Паттăрла ĕçсемшĕн революциччен В.И. Чапаев Георгий хĕресĕпе медальне, Граждан вăрçи вăхăтĕнче Хĕрлĕ Ялав орденне илме тивĕçлĕ пулнă.

В.И. Чапаев, аманнăскер, Лбищенск хули çывăхĕнче Урал шывĕ урлă ишсе каçнă чух путса вилнĕ.

Хуть те хăш вăхăтра килсен те хăнасем В.И. Чапаев палăкĕ

патне пымасăр каймаççĕ. Вĕсен умне малти урисене çӳлелле çĕкленĕ, чĕвен тăнă ут тухса тăрать. Ăна хăюллă та паттăр юлан утçă сулахай аллипе çирĕп тытнă. Сылтăм аллинче ун — çутă хĕç. Утпа çын пĕр пулса малалла талпăнаççĕ.

В. Баландин скульптор Чапаева хĕрӳ çапăçăва ыткăннă чух тăп! чарса тăратнă. Хăюллă та хастар командир халăхсен асĕнче çакăн пек малалла ыткăнакан, тăшмансене тĕп тăвакан сăнар пулса юлнă. Постамента В. Морозов проекчĕпе хатĕрленĕ. Палăка 1960 çулхи июнь уйăхĕн 23-мĕшĕнче уçнă. Ун çине чăвашла, вырăсла «Граждан вăрçин мухтавлă паттăрĕ. В.И. Чапаев. 1887—1919» тесе çырнă. Постаментăн ытти енĕсенче Чапаев дивизийĕн çапăçусенчи хĕрӳ тапхăрĕсене сăнланă.

Кăшт маларах кайсан музей пур. Унта эпир В.И. Чапаев пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашатпăр. Музейпа юнашар — В.И. Чапаев çуралнă çурт. Ăна Будайка ялĕнчен илсе килнĕ.

Музейран инçех те мар, Ленин проспекчĕн сылтăм енче, А.Г. Николаев ячĕпе хисепленекен урам пуçланать. Кунта эпир А.Г. Николаева халалласа лартнă палăка куратпăр. Космонавт гермошлемпа. Вăл тĕнче уçлăхне унпа вĕçнĕ. Ку ĕç 1963 çулта пулнă.

А.Г. Николаев — пирĕн ентеш. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăрман техникумĕнче, летчиксен шкулĕнче вĕреннĕ. Çирĕп сывлăхлă, нимрен хăраман çамрăка космонавтсен шкулне илнĕ. А.Г. Николаев космоса икĕ хут вĕçнĕ. Ăна икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Ленин проспекчĕпе анатпăр. Наци библиотеки патне çывхаратпăр. Библиотека умĕнче И. Яковлева хисеплесе лартнă палăк пур. Ăна Д. Народицкий скульпторпа Г. Саевич архитектор 1970 çулта тунă. Чăваш халăхне çутта кăларакан çын кунта кĕнекепе ларать. «Вĕренĕр. Вĕренни яланах кирлĕ», — тенĕн туйăнать.

Кăшт анатарах ансан сулахай енче Çеçпĕл Мишшине хисеплесе лартнă палăк патне çитетпĕр. Ку палăк хĕрӳллĕ те хастар чĕреллĕ поэта халăх яланах асра тытнине кăтартать. Ăна 1989 çулта Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 90 çул çитнĕ ятпа лартнă. Поэт пурнăç малашне ырă, çутă, телейлĕ пуласса шаннă:

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем!
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен! —

тесе чĕннĕ вăл чăваш çамрăкĕсене. Малалла кайсан Республика площадьне çитетпĕр. Республика площачĕ — тĕп архитектура ансамблĕ. В.И. Ленин палăкĕ хыçĕнче — илемлĕ симĕс парк. Унта çăвĕпе чечексем ешереççĕ.

Республика площадĕнче педагогика университечĕ вырнаçнă.

Карл Маркс урамĕпе анаталла ансан Театр площадьне çитрĕмĕр. Акă пирĕн ума К.В. Иванов ячĕллĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн мăнаçлă çурчĕ тухса тăрать. Вăл анлă Атăл çине пăхса ларать. Унăн сарлака пусмисем залив шывĕ хĕрринех анаççĕ. Чăваш патшалăх академи драма театрĕ — халăх юратакан театрсенчен пĕри.

Театр çумĕнче — К.В. Иванов палăкĕ. Вăл театр çине пăхать. Артистсене татах та лайăхрах выляма чĕнет.

К.В. Иванов чăваш халăхне хăйĕн «Нарспи» поэмипе çӳле çĕкленĕ. Поэт ятне чăвашсем çеç мар, пĕтĕм тĕнче пĕлет. Ахальтен мар К.В. Иванов палăкне Атăл хĕррине лартнă. «Атăл — юхан шывсен амăшĕ», «Атăл — анне», — тесе каланă ĕлĕкренпех çак пысăк та мăнаçлă юхан шыв пирки. Атăл Шупашкара илем кӳрет, пур ĕçре те пулăшать, çупăрласа ачашлать.

ё) Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Кроссворда тупасси, палăртнă юпара *палăк* сăмаха вулани.

ĕ) Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем пĕтĕм материала тетрадь çине куçариччен доска çине çырса тĕрĕслеççĕ.

ж) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ, чи лайăх текста шкул хаçатĕнче пичетлеме суйласа илеççĕ.

з) В. Алентей çырнă «Шупашкарăм» сăвăпа ĕçлени.

и) «Шупашкарăм» юрра юрлама вĕренни.

## ШУПАШКАРĂМ

Сăвви *В. Алентейĕн* Кĕвви *Г. Хирбюн*

Капăр, тӳрĕ урамсем пит илемлĕ,
Çӳллĕ, пысăк çурчĕсем илĕртӳллĕ.
Ай кунран-кун ӳсен, Шупашкарăм.
Ытарма çук ай хитре, Шупашкарăм.

Çĕнĕ фабрик-заводсем, комбинатсем,
Шкулĕсем те çулленех хушăнаççĕ.
Ай кунран-кун ӳсен, Шупашкарăм.
Ытарма çук ай хитре, Шупашкарăм.

Анлăн сарăлса выртать тăван Атăл,
Хулана хăй хумĕпе çупăрлать вăл.
Ай кунран-кун ӳсен, Шупашкарăм.
Ытарма çук ай хитре, Шупашкарăм.

й) Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.

**5. Киле ӗҫ.**

Шупашкарти паллӑ вырӑнсем ҫинчен ашшӗ-амӑшне каласа памалла. «Пирӗн хулан (ялӑн) палӑкӗсем» проект тумалла, ун тӑрӑх пӗрремӗш класс ачисене каласа пама хатӗрленмелле.

**6. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени, вӗреннине пӗтӗмлетни.**

Доска ҫине ҫакса хунӑ ӳкерчӗксемпе е открыткӑсемпе, е презентаципе усӑ курса учитель ачасене тепӗр хут Шупашкар хули ҫинчен калаҫтарать. Ӗҫ тетрадӗнче панӑ хӑнӑхтарура мӗнле предложени пулнине тупса вулаҫҫӗ, ҫыраҫҫӗ.

Чӑваш Республикин тӗп хули — Шупашкар.

**7. Ӗҫе хаклани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи таблицӑпа усӑ курса ачасем хӑйсен ӗҫне хаклаҫҫӗ, унтан вӗсен ӗҫне учитель хаклать.

**8. Урока вӗҫлени.**

## 101—102-мӗш уроксем

### Тема: Вӗреннине аса илни, тӗрӗслени

***Урок тӗллевӗ:*** ачасене ҫулталӑк хушшинче мӗн вӗреннине аса илтересси, хӑйсен ӗҫне хаклама хӑнӑхтарасси.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, малтан вӗреннине аса илни.**

а) Учитель ҫулталӑк тӑршшӗнче мӗн вӗреннине аса илтерет, тӗрлӗ темӑпа калаҫтарать. Унтан текстсем валеҫсе парать, ачасен пӗлӗвне, хӑнӑхӑвӗсене тӗрӗслет. Ачасем текста пӑхса ҫырса илеҫҫӗ, унтан вырӑсла куҫарса ҫыраҫҫӗ. Словарьпе усӑ курма пултараҫҫӗ. Учитель малтанах пӗр текстне суйласа илсе хӑварать те диктант ҫыртарать. Виҫӗ ӗҫе уйрӑм отметкӑпа хаклать.

Ку ӗҫе ытти чӗрӗксенчи пекех пурнӑҫлама юрать.

### Текстсем:

КӐМПАРА

Пӗрре Ванюкпа кӑмпана кайрӑмӑр. Вӑрманта кӑмпа нумай. Хыр вӑрманӗнче шур кӑмпа пуҫтартӑмӑр. Кӑрӑҫ та тупрӑмӑр.

ПАКША

Пӗррехинче эпир вӑрманпа пыратпӑр. Сасартӑк чӑрӑш ҫинче пакша куртӑмӑр. Вӑл йывӑҫ ҫинчен анчӗ те ҫухалчӗ. Часах пакша каялла таврӑнчӗ. Вӑл ҫӑварне кӑмпа хыпнӑ.

## ЭКСКУРСИРЕ

Ачасем экскурсие кайнă. Вĕсен çулĕ çинче çырма пулнă. Çырма урлă каçсан вăрман пуçланнă. Ачасем пĕр тĕмĕ патĕнче мулкач курнă. Мулкач ачасенчен хăраса тарнă.

## ÇУРКУННЕ

Çуркунне çанталăк ăшăтрĕ. Шурă юр ирĕлчĕ. Урамра шăнкăртатса шыв юхать. Ама хупахĕсем чечексем çурчĕç. Ачапăча урамра вылять. Эх, аван-çке çуркунне!

## ТУССЕМ

Манăн йытăпа кушак пур. Йытă Ăсат ятлă. Кушак Мăрмăр. Ăсат шăмă юратать. Мăрмăр хăйма юратать.

Ăсатпа Мăрмăр туслă.

## ЁНЕ ФЕРМИ

Хĕветле аппа фермăра ĕçлет. Вăл ĕнесем пăхать. Ĕнесем хĕрлĕ, ула, хура тĕслĕ.

Ĕне сĕт парать. Сĕтрен хăйма пулать. Вăл тутлă. Эпир ăна юрататпăр.

## ÇУЛЛА

Çулла — çулталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ.

Хирте тырă-пулă çитĕнет. Вăрманта çырла пиçет. Кайăксем юрлаççĕ. Пыл хурчĕсем пыл пуçтараççĕ.

Эпир вăрмана çӳретпĕр. Кăмпа, çырла тататпăр. Шыва кĕме каятпăр.

Мĕн тери илемлĕ çулла!

ă) Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

б) Ĕçлесе пĕтерсен ачасем вĕренӳ кĕнекине алла илеççĕ, В. Давыдов-Анатри çырнă «Кĕнекеçĕм, кĕнеке» сăвва каласа ăна тав тăваççĕ, унпа сывпуллашаççĕ:

Кĕнекеçĕм, кĕнеке,
Эпĕ сана хĕлĕпе
Шур хутпала чĕркерĕм,
Хампа илсе çӳрерĕм.

Эсĕ манăн тус-юлташ,
Çывăх тăван, хурăнташ, —
Çирĕп çунат паратăн,
Çула уçса пыратăн.

**4. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**5. Урока вĕçлени.**

## «ЧĂВАШ ЧĔЛХИ» ПРЕДМЕТПА ТУСА ХАТĔРЛЕНĔ ĔÇ ПРОГРАММИН ТĔСЛĔХĔ

### 3 КЛАСС

### Ăнлантарса çырни

Виççĕмĕш класра вĕренмелли «Чăваш чĕлхи» предмет ĕç программине шкул уставне, пуçламăш пĕтĕмĕшле пĕлӳлĕхĕн тĕп вĕренӳ программине пăхăнса хатĕрленĕ.

Ĕç программине хатĕрленĕ чух усă курнă материалсем:

1. Вĕренӳ учрежденийĕнче пуçламăш классем валли туса хатĕрленĕ тĕп вĕренӳ программи.

2. Чăваш чĕлхи программи. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсен I—IV класĕсем валли / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар, 2014.

3. Чăваш чĕлхи. 3 класс: вĕренӳ кĕнеки / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017.

4. Ĕç тетрачĕ. 3 класс валли: вĕренӳ пособийĕ / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017.

Ĕç программине çĕнĕ стандартсене пăхăнса çырнă. Программăн тĕп тĕллевĕ — пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕренни çине таянса пуплеве пур енлĕн (вуласси, калаçасси, тăнласси, çырасси, чĕлхене тишкересси) аталантарасси, малаллахи тапхăрсенче чăваш чĕлхине вĕренме никĕс хывасси, вĕренме вĕрентесси.

Тĕллеве пурнăçлама çак задачăсене татса памалла:

1) тĕрлĕ мелпе вулас, çăмăллăнах хутшăнас-калаçас, вуланипе тăнланине ăнкарас, шухăша кăшт-кашт çырура палăртас пултарулăха аталантарасси;

2) сăмах пулăвĕн тăтăшрах тĕл пулакан мелĕсем çине таянса ачасем ăнланакан чăваш сăмахĕсен йышне анлăлатса ӳстерсе пырасси;

3) тĕрлĕ пуплев пайĕсен (япала ячĕ, сăпат тата ыйту местоименийĕсем, паллă ячĕ, глагол) грамматика формисемпе усă курма пĕлнине ҫирĕплетсе анлăлатасси;

4) деепричастипе е инфинитивпа пулăшу пĕлтерĕшлĕ глаголтан тăракан сăмах майлашăвĕсене ăнланма, вĕсене пуплеве кĕртме вĕрентесси;

5) предложени тума пĕлнине аталантарасси, тĕрлĕ мелсемпе предложенисене анлăлатма вĕренесси;

6) вулани, курни-илтни ҫинчен тата сĕннĕ ӳкерчĕксем тăрăх ҫыхăнуллă каласа парас, диалогсем тăвас хăнăхусене ҫивĕчлетесси;

7) ачасен ăс-тăнне аталантарасси, тавракурăмне анлăлатасси; вĕренекенсене пĕр-пĕрне, тĕрлĕ халăх ҫыннисене хисеплеме хăнăхтарса пырасси;

8) вăтам тата аслă классенче чăваш чĕлхине, чăваш халăхĕн историйĕпе культурине ăнланса вĕренме хатĕрлесси.

## Курса пĕтĕмĕшле хак пани

Виҫҫĕмĕш класс валли хатĕрленĕ материал ачасене ăнланса вĕренме, вĕрентĕве ачасен ҫулне, вĕсен аталанăвĕн шайне шута илсе йĕркелеме; пĕлĕве, хăнăхусемпе ăслайсене ҫирĕп системăра парса пыма, вĕрентĕвĕн содержанине ăслăлăх енчен тивĕҫлĕ шайра йĕркелеме, уроксенче ачасене пур енлĕн аталанмашкăн условисем туса пама, вĕреннине тăтăшах аса илсе ҫирĕплетсе пыма; ачасен урокри калаҫăвне те, вулавне те, ҫырăвне те пĕр темăран тухмасăр йĕркелеме майсем туса парать. Вĕренекенсем итлев-тăнлав ĕҫĕсенче те, калаҫу, вулав, ҫыру ĕҫĕсенче те чĕлхен пĕр единицисемпех усă кураҫҫĕ. Ҫакна йĕркелесе пымашкăн вĕрентӳ содержанийĕнчи кашни ăслая, хăнăхăва аталантарма ятарласа йĕркеленĕ хăнăхтарусен системи пулăшать.

Вĕрентĕве пурнăҫа ҫывăх тăвасси, уроксенче хутшăну саманчĕсем йĕркелесси — чи кирли. Хальхи вăхăтра вырăсла калаҫса ӳсекен ачасем пурнăҫра хăҫан, мĕнле ситуацире, тĕрлĕ темăпа чăвашла калаҫма-хутшăнма пултараҫҫĕ, ҫав темăсем, пуплев ситуацийĕсем уроксенче тĕл пулаҫҫĕ. Вăл е ку ситуацире хăйне чăвашла калаҫма-хутшăнма мĕн кирлине уроксенче ача йăлтах ăша хывать.

Калаҫу-тăнлав, вулав-ҫыру темисем пĕтĕмпех ачасен пурнăҫĕпе, ĕҫĕ-хĕлĕпе, вăййи-куллипе ҫыхăннă. Кунсăр пуҫне ачасем уроксенче тăван енри хула-ял, юхан шыв, кайăк-кĕшĕк, йывăҫ-курăк ячĕсене чăвашла калама вĕренеҫҫĕ, чăваш халăхĕн

ал ĕç культурипе, тăван енри паллă çынсемпе паллашса пыраççĕ. Çакă вĕсене тăван халăха юратма, чăваш мар ачасене чăваш халăхне хисеплеме хăнăхтарса пырать. Халăх сăмахлăхĕн вакрах жанрĕсемпе те (ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, ача-пăча сăвви-юрри, юмахсем) ачасем уроксенче паллашсах пыраççĕ.

Авторсем комплексра вĕренӳ ĕçне ачасене хатĕр пĕлӳ парса мар, хăйсене яланах шыравра çӳретсе йĕркелемелли майсем туса панă. Çĕнĕ материала вĕренӳ задачисем урлă уçса параççĕ. Учителе вĕренӳ задачисене лартма вĕренӳ кĕнекинчи сăнарсем (Анюкпа Ванюк) пулăшаççĕ. Вĕсем хăйсем ăнлантарса парайман чĕлхе пулăмĕсемпе тĕл пулсан сиксе тухнă ыйтăва мĕншĕн хуравлайманнине тишкерсе ачасен умне вĕренӳ задачи кăларса тăратаççĕ. Сăмахпа каласа палăртнă задачăна модельсемпе усă курса кĕскен çырса хураççĕ. Лартнă задачăна татса пама ачасем тĕрлĕ меслетсем сĕнеççĕ, вĕсене тĕрĕслесе пăхаççĕ. Пулнă результатсене тишкерсе пĕтĕмлетеççĕ, Сергей Сергеевич профессор (кĕнекери сăнар) ăнлантарса панипе танлаштарса пăхаççĕ. Тунă пĕтĕмлетĕве (правило-ориентира) схемăсемпе е модельсемпе çырса хураççĕ. Вĕренӳ ĕçне çакăн пек йĕркелени ачасене хавхалантарать. Чи хакли вара — вĕренмелли меслетсемпе паллашма, малалла вĕсемпе усă курса вĕренме май парать.

Вĕренекеншĕн хăй мĕн пĕлнине пĕлменнинчен уйăрма пултарни кулленхи шкул ĕç-хĕлĕнче çав тери хаклă. Çакна шута илсе ачасене кашни урок вĕçĕнчех хăйсен ĕçне хаклама сĕннĕ, ĕç тетрадĕнче ятарлă таблицăсем туса панă. Таблицăн пĕрремĕш юпинче ачасен урокри ĕçĕн тĕсĕсене кăтартнă, иккĕмĕш юпинче ачасем хăйсем пурнăçланă ĕçсене хăйсемех хак параççĕ. Таблицăн виççĕмĕш юпинче вара çак ĕçсенех вĕрентекен хаклать. Çапла вара урок вĕçĕнче кашни ача хăй мĕн лайăх пĕлнине, мĕн пĕлменнине, урокра мĕнле йывăрлăхсемпе тĕл пулнине питĕ аван туйса илет. Учитель вара малалла ачасемпе вĕсен çитменлĕхĕсене пĕтерес тĕллевпе уйрăммăн ĕçлеме пултарать. Çакăн пек ĕçлени пĕлӳ пухма çеç мар, ачасенче харпăр хăйлăх, йĕркелӳ, пĕтĕмĕшле пĕлӳлĕх, хутшăну пултарулăхĕсене (компетенцийĕсене) аталантарма пулăшма тивĕç. Апла пулсан чăваш чĕлхи урокĕсенче республикăмăрăн патшалăх чĕлхине вĕреннĕ май ачасем пур енлĕн аталанса пыраççĕ.

## Вĕренӳ предмечĕн содержанийĕн пахалăхĕ

- вырăсла калаçса ӳсекен ачасене Чăваш Республикин патшалăх чĕлхине — чăваш чĕлхине — вĕрентни;
- ачана ытти халăх çыннисене хисеплеме хăнăхтарса пыни, çураçулăх (толерантность) туйăмĕсене аталантарни;
- ачасенче интернационаллă туйăмĕсене аталантарни, пĕр-пĕринпе харкашмасăр, пĕр-пĕрне кӳрентермесĕр шăкăл-шăкăл калаçса пурăнма вĕрентни;
- тăван ен культурипе, чăваш халăхĕн историйĕпе паллаштарни, чăваш халăхĕн историйĕпе культурине малашне тухăçлă вĕренме никĕс хывни;
- ачана чăваш халăхĕн пуян историйĕпе, тĕрлĕ енлĕ культурипе кăсăкланма, чăвашсен Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери вырăнĕпе пĕлтерĕшне курма, туйма хăнăхтарни;
- чăваш, вырăс тата ытти халăхсен мĕн авалтан çирĕпленнĕ ырă енĕсене, ĕçĕсене кăтартса парса ачасенче çав енсене аталантарма тăрăшни;
- чăваш чĕлхине вĕреннĕ май ачан ăсĕ-тăнĕ аталанни, тавракурăмĕ анлăланни; «Тăван çĕршыв» ăнлав уçăмланни;
- тăван çĕршывăн çут çанталăкĕ, чăваш халăхĕн мухтавлă çыннисем çинчен лайăхрах пĕлни; Чăваш Республикин тĕрлĕ ĕçĕсенче хутшăнни.

## Вĕренӳ результачĕсем

### Харкамлăх результачĕсем (личностные результаты)

— «Тăван çĕршыв» ăнлава уçăмлатни: вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, пурăнакан республика тата çĕршыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни;

— тăван çĕршыва, чăваш чĕлхине, тăван çĕршывăн çут çанталăкне юратас, культурине, историне, халăхĕсем çинчен лайăхрах пĕлес, вĕсене хисеплес, унăн ĕçĕсене хутшăнас кăмăл ӳссе пыни;

— кăмăллă пулма, ыттисене ăнланма тăрăшни;

— калаçас, тăнласа итлес пултарулăха аталантарни;

— çын кашни хăй тĕллĕн пысăк пахалăх, çав вăхăтрах общество членĕ пулнине ăнланни;

— шкулта, класра, урамра, килте, хăнара харпăр хăйне мĕнле тытмаллине, уроксене мĕнле хатĕрленмеллине, ĕç вырăнне хатĕрлемеллине, парта хушшинче мĕнле лармаллине, ĕç хатĕрĕ-

семпе мĕнле усă курмаллине, ĕçе тăрăшса, тимлĕ, тирпейлĕ тумаллине ăнланни;

— гигиена правилисене пĕлни;

— тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăм аталанни;

— вĕренӳ ĕç-хĕлне алла илни;

— татах та нумайрах пĕлес туйăма аталантарни;

— çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни, аслисемпе, юлташсемпе мĕнле калаçмаллине пĕлни;

— аслисемпе пĕрле пĕчĕккĕн ĕçе хăнăхса пымаллине, пурнăçра çак хăнăхусем кирлĕ пулнине ăнланни;

— ĕмĕтленни, вĕренни пурнăçра кирлĕ пулнине тавçăрни.

## Пур предмета та вĕреннĕ чух кирлĕ результатсем (метапредметные результаты)

***Пĕлӳ туянма пулăшакан результатсем:***

— кирлĕ материала тĕрлĕ вĕренӳ хатĕрĕсенче шыраса тупма пултарни, ăçта мĕн тупма пулнине пĕлни;

— тĕп материала пит кирлех мар материалтан уйăрма пултарни;

— танлаштару мелĕн пĕлтерĕшне ăнланни;

— çырнă чух мĕнле лармаллине тата çыру хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;

— çыхăнуллă калаçма пултарни;

— логика ĕçĕсене пурнăçлама, шухăшлав мелĕсемпе (тишкерӳ, танлаштару, пĕтĕмлетӳ т. ыт. те) усă курма пĕлни;

— таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлу аталанни;

— тăван тавралăх (ял, республика), Раççей пурнăçĕпе кăсăкланни;

— курăмлă тата логикăллă шухăшлама, танлаштарма, пулăмсен тĕрлĕ паллисене уйăрма, япаласемпе пулăмсем хушшинчи çыхăнăва палăртса ушкăнлама хăнăхни;

— çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни-туйни;

— япаласене, вĕсен ушкăнĕсене астуса юлас, аса илес хăнăхусене çивĕчлетни.

***Йĕркелӳ-хаклу результачĕсем:***

— хăйĕн ĕçне сăнаса-асăрхаса пыма пултарни;

— тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тишкерни тата пахалани;

— хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни;
— кашни çыннăн хăйĕн умне яланах мĕнле те пулин тĕллев лартмаллине ăнланни;
— ĕçе мĕншĕн, мĕнле тĕллевпе тунине, туса пĕтерсен мĕн пулнине ĕçлеме пуçличчен пĕлмеллине ăнланни;
— харпăр хăйĕн, юлташĕн ĕçне хаклама, йăнăшĕсене курма, тунă йăнăшсене тӳрлетсе пыма вĕренсе пыни;
— мĕн вĕренни, мĕн туни çинчен каласа пама пĕлни;
— çыру ĕçĕн йĕркине пĕлни;
— япала, ӳкерчĕк тăрăх мĕнле йĕркепе каламаллине пĕлни;
— мĕн вĕреннине, мĕн вĕренмеллине калăплама, ĕç-хĕлĕн юхăмне, результатне асăрхаса пыма, хаклама хăнăхни.

***Хутшăну результачĕсем:***

— литература пуплевне тăнлас-ăнкарас пултарулăха çивĕчлетни;
— ушкăнпа ĕçлеме, пĕр-пĕрне итлеме яланах хатĕр пулни, ушкăнпа ĕçленĕ чухне харпăр хăйне мĕнле тытмаллине пĕлни;
— кашни çын тĕрлĕрен шутлама пултарнине ăнланни, урăх шухăша йышăнма пултарни;
— харпăр хăй шухăшне ăнлантарса пани;
— ыттисене ăнланмалла калама, ыйту пама пултарни;
— пĕр-пĕринпе калаçса татăлса пĕр шухăш патне çитни;
— учитель, юлташĕсем каланине итлеме пултарни;
— калаçăва хутшăнма, çыхăнуллă, ăнланмалла каласа пама пултарни;
— ыттисем каланă чух йăнăшсене тӳрлетме тăрăшни, пĕрпĕрин ĕçне тĕрĕслесе пыма вĕренни;
— пулăшу ыйтма, ыттисене пулăшма тăрăшни;
— калаçнă-хутшăннă чухне пĕр-пĕрне хисеплени.

## Предметăн пайрам результачĕсем
## (предметные результаты)

— шкул, класс, тăван кил-çурт, çемье, теттесемпе вăйăсем, шкул ачин кун йĕрки, килти выльăх-чĕрлĕх, вăрманти чĕр чунсем, улма-çырла, пахча çимĕç, уй-хирти тыр-пул, ӳт-пӳ пайĕсем çинчен предложенисем тĕрĕс йĕркелени, çыхăнуллă каласа пани;
— курни-илтни, япаласем çинчен, ӳкерчĕксем тăрăх ăславлă каласа пама, хайлавсен çитмен пайĕсене (пуçламăш, тĕп пайĕ, вĕçĕ) шутласа тупма пултарни;

— «текст», «предложени», «сăмах», «хупă сасă», «уçă сасă», «аффикс», «глагол», «япала ячĕ», «паллă ячĕ» терминсене ăнланни, вĕсемпе майĕпен пуплев тишкерĕвĕсенче усă курни;

Вĕренекенсен çак ăслайсем пулмалла:

— вĕреннĕ темăсемпе каласа е вуласа панине итлесе ăнланмалла;

— программăра тĕл пулакан пĕр-пĕр темăпа итленĕ, вуланă хыççăн ыйтусем пама, хуравлама, сĕнӳ пама, хушма, хирĕçлеме пĕлмелле;

— пĕр-пĕр япала, ĕç е курни-илтни çинчен хатĕрленмесĕр 5—6 предложенипе каласа пама пултармалла;

— 2—3 процента яхăн ăнланман сăмахсем е сăмахсене çавăнтах куçарса панă текста пĕрремĕш хут минутра 40—45 сăмахран кая мар ăнланса, тĕрĕс, тулли сăмахăн, йывăр сăмахсене сыпăксем çине уйăрса вуламалла;

— калаçура тĕл пулнă, вуланă сăмахсене, предложенисене, текста пăхса тĕрĕс çырса илме, çырнине тĕрĕслеме пултармалла;

— уйрăм сăмахсене, 2—3 сăмахлă предложенисене илтнĕ вĕççĕн тĕрĕс çырмалла;

— подлежащипе сказуемăя тĕрĕс çыхăнтарма пĕлмелле;

— хальхи, иртнĕ, пулас вăхăтри глаголсемпе, иртнĕ причастисемпе пуплевре тĕрĕс усă курмалла;

— тĕрлĕ падеж форминчи (падеж ячĕсене каламасăр) япала ячĕсемпе, сăпат местоименийĕсемпе тĕрĕс усă курма пултармалла;

— чăвашла вулавăн тата çырăвăн тĕп уйрăмлăхĕсене пĕлмелле.

## ВĔРЕНӲ КУРСĔН СОДЕРЖАНИЙĔ

### Тема: Вĕреннине аса илни *(8 сехет)*

1—2-мĕш классенче вĕреннĕ пуплев материалне çирĕплетесси. Чăваш алфавитне аса илесси. Сасăпа сас паллин шайлашăвне туйма пĕлнине çирĕплетесси.

Чăваш чĕлхинчи уйрăм сасăсене, сасăсен пĕрлешĕвĕсене тĕрĕс калама пĕлнине çирĕплетесси: *йӳçĕ, йăмăк, хурав, çырма, пăнчă, ыйту* т. ыт. те. Сăмахри пусăма тĕрĕс лартасси.

*Кам? мĕн?* ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсемпе ĕçлесси.

Япала паллине пĕлтерекен сăмахсем çумне ***-рах(-рех)*** аффикс хушсан пĕлтерĕшĕ мĕнле улшăннине сăнасси.

Пуплев пайĕсен ячĕсемпе (япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол) паллашасси, вĕсен ыйтăвĕсене аса илесси.

Япала ячĕсене, сăпат местоименийĕсене хальхи, иртнĕ, пулас вăхăтсенчи глаголсемпе çыхăнтарасси: *Саша сăвă калать. Эпир вулатпăр, çыратпăр, шутлатпăр.*

*Çине, çинче, умне, умĕнче, хушшине, хушшинче* тата ытти сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

Япала ятне паллă ячĕпе, хисеп ячĕпе, сăпат местоименийĕпе, тепĕр япала ячĕпе тĕрĕс çыхăнтарса пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *сарă чечек, çирĕм кăмпа, хĕрĕх виçĕ çырла, санăн аçу, Шупашкар хули.*

Калуллă, ыйтуллă предложенисем: *Пулăсем кӳлĕре ишеççĕ. Кам пулла каять?* Предложенири сăмахсен йĕрки.

Вĕренӳ кĕнекинчи текстсене такăнмасăр, уçăмлă, йывăртарах сăмахсене сыпăкласа вуласси. Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси, ыйтусем лартма вĕрентесси.

Харпăр хăй тĕллĕн вулас, вуланине ăнланас хăнăхусене аталантарасси.

Итленĕ текстăн тĕп шухăшне палăртас хăнăхăва аталантарасси.

2-мĕш класра вĕреннĕ орфографи хăнăхăвĕсене малалла аталантарса çирĕплетсе хăварасси.

«Пирĕн класс», «Çулла» темăсемпе диалог тутарасси, 5—7 предложенипе каласа пама вĕрентесси.

## **Тема: Пирĕн çемье** *(21 сехет)*

Кăтарту наклоненийĕнчи глаголсен хальхи, иртнĕ, пулас вăхăчĕсем. Глаголсене сăпат местоименийĕсемпе, япала ячĕñåì ï å ¸ û õ=í òàðñà ï óï ëåâðå óñ= êóðì à â\ ðåí òåññè: *Эпĕ кайрăм (каймарăм). Эсĕ кайрăн (каймарăн). Вăл кайрĕ (каймарĕ). Саша шкула кайрĕ (каймарĕ). Эпĕ урамра вылярăм (вылямарăм).*

Иртнĕ причасти формине сказуемăй пĕлтерĕшĕпе усă курма пĕлнине çирĕплетесси.

Япала ячĕсен камăнлăх форми. Ăру-тăванлăх сăмахĕсен сăпат формисем: *манăн аттем, санăн аçу, унăн ашшĕ.* Вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***-Çăм(-çĕм)*** аффиксăн пĕлтерĕшĕпе паллаштарасси, ***-çăм(-çĕм)*** аффикслă сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

**Чи** татăкпа пулнă вăйлă формăри паллă ячĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси: *Чи ырри, чи маттурри, чи пахи, чи илемли, чи ĕçченни — манăн анне.*

***-Са(-се)*** аффикслă деепричастипе тата глаголăн сăпатлă формипе пулнă сăмах майлашăвĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси: *пĕçерсе çитерчĕ, кайса килчĕ.*

*Эпĕ, эсĕ, вăл* местоименисен тĕп падеж формисемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *Эпĕ вуларăм. Эсĕ мĕн турăн? Вăл вуларĕ.*

*Ăçта? (куда?), ăçта? (где?)* ыйтусене хуравласа калаçма вĕрентесси: *Вăрмана кайрăм. Вăрманта çырла пуçтартăм.*

*Умне, патне, урлă* сăмахсем. Вĕсемпе пуплеве йĕркеленĕ чух усă курма вĕрентесси.

Сăмахсен синонимĕсене тата антонимĕсене тупма, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Шавлă хупă сасăсен янăравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура тĕрĕс палăртма вĕрентесси.

Ыйтусене хуравласа çырма вĕрентесси.

Икĕ сас паллипе палăртакан шавлă хупă сасăсене янратмасăр калаттарасси.

Сăмахсене май килнĕ таран сыпăкламасăр, пусăма тĕрĕс лартса вулама вĕрентесси.

Обращенисем, вĕсене тĕрĕс интонаципе каласси.

Пĕр-пĕр çын çинчен каласа пама пĕлнине çирĕплетесси.

«Пирĕн çемье» темăпа диалог формипе те, монолог формипе те калаçма вĕрентесси.

## **Тема: Кун йĕрки** *(7 сехет)*

*Ăçта? (куда?), ăçта? (где?)* ыйтусене хуравласа калаçма хăнăхтарасси.

*Инфинитив* терминпа паллаштарасси, ***-ма(-ме)*** аффикслă инфинитивпа тата сăпатлă формăри глаголпа пулнă сăмах майлашăвĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси: *ӳкерме юратать, ташлама пĕлет.*

***-Са(-се)*** аффикслă деепричастипе тата глаголăн сăпатлă формипе пулнă сăмах майлашăвĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

*Аффикс* терминăн пĕлтерĕшĕпе паллаштарасси.

*Хур, яр, тăр, пар, пыр, кĕр* йышши глаголсен пĕрре иртнĕ вăхăтри сăпатланăвĕн уйрăмлăхĕпе паллаштарасси (*р* сасă тухса ӳкет).

Итленĕ текстăн содержанине ăнланма хăнăхтарасси.

Текста харпăр хăй тĕллĕн вуласа содержанине ăнланма хăнăхтарасси.

Словарьпе усă курма вĕрентесси.

Чăвашла предложенисене тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

«Кун йĕрки» темăпа диалог формипе те, монолог формипе те калаçма вĕрентесси.

## **Тема: Кĕркунне** *(10 сехет)*

Кăмпа ячĕсемпе паллаштарасси. Йывăç, кайăк-кĕшĕк, улмаçырла ячĕсене аса илсе çирĕплетесси.

Нумайлă хисепри сăпат местоименийĕсемпе япала ячĕсене хальхи тата пĕрре иртнĕ вăхăчĕсенчи глаголсемпе çыхăнтарасси, пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *Эпир вăрмана каятпăр (каймастпăр). Эпир вăрмана кайрăмăр (каймарăмăр). Ачасем вăрмана каяççĕ (каймаççĕ). Ачасем вăрмана кайрĕç (каймарĕç).*

*Ăçта? (куда?), ăçта? (где?)* ыйтусене хуравласа калаçма хăнăхтарасси.

Паллă ячĕсен танлаштарупа вăйлă степень формисемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

Сказуемăйĕ паллă ятĕнчен пулакан предложенисем йĕркелеме вĕрентесси: *Кĕркунне сивĕ. Хурăн çулçи сарă, чăрăш лăсси сарă мар.*

Япала ячĕсене паллă ячĕсемпе, хисеп ячĕсемпе, местоименисемпе çыхăнтарма хăнăхтарасси: *шурă хурăн, ултă кайăк, ку ача* т. ыт. те.

Икĕ япала ятне пĕрлелĕх падеж аффиксĕпе çыхăнтарма вĕрентесси: *Ванюкпа аслашшĕ, ăвăспа хурăн* т. ыт. те.

*Е, ю, я* сас паллисем. Вĕсемпе çырура тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

«Кĕркунне» темăпа вуласа е каласа панине ăнланма, ыйтусене хуравлама, харпăр хăй тĕллĕн кĕске калав е сăнлав текстсем тума вĕрентесси.

## Тема: Пушă вăхăтра *(12 сехет)*

Пĕрреллĕ тата нумайлă хисепри сăпат местоименийĕсемпе япала ячĕсене пулас вăхăтри глаголсемпе çыхăнтарасси, пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *эпĕ кайăп (каймăп), эпир ĕçлĕпĕр (ĕçлемĕпĕр), вăл вулĕ (вуламĕ), ачасем çырĕç (çырмĕç), эсĕ итлĕн (итлемĕн), эсир касăр (касмăр).*

Сăмахсен камăнлăх форми. Ăру-тăванлăх сăмахĕсен 3-мĕш сăпат форми: *ашшĕ, аслашшĕ, аппăшĕ, куккăшĕ.* Вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Шут тата йĕрке хисеп ячĕсем, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

*Умне, патне, умĕнче, патĕнче, çине, çинче, хушшине, хушшинче* сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Деепричастипе глагол пĕрлешĕвĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Инфинитив формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *вулама (юрлама, ӳкерме) юрататăп, тасатма (шăлма, çума) пултаратăп* т. ыт. те.

Чăваш чĕлхинчи синоним пулакан сăмахсем, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

Ыйтуллă, калуллă, хистевлĕ предложенисем: *Сирĕн шкулта библиотека пур-и? Пирĕн шкулта библиотека пур. Ачасем, айтăр библиотекăна!*

Ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисене тĕрĕс интонаципе калама хăнăхтарасси.

*Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, о* сас паллисем. Вĕсем вырăс чĕлхинчен çыру урлă кĕнĕ сăмахсенче çеç тĕл пулнине аса илсе çирĕплетесси.

*Е, ю, я* сас паллисем, вĕсене тĕрĕс калама, вулама, çырма хăнăхтарасси: *ешчĕк, чие, анне, кĕнеке, ĕне.*

Пысăках мар текстри çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне шухăша кура ăнланса илме хăнăхтарасси.

Ачасене хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен йĕркипе каласа пама вĕрентесси.

Текста тĕрĕс те илемлĕ вулама, итлесе ăнланма хăнăхтарасси.

Текстра пĕр-пĕр шухăша пĕлтерекен вырăна туптарасси, калаçура унпа усă куртарасси.

Сапăрлăх сăмахĕсем. Вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси.

«Библиотекăра», «Уроксем хыççăн», «Пирĕн туссем — чĕр чунсем», «Кам мĕн тăвать?», «Атьăр вылятпăр», «Манăн юлташ» тата ытти темăсемпе калаçу йĕркелеме вĕрентесси.

## Тема: Хĕлле *(8 сехет)*

Хальхи тата пĕрре иртнĕ вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисепри глаголсен пурлă тата çуклă формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Глаголăн пулас вăхăчĕпе пуплевре усă курма вĕрентесси: *çитĕ, юрлăпăр.*

Иртнĕ причасти формине сказуемăй пĕлтерĕшпе усă курма пĕлнине çирĕплетесси: *Ачасем тăвайккинчен ярăннă. Ванюк ярăнман.*

Вăйлă формăри паллă ячĕсем: *шап-шурă, сивĕ-сивĕ, чи лайăххи* т. ыт. те. Вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

Иккĕмĕшле глагол тăвакан хăш-пĕр аффикссемпе паллаштарасси: *ташă — ташла, юрă — юрла, йĕр — йĕрле; апат — апатлан, тум — тумлан, чее — чеелен.*

Деепричастипе глагол пĕрлешĕвĕсем: *каласа пар, илсе кил* т. ыт. те. Вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Инфинитив формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *ярăнма (вылява, çиме) юрататăп* т. ыт. те.

*Камран? Мĕнрен?* ыйтусене хуравлама вĕрентесси.

*Ăçтан?* ыйтăва хуравлама вĕрентесси, *ăçта? (куда?), ăçта? (где?)* ыйтусене хуравласа калаçма хăнăхтарасси.

*Тата* союзпа усă курса пĕр йышши членлă предложенисем йĕркелеме вĕрентесси.

Ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вулама вĕрентесси.

Çут çанталăк, хĕллехи вăйăсем, Çĕнĕ çул уявне хатĕрленни çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

Калуллă, кăшкăруллă, пĕр йышши членлă предложенисемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

## Тема: Ăстасен çĕршывĕнче *(6 сехет)*

Калаçнă чух *вулап, вĕçеп* теме юранине, çырнă чух вара *калаçатăп, вĕçетĕп* тесе çырмаллине ăнлантарасси.

Япала ячĕ çумне ***-çă(-çĕ)*** аффикс хушса профессие пĕлтерекен сăмах тума вĕрентесси: *пахчаçă, атăçă, çĕвĕçĕ.*

***-Ла(-ле)*** аффикслă сăмахсем, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *мечĕкле, футболла, шашкăлла.*

*Эпĕ вулаймарăм. Эсĕ вулаймарăн. Вăл вулаймарĕ* евĕрлĕ предложенисем тума вĕрентесси.

*Камсăр? Мĕнсĕр?* ыйтусене хуравлама вĕрентесси.

Хальхи, пулас тата пĕрре иртнĕ вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисеприглаголсен пурлă тата çуклă формисемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Инфинитив формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси: *Уçăлма (ĕçлеме, выляма) тухатăп.*

Ыйту сăмахĕсĕр ыйтуллă предложенисенчи сăмах йĕрки, интонаци: *Эсĕ ăста-и? Эсĕ художник-и? Эсĕ тĕрĕçĕ-и?*

Çирĕплетсе тата хирĕçлесе калакан предложенисенчи сăмах йĕркипе интонаци: *Çапла, эпĕ вĕренекен. Çук, эпĕ иккĕмĕш класра вĕренместĕп, виççĕмĕш класра вĕренетĕп.*

*Мĕншĕн тесен* союзпа усă курса предложенисем йĕркелеме вĕрентесси.

Орфографи хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси, çирĕплетсе пырасси.

Такăнмасăр, шухăша кура тĕрĕс интонаципе, уçăмлă вуласси. Ăшра вулама пуçласси. Вуланă текст тăрăх ыйтусем лартма тата ыйтусене хуравлама пĕлесси.

Тĕрлĕ професси çинчен илтнине, вуланине ăнланма, каласа пама пĕлесси.

## **Тема: Çуркунне** *(12 сехет)*

Глаголăн хальхи, иртнĕ, пулас вăхăчĕсем. Вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

Сăмахсенче пусăма тĕрĕс лартма хăнăхса пырасси.

Чăваш чĕлхинчи **[й]** сасăллă сăмахсене тĕрĕс калама, вулама, çырма хăнăхтарасси: *йытă, йăва, йĕпе, мăйрака* т. ыт. те.

Хальхи вăхăтри нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсене тĕрĕс каласси, çырасси: *Ачасем йывăççем лартаççĕ, çăлкуççем шыраççĕ, çут çанталăка упраççĕ.*

Сасăпа тата ăшра ăнланса вулама хăнăхтарасси. Текстри пĕлмен сăмахсене шухăша кура ăнкарса илме хăнăхтарасси.

Çуркуннехи çанталăк, çурхи ĕççем çинчен калаçма вĕрентесси.

Панă тĕслĕхпе усă курса пĕчĕк калавсем çырасси.

## **Тема: Чăваш çĕршывĕ — Тăван çĕршыв. Вĕреннине аса илетпĕр, пĕтĕмлететпĕр**
*(18 сехет)*

Чăваш халăхĕн паллă ывăлĕ-хĕрĕсем: И.Я. Яковлев, К.В. Иванов, Э.М. Юрьев, И.С. Тукташ, Г.С. Лебедев, И.С. Максимов-Кошкинский, П.Н. Осипов, О.И. Ырзем, Ф.П. Павлов, С.М. Максимов, Н.В. Павлова, Ф.С. Васильев, Г.Я. Хирбю, А.Г. Николаев т. ыт. те.

Хула, ял ячĕсене, çын ятне, хушаматне, ашшĕ ятне, выльăх-чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси: *Иван Яковлевич Яковлев — вĕрентекен. Вăл Чĕмпĕрте пурăннă.*

Пинрен пысăкрах числосене тĕрĕс калама, çырма вĕрентесси.

Хальхи, пулас тата иртнĕ вăхăтри глаголсемпе, иртнĕ причастисемпе пуплевре сказуемăй вырăнĕнче усă курасси.

Япала ячĕпе япала ятне, паллă ячĕпе япала ятне, иртнĕ причастипе япала ятне тĕрĕс çыхăнтарса сăмах майлашăвĕсем йĕркелеме хăнăхтарасси: *халăх театрĕ, халăх поэчĕ, ырă шăршă, юратнă çĕршыв.*

Пĕр йышши членлă предложенисем, обращенисем. Пĕр йышши членлă предложенири пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, çырнă чух тĕрĕс чарăну паллисем лартма хăнăхтарасси.

Сăмахсене, предложенисене, текстсене сăмах пусăмне тĕрĕс лартса, интонацие тĕрĕс тытса пырса вулама, калама хăнăхтарасси.

Текста рольсемпе вулама хăнăхтарасси. Калав тăвас ăсталăха аталантарасси.

Чăвашсен паллă çыннисем çинчен каланине, вуланине ăнланма, кĕскен каласа пама вĕрентесси.

Проект çырас-хатĕрлес хăнăхăва аталантарасси.

# ТЕМАТИКА ПЛАНĔ

| № п/п | Урок-сем | Уроксен темисем | Ачасен ĕçĕ |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| 1 | 1, 2 | Шкула | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— вĕренӳ хатĕрĕсем çинчен аса илеççĕ;<br>— кашнин сумкинче мĕн пурри çинчен калаçаççĕ;<br>— япала паллине пĕлтерекен сăмахсем çумне ***-рах (-рех)*** аффикс хушсан пĕлтерĕшĕ мĕнле улшăннине сăнаççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— хăйсен класĕ çинчен каласа параççĕ; |
| 2 | 3, 4 | Класра | — сăвăпа ĕçлеççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ, вĕсемпе усă курса паянхи çанталăка сăнлаççĕ **(уçă, сывăх, хĕвеллĕ, тӳлек, çиллĕ, çумăрлă)**;<br>— схемăсем патне **ăçта?** ыйтури кирлĕ сăмахсене суйлаççĕ;<br>— юлташĕ ыйтнине пурнăçлаççĕ;<br>— **ăçта?** сăмахлă ыйтуллă предложенисене хуравлаççĕ;<br>— **кам? мĕн?** ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсем тупаççĕ;<br>— хăйсен класĕ çинчен калаççĕ, çыраççĕ;<br>— ӳкерчĕке сăнлаççĕ; |
| 3 | 5, 6 | Çуллахи каникулта | — сăвăпа ĕçлеççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсенче пусăм лартаççĕ, астуса юлаççĕ **(таврара, тăрă, пĕве, çыран хĕрринче)**;<br>— çуллахи тата кĕрхи ĕçсем çинчен калакан сăмахсене суйласа илеççĕ;<br>— текста вĕçлеççĕ;<br>— сăвăпа тата ӳкерчĕкпе усă курса çулла çинчен калав тăваççĕ;<br>— тупмалли юмахăн тупсăмне тупаççĕ;<br>— пулăсем çинчен ***-рах(-рех)*** аффикслă паллă ячĕсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ;<br>— кашни ӳкерчĕке сăнлакан предложенисене суйласа илсе текст туса çыраççĕ; |
| 4 | 7, 8 | Çуллахи каникулта | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ **(тĕрлĕ, вăрăм, кĕске, кĕрен, пытанмалла, тытмалла)**;<br>— ***-лă(-лĕ)*** аффикслă паллă ячĕсен пĕлтерĕшне, вĕсене çырас вăрттăнлăхсене уçса параççĕ;<br>— тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупаççĕ, панă тĕслĕхсемпе усă курса вĕсене хăйсем хатĕрлеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — шут сăввине пулă ячĕсене килти чĕр чун, вĕсен кайăк ячĕсемпе улăштарса вулаççĕ, унпа мĕнле вăйă вылянă чух усă курнине калаççĕ;<br>— панă сăмахсенче пусăм лартаççĕ, вĕсенчен хăшĕсемпе çуллахи çанталăка сăнлама, ачасем чечексем çинчен каласа панă чух усă курма пулнине палăртаççĕ, сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ;<br>— ўкерчĕк тăрăх панă планпа усă курса калав тăваççĕ; |
| 5 | 9, 10 | Кĕркунне çитрĕ | — кĕнекери сăвăпа ĕçлеççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе **(тунсăхлă, киленет, итлет, кĕвĕ, йыхăрать, виçмине, хуравлать, ыйту)** паллашаççĕ;<br>— сăмахсене пусăм лартса вулаççĕ, вĕсене схемăсемпе шайлаштараççĕ, хăш ушкăнĕнчи сăмахсемпе çулла, хăш ушкăнĕнчисемпе кĕркунне çинчен каласа пама пулнине калаççĕ;<br>— пуплев пайĕсен ячĕсемпе (япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол) паллашаççĕ, вĕсен ыйтăвĕсене аса илеççĕ;<br>— панă ыйтусем çине хуравласа предложенисем тăваççĕ, кашни сăмахĕ мĕнле пуплев пайне кĕнине калаççĕ, çавăн йышши ĕçсем хăйсем хатĕрлеççĕ, вĕсене мĕнле пурнăçламаллине юлташĕсене ăнлантараççĕ;<br>— ўкерчĕксем тăрăх калавсем тăваççĕ;<br>— текста вулаççĕ, глаголсене тупса палăртаççĕ, унпа усă курса паянхи уроксем, унта мĕн туни çинчен каласа параççĕ;<br>— пулас вăхăтри ĕçсем çинчен мĕнле каламаллине тишкереççĕ, каласа пама хатĕрленеççĕ; |
| 6 | 11 | Пирĕн çемье | — сăвăпа ĕçлесе ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(чĕнет, янратать, такмак, йĕрет, макăрать, мĕншĕн, мĕншĕн тесен)** астуса юлаççĕ;<br>— сăмахсене пусăм лартса вулаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текстпа усă курса хăйсем çинчен каласа параççĕ;<br>— сăнарсем каланине вĕсен сăн ўкерчĕкĕсемпе шайлаштараççĕ;<br>— диалога хушса пĕр-пĕринпе калаçаççĕ;<br>— сăвва вуласа ăнлантарса параççĕ; |
| 7 | 12, 13 | Пирĕн çемье | — сăвва итлесе ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(хăналать, илсе килчĕ, кил-йыш, пыл, пасар, пурте)** астуса юлаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — ӳкерчĕксем вырăнне сăмахсем лартса çырса илеççĕ;<br>— ӳкерчĕксене текстсемпе шайлаштараççĕ, тексчĕсемпе усă курса хăйсен çемйинчи çынсем çинчен каласа параççĕ;<br>— диалога хушса пĕр-пĕринпе калаçаççĕ;<br>— текста вуласа тĕрлĕ вăхăтри глаголсене палăртаççĕ, унпа усă курса хăйсен çемйи канмалли кунсене мĕнле ирттерни çинчен каласа параççĕ;<br>— сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— **-са(-се)** аффикс хушăнса пулнă хутлă глаголсемпе паллашаççĕ, вĕсене мĕнле пулнине ăнланса усă курма вĕренеççĕ;<br>— **-са(-се)** аффикслă деепричастиллĕ предложенисене вырăсла куçараççĕ;<br>— ыйтусене ӳкерчĕкпе усă курса хуравлаççĕ; |
| 8 | 14, 15 | Пирĕн çемье | — сăвăпа ĕçлесе ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(хатĕрленчĕ, тирпейленчĕ, ĕлкĕрмерĕ, васкаса, юлса, кансĕрлерĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— предложение вĕçлесе çыраççĕ;<br>— **эпĕ** сăмаха тивĕçтерекен глаголсене суйласа илеççĕ;<br>— предложенисене танлаштараççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, схемисене ӳкереççĕ;<br>— уроксенче, ирхине хăйсем тата юнашар ларакан ача мĕн туни çинчен каласа параççĕ;<br>— **ăçта? (куда?)** ыйтури сăмахсем мĕнле пулнине ăнлантарса схемисене тăваççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— диалога хушса вулаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса хăйсен çемйи çинчен каласа параççĕ; |
| 9 | 16 | Тимлĕ пул | — сăвăпа ĕçлеççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— сăмах майлашăвĕсен вырăсла куçарăвĕсене тупаççĕ;<br>— **урлă, патне** сăмахсен пĕлтерĕшĕсене астуса юлаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— панă сăмахсемпе предложенисем йĕркелеççĕ;<br>— **ăçта? (где?)** ыйтури сăмахсен пĕлтерĕшне тата вĕсем мĕнле пулнине ăнлантараççĕ;<br>— диалога кирлĕ сăмахсене хушса вулаççĕ;<br>— текст содержанийĕ тăрăх диалог тăваççĕ; |
| 10 | 17, 18 | Асамлă пӳлĕм | — сăвва вĕрентекен вуланине итлесе ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсенче **(чĕнмест, юсама пулăшать, пачах, асамлă, çĕтĕлет)** пусăм лартаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — текстра **ăçта (где?), ăçта (куда?)** ыйтусенчи сăмахсене тупаççĕ, содержанийĕ тăрăх ыйтусене хуравлаççĕ, палăртнă глаголлă сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшне тата мĕнле пулнине ăнланаççĕ, çĕнĕ тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— вырăсла панă предложенисене чăвашла куçараççĕ;<br>— пушă вăхăтра мĕн тума юратни çинчен калав тăваççĕ; |
| 11 | 19, 20 | Кун йĕрки | — сăвва вуласа **сиксе тăратăп, васкаса çиетĕп, савăнса каятăп** сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантараççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— сăмахсене мĕн çинчен калама пулнине кура ушкăнлаççĕ, вĕсенчен хăшĕн çумне **тăрăшса** е **юратса** сăмахсене хушма пулнине тата пĕлтерĕшĕсем мĕнле улшăннине ăнлантараççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— диалога хушса вулаççĕ;<br>— сăмахсене вырăсла куçараççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложенисем, вĕсенчен калав тăваççĕ;<br>— панă текст пуçламăшĕпе усă курса хăйсен юлташĕсем çинчен каласа параççĕ; |
| 12 | 21 | Кун йĕрки | — сăвва вуласа **выляма чĕнетĕп** сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ;<br>— предложенисене танлаштараççĕ, **вĕрет** сăмахăн тĕрлĕ пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ;<br>— кирлĕ глаголсене суйласа илеççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— текста кирлĕ сăмахсене лартса вулаççĕ, унпа усă курса хăйсем ирхине мĕн-мĕн туни çинчен каласа параççĕ;<br>— ӳкерчĕксемпе усă курса кушаксем паян тата ĕнер мĕн туни çинчен вĕсен хуçи ятĕнчен калаççĕ; |
| 13 | 22, 23 | Кун йĕрки | — тупмалли юмахсене вуласа тупсăмĕсене пĕлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(час-часах, каялла, унта, унтан, сарлака, тупмалли юмах, тупсăмĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— схемăсене тивĕçтерекен предложенисем тупаççĕ;<br>— панă тĕслĕхсене тишкерсе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;<br>— кирлĕ сăмахсене лартса предложенисене вĕçлеççĕ, вĕсенче **эпĕ** сăмаха **эсĕ, вăл** сăмахсемпе ылмаштарса вулаççĕ, уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — ачасен ĕçĕсенчен тĕрĕссине суйласа мĕншĕн пĕри йăнăш тунине ăнлантараççĕ;<br>— калава вуласа ăна кам каласа панине палăртаççĕ, глаголлă сăмах майлашăвĕсене тупса вырăсла куçараççĕ, текста хăйсен ячĕсенчен каласа параççĕ; |
| 14 | 24 | Ылтăн кĕркунне | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе **(пурçăн пек, мухтанать, тирек, авăнса лараççĕ, капăр, улмуççи, астив, аствисемчĕ)** паллашаççĕ;<br>— ыйтусене хуравласа паянхи çанталăка сăнлаççĕ;<br>— текста глаголсенче кирлĕ аффикссене лартса вулаççĕ, мĕншĕн çав аффикссене лартнине ăнлантараççĕ;<br>— йывăç ячĕсене аса илеççĕ, вĕсене ушкăнлаççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— сăмахсене вырăсла куçараççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— урока панă материалпа усă курса кĕркуннехи вăрманта уçăлса çӳрени çинчен диалог йĕркелеççĕ; |
| 15 | 25, 26 | Кĕрхи вăрманта | — сăвва вулаççĕ, кăмпа ячĕсене астуса юлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(киленет, купа, шăплăх, сăнать, тунката, пĕркенчĕк)** астуса юлаççĕ;<br>— текста ӳкерчĕке пăхса малалла тăсаççĕ;<br>— **купаланса ларать** сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ;<br>— панă сăмахсемпе предложенисем тупса вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантараççĕ;<br>— текстра вырăсла панă предложенисен чăвашла тӳркилĕвĕсене тупса вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ, кĕрхи вăрмана сăнлакан пайăн содержанине калаççĕ, глаголсене çырса илеççĕ, вĕсен вăхăтне, сăпатне кăтартаççĕ, глаголсене икĕ ушкăна уйăраççĕ, мĕнле ушкăнланине схемăсем туса ăнлантараççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— диалога вуласа ачасем мĕн çинчен калаçнине калаççĕ, глаголсене çырса илеççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, ун пек формăри глаголсемпе хăçан усă курнине калаççĕ;<br>— предложенисене **эпĕ** сăмаха **эсĕ** сăмахпа улăштарса вулаççĕ; |
| 16 | 27 | Хура кĕркунне | — сăвва вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ, кĕрхи уйăхсен ячĕсене аса илеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе **(кăнтăр, хĕл каçма, çаралать, чарăнать, пĕрĕхет, сĕм, хыпар, тем çинчен)** паллашаççĕ, сăвă содержанине тĕплĕнрех ăнланаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — вĕçен кайăксен ячĕсене ушкăнласа çыраççĕ;<br>— сăмахсене вырăсларан чăвашла куçараççĕ;<br>— октябрь уйăхĕнчи çанталăк çинчен кĕнекери материалсемпе усă курса каласа параççĕ;<br>— сăвва вуласа ят параççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, ӳкерчĕке сăнлакан йĕркесене тупса вулаççĕ, ун тăрăх калав тăваççĕ;<br>— текста вырăсла куçараççĕ, **эпир** сăмаха **эсир** сăмахпа ылмаштарса вулаççĕ, глаголсем мĕнле улшăннине калаççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççĕ; |
| 17 | 28, 29 | Кĕр парни | — сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(шултра, сĕтеклĕ, усăллă, сиплĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— сăвăпа усă курса тĕрлĕ пахча çимĕçсем çинчен каласа параççĕ;<br>— пахча çимĕçсем çинчен тупмалли юмахсем хатĕрлесе тупсăмĕсене пĕлеççĕ;<br>— текста вуласа вырăсла куçараççĕ, схемăсене тивĕçтерекен глаголсене çырса илеççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— текстпа усă курса ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— предложенисене глаголсенче кирлĕ аффикссем лартса çырса илеççĕ, мĕнле аффикс суйласа илнине ăнлантараççĕ;<br>— панă глаголсене иртнĕ вăхăтра лартса **вĕсем** сăмахпа предложенисем туса çыраççĕ;<br>— текста **эпĕ** сăмаха **эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем** сăмахсемпе ылмаштарса вулаççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççĕ; |
| 18 | 30, 31 | Хура кĕркунне. Пĕтĕмлетӳ, тĕрĕслев урокĕ | — сăвва вуласа унта мĕнле уйăх çинчен çырнине калаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе **(хускалчĕç, вырăнтан, канать, шăнать, тытăнать, çул тытрĕç)** паллашаççĕ, сăвă содержанине уçса параççĕ;<br>— чăвашла сăмах майлашăвĕсен вырăсла куçарăвне палăртаççĕ;<br>— текстра ӳкерчĕке сăнлакан вырăна тупса вулаççĕ, унтан глаголсене çырса илеççĕ, вырăсла куçараççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, вĕсем мĕне кăтартнине калаççĕ, текст тăрăх панă ыйтусене хуравлаççĕ, хăйсем ыйтусем хатĕрлесе юлташĕсенчен ыйтаççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк мĕнле ĕçе тата ăна мĕнле пурнăçланине ăнлантараççĕ, кашни юпана хăйсем сăмахсем хушаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — пăнчăсем вырăнне çуклă формăри глаголсем лартса предложенисене вулаççĕ;<br>— глаголăн иртнĕ вăхăт аффиксĕсене лартса сăвва çырса илеççĕ;<br>— кирлĕ сăмахсене суйласа илсе малтан наян, унтан ĕçчен ача çинчен каласа параççĕ; |
| 19 | 32 | Пирĕн ĕмĕтсем | — сăвă мĕн çинчен пулнине калаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(сывлăш, пĕр вĕçĕм, пиллет, тавлашать, тепĕр çул, пурнăçлать, çĕкленет, хăю, шăпланать)** астуса юлаççĕ;<br>— сăвăри глаголсене местоименипе пĕрле çырса илеççĕ, вĕсене икĕ ушкăна уйăраççĕ, мĕнле ушкăнланине ăнлантараççĕ, глаголсенчи аффикссене палăртаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;<br>— Анюкпа Ванюкăн схемисене ăнлантараççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— панă сăмахсемпе тата схемăсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ;<br>— калава вулаççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ, ыйтусен хуравĕсене текстра тупаççĕ;<br>— ыйтусене ӳкерчĕксемпе усă курса хуравлаççĕ;<br>— глаголсене пулас вăхăтри пĕрремĕш сăпатра çыраççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççĕ; |
| 20 | 33, 34 | Пушă вăхăтра | — сăвва вуласа тухса вăл мĕн çинчен пулнине калаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(чун, кулă, сĕнет, пӳремеч, хӳтĕлекен, саламлать, кĕреке, сĕнет, тапăнакан)** астуса юлаççĕ;<br>— чăвашла тата вырăсла сăмах майлашăвĕсене шайлаштараççĕ;<br>— текста вуласа кирлĕ вырăна тупаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— диалога вулаççĕ, малалла тăсаççĕ, хăнана килсен мĕн çинчен те пулсан калаçнине кăтартакан диалогпа йĕркелеççĕ;<br>— текстра ӳкерчĕке уçса паракан вырăна тупса вулаççĕ, **мĕн тăвăпăр?** ыйтури глаголсене çырса илеççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, **эпир** сăмаха **эпĕ** сăмахпа улăштарса вулаççĕ, текстпа тата ӳкерчĕкпе усă курса калав тăваççĕ;<br>— сиктерсе хăварнă сас паллисене лартса сăмахсене çыраççĕ, вĕсемпе тата пулас вăхăтри глаголсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ;<br>— вырăсла предложенисене чăвашла куçараççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| 21 | 35 | Пушă вăхăтра | — сăвăпа ĕçлеççĕ, ăна пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— чăвашла тата вырăсла сăмахсене шайлаштараççĕ;<br>— диалога вулаççĕ, пулас вăхăтри сăмахсене икĕ ушкăна уйăрса çырса илеççĕ, мĕнле ушкăнланине ăнлантараççĕ;<br>— схемăсене ăнлантараççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса диалог тăваççĕ; |
| 22 | 36 | Пушă вăхăтра | — шут сăввине пăхмасăр вĕренеççĕ, унтан глаголсене çырса илеççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, вырăсла куçараççĕ, вĕсемпе хăçан усă курнине калаççĕ;<br>— ӳкерчĕксемпе усă курса сăмахсене вырăсла куçараççĕ;<br>— «Ĕç кружокĕнче» калава вулаççĕ, **мĕн тăвăр?** ыйтури глаголсене палăртаççĕ;<br>— икĕ текста вулаççĕ, глаголсен формисем пирки калаçаççĕ;<br>— ребус тупсăмне пĕлеççĕ, сăмахĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— ваттисен сăмахне вулаççĕ, унăн вырăсла вариантне суйласа илеççĕ; |
| 23 | 37, 38 | Пушă вăхăтра | — сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ, **эпĕ** сăмаха **эсĕ** сăмахпа ылмаштарса вулаççĕ тата мĕн улшăннине калаççĕ;<br>— икĕ текста танлаштараççĕ, **вăл, вĕсем** сăмахсене тивĕçтерекен глаголсене çырса илеççĕ, вĕсене танлаштараççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— панă схемăсене ăнлантараççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— «Пĕчĕк пулăшакан» текста вулаççĕ, ĕç вăхăтне палăртаççĕ, содержанине калаççĕ, ĕçĕсене хăй тунă пек улăштарса вулаççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх юлташĕсене ыйтусем параççĕ;<br>— ӳкерчĕксен ярăмĕ тăрăх текст тăваççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççĕ, унăн вырăсла вариантне палăртаççĕ; |
| 24 | 39 | Ватă çынсене хисепле | — сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ, хушнă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(карчăк, пăрлак, вăрататть, ыйхă, тăма пулăшнă, часрах, пултарулла, сăмахлать)** астуса юлаççĕ;<br>— палăртнă сăмахсене синонимсемпе улăштарса предложенисене вулаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — текста вулаҫҫӗ, содержанине вырӑсла калаҫҫӗ, ӳкерчӗке сӑнлакан вырӑна тупса вулаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ, ыйтусем тӑрӑх содержанине калаҫҫӗ, ваттисен сӑмахӗсем хушшинче хӑшӗ текстӑн тӗп шухӑшне уҫса панине палӑртаҫҫӗ;<br>— диалога вулаҫҫӗ, ватӑ ҫын мӗн суннине калаҫҫӗ; |
| 25 | 40, 41 | Шанчӑклӑ юлташ | — сӑвва вуласа мӗн ҫинчен ҫырнине пӗлеҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене **(тӑрмашать, лӑскать, хускалать, тапранать, туртать, парӑнать, вырӑнтан, вӑй, кӑларма, пулӑшма, шанчӑклӑ, ӑнлантарать, шутлайман, пулӑшу)** астуса юлаҫҫӗ;<br>— хисеп ячӗсене танлаштарса пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ;<br>— текста вулаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахӗсене астуса юлаҫҫӗ, пӑхмасӑр ҫыраҫҫӗ;<br>— ыйтусене хуравлаҫҫӗ, вӗсемпе усӑ курса диалог йӗркелеҫҫӗ;<br>— кӗнекери материалпа усӑ курса хӑйсен юлташӗсем ҫинчен ҫыраҫҫӗ; |
| 26 | 42, 43 | Шанчӑклӑ юлташ | — сӑвва вулаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗк тӑрӑх ыйтусене хуравласа калав тӑваҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене **(ҫил ачи, темшӗн, шӑхӑрать, йыхӑрать, иккен)** астуса юлаҫҫӗ;<br>— сӑмахсене танлаштараҫҫӗ, вырӑсла куҫараҫҫӗ, вӗсемпе предложенисем тӑваҫҫӗ;<br>— панӑ тӗслӗхпе усӑ курса диалог тӑваҫҫӗ, диалогран глаголсене ҫырса илеҫҫӗ, вӗсене мӗнле уйӑрнине ӑнлантараҫҫӗ;<br>— глаголсене уйӑрса илмелли майсемпе паллашаҫҫӗ, вӗсемпе усӑ курса диалогри глаголсене хальхи вӑхӑтри формисемпе улӑштараҫҫӗ;<br>— глаголсене улӑштармалли алгоритмпа паллашаҫҫӗ, ӑна тӗрӗслесе пӑхаҫҫӗ;<br>— текста вулаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— кирлӗ сас паллисене лартса предложенисене ҫырса илеҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахне астуса юлаҫҫӗ, пӑхмасӑр ҫыраҫҫӗ;<br>— тупмалли юмахӑн тупсӑмне пӗлеҫҫӗ; |
| 27 | 44, 45 | Хӗл ҫитрӗ | — сӑвва вуласа ыйтӑва хуравлаҫҫӗ, япала ячӗсене, вӗсен ыйтӑвӗсене палӑртса ҫырса илеҫҫӗ, сӑмах тӗпне палӑртаҫҫӗ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — çĕнĕ сăмахсене **(йĕр хывать, кăпăшка, çывăхра, сиккелет, аякран, пĕсехе, пӳрт-çурт, кĕтеççĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— кантăкран пăхсан мĕн курни çинчен каласа параççĕ;<br>— предложенисене чăвашла куçараççĕ;<br>— вĕçен кайăк ячĕсене чăвашла куçараççĕ, хăш кайăкĕ ытлашши пулнине калаççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текста вуласа ят параççĕ;<br>— таблицăна сăмахсем хушса çыраççĕ, вĕсемпе усă курса кайăксене мĕнле пулăшма пулни çинчен калаççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 28 | 46 | Хĕлле | — сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ, япала ячĕсене тупаççĕ, вĕсен ыйтăвĕсене калаççĕ, сăмах тĕпĕпе аффиксне палăртаççĕ, хăйсен ĕçĕсене Аннапа Ванюк пурнăçланипе танлаштараççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(кăмрăк, турат, улăм, чăмăркка)** астуса юлаççĕ;<br>— схемăсене тивĕçтерекен сăмахсем тупаççĕ;<br>— ӳкерчĕкпе усă курса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— ыйтусене хуравланă май юр кĕлеткине мĕнрен тума пулнине каласа параççĕ;<br>— ыйтăвĕсене кура глаголсене вĕçлеççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, предложенисем тупаççĕ;<br>— сăмахсенче сиктерсе хăварнă аффикссене лартса, предложенисен йĕркине кирлĕ пек улăштарса юртан мулкач тума вĕрентекен йĕркене çырса параççĕ;<br>— предложенисене вырăсларан чăвашла куçараççĕ;<br>— тупмалли юмахсен тупсăмне калаççĕ; |
| 29 | 47 | Хĕлле | — сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(хуçаланать, тăм илни, варри, кĕпер хывать, çил-тăман, сывлăх, сыхлан, янратать, чĕпĕтет)** астуса юлаççĕ;<br>— текста вулаççĕ, содержанине калаççĕ, раштав уйăхĕнчи çанталăка сăнлаççĕ;<br>— панă ыйтусемпе усă курса ӳкерчĕксем тăрăх калав тăваççĕ;<br>— глаголсене ĕç вăхăтне кура икĕ ушкăна уйăраççĕ;<br>— «Елкăна кĕтни» калава глаголсене кирлĕ формăна лартса çыраççĕ;<br>— ӳкерчĕксем тăрăх калав тăваççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — тупмалли юмахсен тупсăмне пĕлеççĕ, астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 30 | 48, 49 | Килсе çитрĕ Хĕл Мучи | — сăвăпа ĕçлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(хĕпĕртет, тем чухлех, кермен, çуран, капăр, çурçĕр, çу каçать, ĕлкĕрет)** астуса юлаççĕ;<br>— текстпа усă курса Хĕл Мучи патне çыру çыраççĕ;<br>— предложенисенчи йăнăшсене тӳрлетеççĕ;<br>— «Савăнăçлă елка» сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— Çĕнĕ çул елкине сăнласа параççĕ;<br>— «Ăçта çу каçать Хĕл Мучи?» калава вуласа ыйтăва хуравлаççĕ, пĕрремĕш абзаца глаголсене пулас вăхăта лартса вулаççĕ;<br>— тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлеççĕ, астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 31, 32 | 50, 51 | Хĕлле | — сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ, пăхмасăр çыраççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(инçе мар, пичетленĕ, илĕртет, шăпăр, улпут)** астуса юлаççĕ;<br>— схемăсене тивĕçтерекен сăмахсем тупаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— текстра **ăçта? (куда?), ăçта (где?), ăçтан? (откуда?)** ыйтусенчи сăмахсене палăртаççĕ, содержанине ӳкерчĕкпе усă курса, глаголсемпе курса иртнĕ вăхăта лартса каласа параççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текст йĕркелеççĕ, ятне параççĕ;<br>— предложенисене вырăсла куçараççĕ;<br>— Иван Яковлевич Яковлев çинчен вуласа пĕлеççĕ;<br>— «Хураçка» калава вырăсла куçараççĕ, ӳкерчĕксене уçса паракан предложенисене вулаççĕ, содержанине каласа параççĕ;<br>— предложенисен пайĕсене тупса пĕрлештереççĕ;<br>— тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлеççĕ, астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 33 | 52 | Ӳссен эсĕ кам пулан? | — сăвăпа усă курса ӳкерчĕксем патне йĕркесем хатĕрлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(ӳссен, кам пулан, ĕмĕтленни, усал)** астуса юлаççĕ;<br>— предложенисене кирлĕ сăмахсем лартса вĕçлеççĕ;<br>— текста вуласа ыйтăва хуравлаççĕ, сăмахсене вырăсларан чăвашла куçараççĕ;<br>— Мишăн ĕмĕтне уçса параççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — ваттисен сăмахĕсене астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 34 | 53, 54 | Вĕрен-тӳçĕ | — сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(тĕлĕк, кăшт, улталать, çул çӳрет, тинĕс, суять)** астуса юлаççĕ;<br>— профессие пĕлтерекен сăмахсене суйласа илсе çыраççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— схемăна ăнлантараççĕ, профессие пĕлтерекен сăмахсем тăваççĕ, вырăсла куçараççĕ;<br>— текст содержанийĕ тăрăх ыйтусем хатĕрлеççĕ;<br>— панă тĕслĕхсемпе усă курса глаголсен çĕнĕ формисене тăваççĕ, вĕсене тата предложенисене вырăсла куçараççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса диалог йĕркелеççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 35 | 55 | Ӳссен эсĕ кам пулан? | — шут сăввине пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— ***-ла(-ле), -лла(-лле)*** аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем тăваççĕ, вĕсемпе предложенисем тупаççĕ, пĕтĕмлетеççĕ;<br>— текста вуласа ят параççĕ, унтан ăнланман сăмахсене çырса илсе словарьпе куçараççĕ, текст содержанийĕ тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ; калава хăйсен ятĕнчен вулаççĕ;<br>— панă ыйтусене хуравлаççĕ, ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— сиктерсе хăварнă глаголсене лартса текста вулаççĕ, унпа усă курса хăйсен вĕрентекенĕ çинчен каласа параççĕ;<br>— хăйсен вĕрентекенĕсем çинчен диалог йĕркелеççĕ;<br>— предложенисене вуласа ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 36 | 56 | Тухтăр | — ӳкерчĕкпе усă курса сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(наян (кахал), чĕрне, хисеплет, çирĕплетет)** астуса юлаççĕ;<br>— панă сăмахсемпе мĕнле професси çинчен каласа панă чух усă курма пулнине калаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, палăртнă предложение вырăсла куçараççĕ, **сывлăхсăр** сăмах мĕнле ыйтура тăнине калаççĕ;<br>— панă схемăсене тивĕçтерекен сăмахсем тупаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;<br>— предложенисене чăвашла куçараççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — хайсем тухтăр патĕнче пулни çинчен каласа параççĕ;<br>— Сократ сăмахĕсене астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 37 | 57 | Тĕрлĕ профессисем | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(уй-хир, çапаççĕ, ял ĕçченĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— юпасенче панă сăмахсемпе мĕн çинчен каланă чух усă курма пулнине калаççĕ, вĕсенчен пĕрне сăнласа параççĕ;<br>— «Шурă çăкăр — кулач» калава вуласа пĕрпĕринчен ыйтма ыйтусем хатĕрлеççĕ;<br>— çăкăр сĕтел çинче пултăр тесен мĕнле професси çыннисен ĕçлемеллине калаççĕ;<br>— ӳкерчĕксемпе усă курса çăкăр сĕтел çине мĕнле майпа килнине каласа параççĕ;<br>— Анюкпа Ванюкăн калавĕпе паллашаççĕ, ăнланман сăмахсене словарьте пăхаççĕ, калав содержанийĕ тăрăх ыйтусем хатĕрлеççĕ;<br>— сăмахсене танлаштарса пĕр пек пайне тупаççĕ;<br>— калава вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— пĕр-пĕр професси çинчен каласа параççĕ; |
| 38 | 58, 59 | Çемье | — «Асанне е кукамай» сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(вăрçать, йăнăшать, мухтанать, йăл кулать, тĕрĕсрех, картиш, иксĕр)** астуса юлаççĕ;<br>— ребуссен тупсăмĕсене пĕлеççĕ;<br>— сăмахсене сăмах майлашăвĕсемпе ылмаштараççĕ;<br>— схемăсене ăнлантараççĕ, хăйсен ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложенисем тăваççĕ;<br>— пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса вулаççĕ;<br>— ӳкерчĕксем тăрăх кам мĕн тунине каласа параççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, **мĕн тумасть?** ыйтура тăракан сăмахлă предложенисене çырса илеççĕ;<br>— ашшĕ-амăшне пулăшни çинчен диалог тăваççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 39 | 60 | Çемье | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе усă курса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— сăвăра иртнĕ вăхăтри глаголлă предложенисене тупса вулаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — ӳкерчĕксемпе усă курса сăвă содержанине калаççĕ;<br>— диалога вуласа содержанине вырăсла калаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса пĕр-пĕрне ыйтусем парса хуравлаççĕ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 40 | 61, 62 | Çĕршыв хӳтĕлевçисем | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(мухтать, чăн-чăн, хăюллă, çапăçу, тăнăç, çар службинче тăрать, Пĕрремĕш тĕнче вăрçи, Тăван çĕршывăн аслă вăрçи, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, Георги хĕресĕ, хӳтĕлет, сыхлать, вата асатте, паллă)** астуса юлаççĕ;<br>— текстра çĕнĕ сăмахлă предложенисене тупаççĕ, вырăсла куçараççĕ;<br>— вырăсла панă предложенисен куçарăвĕсене текстра тупса çырса илеççĕ;<br>— текстпа усă курса хăйсем шкулта çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне мĕнле ирттерни çинчен каласа параççĕ;<br>— «Кивĕ альбом» калава вуласа ăна мĕншĕн ун пек ят панине калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— сăвă йĕркисене астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 41 | 63 | Ветеран патĕнче | — сăвва вуласа Петя çинчен каласа параççĕ;<br>— ӳкерчĕкпе тата калавпа усă курса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текстри глаголсене тишкереççĕ, схемисене тăваççĕ;<br>— иртнĕ вăхăтри глаголсемпе предложенисем тăваççĕ, схемăсемпе танлаштарса хăйсен ĕçĕсене хаклаççĕ;<br>— ваттисен сăмахне словарьпе усă курса вырăсла куçараççĕ, астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 42 | 64, 65 | Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисем | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, тупса вулаççĕ, усă курнă илемлĕх мелĕсене палăртаççĕ;<br>— текста вулаççĕ, ăнланман сăмахсене словарьпе куçараççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— хăйсен тăванĕсем, çĕршыв хӳтĕлевçисем, çинчен калав хатĕрлеççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçараççĕ, астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 43 | 66 | Тăван çĕршыв | — сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ, ăна пăхмасăр калама вĕренеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — çĕнĕ сăмахсене **(Инçет Хĕвелтухăç, çар çынни, çĕр чăмăрĕ, çĕр кăмрăкĕ, пуянлăх, тăвăл, хурçă)** астуса юлаççĕ;<br>— диалога рольпе вулама вĕренеççĕ, палăртнă сăмахсене улăштарса хăйсем диалог тăваççĕ;<br>— текстăн содержанине хатĕр ыйтуллă планпа каласа пама вĕренеççĕ;<br>— ваттисен сăмахне вырăсла куçараççĕ, астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 44 | 67, 68 | Ытарайми анне | — сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— сăмахсен мăшăрĕсене вырăсла куçараççĕ, **чи** тататăкăн пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ, унпа юнашар тăракан паллă ячĕ мĕнле улшăннине схемăсем тăрăх каласа кăтартаççĕ, мĕнле улшăннине кура сăмахсене ушкăнласа çыраççĕ;<br>— диалога малалла тăсаççĕ;<br>— текстпа усă курса хăйсен амăшĕсем çинчен каласа параççĕ;<br>— чăвашла тата вырăсла сăмахсене шайлаштараççĕ, ***-çăм(-çĕм)*** аффикс пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ, ăна хушса сăмахсене улăштараççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— ***-рах(-рех)*** аффиксăн пĕлтерĕшне аса илсе ваттисен сăмахне вырăсла куçараççĕ, астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 45 | 69 | Пирĕн çемье | — сăвва вуласа ыйтăва хуравлаççĕ, унпа тата ӳкерчĕкпе усă курса хĕр ача çинчен каласа параççĕ;<br>— сăмахсене малтан тата хыçалтан пуçласа вуласа вĕсем пĕр пек пулнине пĕлеççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ, ытти тĕслĕхсене тупаççĕ;<br>— ӳкерчĕке пăхса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текста вуласа содержанине пĕр-пĕр сăнар ячĕпе, унтан хăйсен ячĕпе калаççĕ;<br>— пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса çыраççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 46 | 70, 71 | Чи çывăх çын | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— текста вуласа ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— **чи** татăкпа юнашар тăракан сăмахăн пĕлтерĕшĕ мĕнле улшăннине сăнаççĕ;<br>— сăмахсене мĕншĕн ун пек ушкăнланине ăнлантараççĕ, пĕр пек тата хирĕçле пĕлтерĕшлĕ мăшăрĕсене тупаççĕ, **чи** татăкпа çыхăнтарса çыраççĕ, предложенисем тăваççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — панӑ тӗслӗхпе усӑ курса диалог йӗркелеҫҫӗ;<br>— ашшӗ-амӑшне пулӑшни ҫинчен каласа параҫҫӗ;<br>— диалога малалла тӑсаҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахне астуса юлса пӑхмасӑр ҫыраҫҫӗ; |
| 47 | 72 | Анне-не парне | — сӑвва вуласа ыйтӑва хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене **(пин, ҫутнӑ, мӑкӑнь, салтак тӳми, утмӑл турат, лантӑш)** астуса юлаҫҫӗ;<br>— Анюкпа Ванюк сӑмахсене мӗнле ушкӑнланине ӑнлантараҫҫӗ, пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗке пӑхса ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— панӑ ыйтусемпе усӑ курса диалог йӗркелеҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗке пӑхса юлташӗсене ыйтусем параҫҫӗ;<br>— Мартӑн саккӑрмӗшӗпе саламламалли открыткӑн текстне тӑваҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахӗсене вӗрентекен пулӑшнипе вырӑсла куҫараҫҫӗ, астуса юлса пӑхмасӑр ҫыраҫҫӗ; |
| 48 | 73, 74 | Ҫур-кунне ҫитрӗ | — сӑвӑ мӗн ҫинчен пулнине калаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене **(пӗчӗккӗн, сӑрт тӑрри, каллӗ-маллӗ, лапам, пархатар)** астуса юлаҫҫӗ;<br>— сӑмахсене ӑнлантарса ушкӑнсене уйӑраҫҫӗ;<br>— текста вуласа ят параҫҫӗ;<br>— текстран глаголсене ҫырса илеҫҫӗ, ыйтӑвӗсене калаҫҫӗ, «Ҫуркунне» темӑпа 2—3 глагол хушаҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗкпе тата текстпа усӑ курса март уйӑхӗнче ҫут ҫанталӑкра мӗнле улшӑнусем пулнине калаҫҫӗ;<br>— текстра вырӑсла предложенисен чӑвашла тӳр-килӗвӗсене тупаҫҫӗ;<br>— текст содержанийӗ тӑрӑх юлташӗсене ыйтусем параҫҫӗ;<br>— калав тата сӑвӑ материалӗсемпе усӑ курса кураксем ҫинчен каласа параҫҫӗ;<br>— панӑ сӑмахсенчен ҫуркуннепе ҫыхӑннисене суйласа илсе текст тӑваҫҫӗ; |
| 49 | 75 | Шӑн-кӑрч-сем вӗҫсе килчӗҫ | — сӑвва пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене **(шӑхӑрать,васкать, пухать, кӗвӗлет, ывӑнма пӗлмесӗр, тӗк)** астуса юлаҫҫӗ;<br>— предложенисене вырӑсла куҫараҫҫӗ, ҫуркунне вӗҫсе килекен кайӑксем ҫинчен калакан предложение ҫырса илеҫҫӗ;<br>— калав тата сӑвӑ материалӗпе усӑ курса шӑнкӑрчсем ҫинчен каласа параҫҫӗ;<br>— вырӑсла панӑ текста чӑвашла куҫараҫҫӗ, пӗрпӗр ача ячӗпе каласа параҫҫӗ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — «Çуркунне» сăввăн пĕр куплетне астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ, йăнăш тума пултарнă вырăнсене палăртаççĕ; |
| 50 | 76, 77 | Çуркунне. Тискер чĕр чунсем | — сăвва вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(çари çухăрать, ĕçе пуçăнать,васкать, улăштарать, вăранать, вăратать, утар, çĕрле, хывать, хыпар)** астуса юлаççĕ;<br>— пăнчăсем вырăнне сас паллисем лартса сăмахсене çырса илеççĕ;<br>— текстсене кирлĕ сăмахсене лартса вулаççĕ, пĕрне çырса илеççĕ;<br>— панă предложенисенчи шухăшпа килĕшеççĕ е ăна хирĕçлеççĕ;<br>— текста вулаççĕ, ыйтусен хуравĕсене унта тупаççĕ;<br>— чĕр чунсен çурисен ячĕсене аса илеççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— ӳкерчĕксем тăрăх каласа параççĕ;<br>— чĕр чунсем çинчен тупмалли юмахсем хатĕрлеççĕ;<br>— «Упа çури» сăвва астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ, йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртаççĕ; |
| 51 | 78 | Çуркунне. Вăрманта | — сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— сăмахсене ăнлантарса ушкăнсене уйăраççĕ;<br>— панă алгоритмпа чĕр чунсене сăнласа параççĕ;<br>— текста вулаççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ, вырăсла панă предложенисен чăвашла куçарăвĕсене текстра тупаççĕ;<br>— вĕçен кайăксем çинчен çырнине ӳкерчĕксемпе шайлаштараççĕ, пĕр-пĕр кайăка сăнлаççĕ; |
| 52 | 79, 80 | Çуркунне. Килти чĕр чунсем | — сăвва вуласа сăмах мĕнле чĕр чун çинчен пулнине пĕлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(патвар, йăлтах, кутăн чăмать, пайти (усси) сахал, çур аки, кĕçенет)** астуса юлаççĕ;<br>— кайăк-кĕшĕк, килти тата тискер чĕр чунсен, хурт-кăпшанкă ячĕсене çыраççĕ;<br>— панă ӳкерчĕксене тӳр килекен сăвăсене вулаççĕ, чĕр чунсен çурисен ячĕсене аса илеççĕ;<br>— схемăсем вырăнне сăмахсем лартса предложенисене вулаççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх калав çыраççĕ;<br>— панă диалогпа усă курса килти пĕр-пĕр чĕр чун çинчен каласа параççĕ;<br>— ыйту хуравне вуласа пĕлеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — çуркунне килти выльăхсен пурнăçĕнче мĕнле улшăнусем пулнине малтан вырăсла, унтан чăвашла калаççĕ;<br>— чĕр чунсем çинчен çырнă пĕр сăвва астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ, йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртаççĕ; |
| 53 | 81 | Çуркунне садра | — сăвва вуласа йывăç ячĕсене тупаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(тислĕк, кăпкалатаççĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— садри тата пахчари çурхи ĕçсем çинчен каланă чух усă курмалли сăмахсене суйласа илеççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложенисем йĕркелеççĕ;<br>— текста вуласа ӳкерчĕкри ачасем хăшĕсем пулнине кăтартаççĕ;<br>— текста хăйсем ĕнер садра ĕçленĕ пек улăштарса вулаççĕ;<br>— сăввăн пĕрремĕш куплетне пăхмасăр вĕренсе çыраççĕ, йăнăш тума пултарнă вырăнсене палăртаççĕ; |
| 54 | 82, 83 | Çуркунне. Йывăçсем | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(аманать, тăпра, хуçать, пиллет, хăратать)** астуса юлаççĕ;<br>— сăмахсене икĕ ушкăна уйăраççĕ, икшер сăмах хушаççĕ;<br>— калава вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— кантăкран пăхса пĕр-пĕр йывăç çуркунне мĕнле улшăнни çинчен каласа параççĕ;<br>— предложенисене чăвашла куçараççĕ;<br>— предложенисене вĕçлесе çыраççĕ;<br>— сăвва астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ, йăнăш тума пултарнă вырăнсене палăртаççĕ, япала ячĕсене тупса вĕсен ыйтăвĕсене калаççĕ; |
| 55 | 84 | Çуркунне. Чечексем | — сăвва вуласа вăл мĕн çинчен пулнине калаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(çеçпĕл, çеçке сарнă, ялкăшать, кăвар, кĕрен)** астуса юлаççĕ;<br>— «Çуркунне» темăпа схемăсене тивĕçтерекен сăмахсем тупса çыраççĕ, вĕсенчен предложенисем, унтан текст тăваççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса палăртнă темăсенчен пĕринпе диалог йĕркелеççĕ;<br>— калава вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ чечексене сăнласа параççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — сăвва вуласа сăмах мĕнле чечек çинчен пулнине пĕлеççĕ, астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ, йăнăш тума пултарнă вырăнсене палăртаççĕ; |
| 56, 57 | 85, 86, 87 | И.Я. Яковлев — чăваш халăхне çутта кăларакане | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(хак, асран кайми, Чĕмпĕр, çутта кăларакан, халал, пуçна ан каçăрт, вăрлать, ултаать)** астуса юлаççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, хальхи вăхăтри глаголлă предложенисене тупса вырăсла куçараççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ;<br>— халал сăмахĕсене чăвашла вуласа вырăсла каласа параççĕ;<br>— текстран **ан** татăклă сăмах майлашăвĕсене тупса вырăсла куçараççĕ;<br>— текстпа усă курса ырă çынна сăнласа параççĕ;<br>— диалогра ыйтусем лартаççĕ, çавăн майлă диалог тăваççĕ;<br>— ӳкерчĕке пăхса И.Я. Яковлев çинчен каласа параççĕ;<br>— Чăваш чĕлхи кунне мĕнле хатĕрленни çинчен каласа параççĕ; |
| 58 | 88, 89 | Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем | — сăвă йĕркисене вуласа вăл ăçтан пулнине калаççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— вуласа вырăсла куçараççĕ;<br>— Чăваш Республикин символĕсем çинчен калаçаççĕ, вĕсен авторĕсене пĕлеççĕ;<br>— Чăваш Республикин Патшалăх гимне пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— вырăсла панă текстпа усă курса чăвашла текст тăваççĕ; |
| 59 | 90 | К.В. Иванов — чăваш халăх поэчĕ | — «Нарспи» поэмăн пĕр сыпăкне вĕрентӳçĕ вуланине итлеççĕ, кам çырнине пĕлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(çеçен хир, чĕрĕлет, хытă хĕртет, çаралать)** астуса юлаççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, пысăк сас паллипе çырнă сăмахсене тупаççĕ, мĕншĕн ун пек çырнине ăнлантараççĕ;<br>— текстран глаголсене çырса илеççĕ, вĕсен вăхăтне кăтартаççĕ, мĕншĕн вăл формăпа усă курнине калаççĕ;<br>— сăвă йĕркисене вуласа ӳкерчĕксемпе шайлаштараççĕ, кашнин ӳкерчĕкне палăртаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| | | | — сăвăпа усă курса кашни ӳкерчĕке сăнласа параççĕ;<br>— сăввăн пĕр куплетне вĕренсе пăхмасăр çыраççĕ, йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртаççĕ; |
| 60, 61 | 91, 92, 93 | Чăваш театрĕ | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(Хусан, лекет, хуçа, халех, шанатăп)** астуса юлаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса театрта пулни çинчен калаçаççĕ;<br>— пысăк числосене вулама, калама вĕренеççĕ;<br>— текста вуласа чăваш театрĕ çинчен мĕн çĕннине пĕлнине калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текстра пысăк сас паллинчен пуçласа çырнă сăмахсене тупаççĕ, мĕншĕн ун пек çырнин ăнлантараççĕ;<br>— текстра пĕрремĕш чăваш артисчĕсем çинчен калакан абзаца тупаççĕ, йăнăш тума пултаракан вырăнсене тишкереççĕ, вĕрентекен каласа пынă хыççăн çыраççĕ, кайран кĕнекепе хăйсен тата пĕрпĕрин ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ;<br>— «Кам кĕнĕ пахчана?» инсценировкăна вуласа ыйтăва хурав параççĕ, выляса пăхаççĕ;<br>— «Юлхав» сăвва рольсемпе вулаççĕ, ӳкерчĕксене тӳр килекен вырăнсене тупаççĕ, юлашки ӳкерчĕк çинчен çырнине астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |
| 62, 63 | 94, 95, 96 | Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ | — сăвва вуласа вăл мĕн çинчен пулнине калаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене **(асамлă, уçланкă, тыткăн, пултарулăх, тĕлĕнтернĕ)** астуса юлаççĕ;<br>— «Савăнăçлă кун» калава вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, **эпĕ** сăмаха хĕр ача ячĕпе улăштарса вулаççĕ;<br>— Надежда Павлова çинчен çырнине вуласа ун содержанине вырăсла калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, унтан Надежда Павлова çинчен чăвашла каласа параççĕ;<br>— текста вуласа музыка театрĕ çинчен мĕн çĕнни пĕлнине калаççĕ;<br>— панă сăмахсене икĕ ушкăна ăнлантарса уйăраççĕ;<br>— чăвашсен паллă композиторĕсемпе паллашаççĕ, вĕсем çинчен вуласа пĕлеççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложенисем туса çыраççĕ;<br>— урокра мĕн-мĕн пĕлни çинчен пĕр-пĕринпе калаçаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлса пăхмасăр çыраççĕ; |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| 64 | 97, 98 | Музыка инструменчĕсем | — сăвва вуласа мĕн ҫинчен пулнине калаҫҫĕ;<br>— музыка инструменчĕсен ячĕсене астуса юлаҫҫĕ, вĕсемпе предложенисем тăваҫҫĕ;<br>— предложенисене чăвашла куҫараҫҫĕ;<br>— панă ыйтусемпе усă курса диалог йĕркелеҫҫĕ;<br>— «Эсĕ кам пулатăн?» темăпа вĕҫе-вĕҫĕн калаҫаҫҫĕ;<br>— текста рольсемпе вулаҫҫĕ, ыйтусене хуравлаҫҫĕ;<br>— С.М. Максимовпа Ф.П. Павлов композиторсен пултарулăхĕпе паллашаҫҫĕ;<br>— ваттисен сăмахне ăнлантараҫҫĕ, астуса юлаҫҫĕ, пăхмасăр ҫыраҫҫĕ, кĕнекепе тĕрĕслеҫҫĕ; |
| 65, 66 | 99, 100 | Чăваш ҫĕршывĕ | — сăвва вуласа вăл мĕн ҫинчен пулнине калаҫҫĕ;<br>— ыйтусене хуравлаҫҫĕ;<br>— фотографи ҫине пăхса Шупашкар ҫинчен калаҫҫĕ;<br>— текста вуласа вырăсла куҫараҫҫĕ;<br>— текстпа усă курса ыйтусене хуравлаҫҫĕ;<br>— Шупашкарти палăксем ҫинчен калаҫаҫҫĕ;<br>— «Пирĕн хулари палăксем» темăпа проект хатĕрлеҫҫĕ, палăксем ҫинчен материал пухса каласа пама хатĕрленеҫҫĕ, пĕрремĕш класс ачисем валли экскурси ирттереҫҫĕ; |
| 67, 68 | 101, 102 | Вĕреннине аса илни, тĕрĕслени | — вĕренӳ ҫулĕнче вĕреннĕ пĕр-пĕр темăна суйласа илсе хăйсем мĕн пĕлнине каласа пама хатĕрленеҫҫĕ, проект ҫыраҫҫĕ. |

# ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Уроксем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
«Чăваш чĕлхи» предметпа туса хатĕрленĕ ĕç программин тĕслĕхĕ . . . . . . . . . . . . . . 124
Вĕренӳ курсĕн содержанийĕ . . . . . . . . . . 131
Тематика планĕ . . . . . . . . . . . . . . 138

*Учебное издание*

**Игнатьева Валентина Ивановна**
**Чернова Нина Николаевна**
**Николаева Людмила Васильевна**

# Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем

# Методические указания к учебному пособию «Чувашский язык»

## 3 класс

*Пособие для учителя*

На чувашском языке


Художник *Д.В. Литаврин*
Редактор *А.Г. Владимирова*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректор *О.П. Рубцова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 95 6600.
Подписано к печати 19.10.17. Формат 60×84 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 9,3. Уч.-изд. л. 9,3.
Тираж 600 экз. Заказ № К-2092. Изд. № 60.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail:chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.